# Сунтал

№ 8(102)



# „Сунтал“ журнал подписчӗкӗсене

„Сунтал“ редакцине час-часах ку журнала илсе тăма укçа тӳленӗ çынсенчен журнал çитменни çинчен ӳпкелешсе йанă çырусем килсе тăраççӗ. Çакăн пирки журнал редакци хăйӗн подписчӗкӗсене çакна пӗлтерет.

„Канаш“ издательстви пур хаçат-журналсене те (ку шутах „Сунтал“ та кӗрет) типографинче çапăнса тухсанах пичет союзӗ аллине парать. Пичет союзӗ вара вӗсене районсенчи пуштă уйрăмӗсем тăратнă ыйту тăрăх, експедици урлă районсене салатать. Районсенчи пуштă уйрăмӗсем илнӗ хаçат-журналсене хăйсен подписчӗкӗсене валеççе памала.

Çавăнпа та „Сунтал“ журнал çитмесен, вăл мӗн пирки çитменни çинчен чи малтан ăна илме укçа тӳленӗ пуштă уйрăмне кайса тӗрӗслеттермеле. Тӗрӗслемешкӗн журналшăн укçа тӳленӗ квитанцине илсе пымала. Пуштă уйрăмӗ журналшăн тӳленӗ укçана тивӗçлӗ вырăна куçарнине кăтартса пама пултарсан, ун тăрăх çак адрӗспе жалăбă памала: гор. Чебоксары, Чуваш. АССР Союзпечать.

Жалăбă çинче журналшăн мӗн чухлӗ укçа, хăçан тӳленине, ăна ăçти пуштă уйрăмӗ хăçан Шупашкарти Союзпичете куçарнине, куçарнă хутăн №-не, тата тӗрӗс адрӗса кăтартса çырмала. Журналшăн тӳленӗ укçана пуштă уйрăмӗ тивӗçлӗ вырăна куçарман пулсан, йе ăна куçарнине кăтартса параймасть пулсан, вăл укçана çав пуштă уйрăмӗнченех шырамалла. Шупашкарти Союзпичете йаракан жалăбăна чăвашла çырсан та йурать.

Çакăнпа пӗрлех редакци çакăн çинчен те пӗлтерет. 1933 çул хушшинче „Сунтал“ журнал—пӗр йенчен—типографисем шкул кӗнекине кăларас ӗçпе тийеннӗ пирки, тепӗр йенчен тата „Сунтал“ тухса тăрасси пӗр вăхăта чарăннă пирки,—йӗркелӗн тухса тăраймарӗ. Çавăнпа та „Сунтал“ 1933-мӗш çулшăн 10 номӗр анчах тухать.

Май-ийунь уйăхӗсемшӗн тухнă №-ре Мускавра пичетлесе кăларнăччӗ. Ку №-ре çак кунсенчех Мускавран илсе подписчӗксем патне салатмала.

1934-мӗш çулта „Сунтал“ журнал кашни уйăхрах пӗрер № йӗркелӗн тухса тăма тытăнать.

# Журналта вуламали

Стр.


1. Кăтартулă республӗкшӗн, произведенисен пахалăхӗшӗн . . . . 1
2. Ерлик Х.—Çӗр чӗнет (сăвă) . . . 4
3. Кăтра М.—Урăх чӗре (роман сыпăкӗ) . . . . . . . . . . . 5
4. Ванин Ф.—Çӗнтеретпӗр (сăвă) . . 7
5. Краснов—Кӗç.—Çӗнӗ Йункă (поемă вӗçӗ) . . . . . . . . . . . 8
6. Ђамаћ Мих.—Хăраман утаман (сăвă) . . . . . . . . . . . . 9
7. Курак—Укахви (очӗрк) . . . . . 10
8. Н. Шупуçынни—Йăран (поемă сыпăкӗ) . . . . . . . . . . . . 12
9. Ахтупай Вал.—Мухтав йурри (сăвăсем) . . . . . . . . . . . 13
10. Петӗр Хв.—Ђэва—хӗрлӗ салтак (калав) . . . . . . . . . . . 14
11. Агакăв Л.—Сӗрмекупăс (калав) . 18
12. Савир—Тӗтрелӗ апрел (калав) . 23
13. Соловйов—Совет влаçӗшӗн чăваш йалӗсенче кӗрешни . . . . 29
14. Патман—Литкружоксен вӗренӳ ӗçӗсем пирки . . . . . . . . 31
15. Чăваш совет писателӗсен оргкомитечӗ ачапча литературӗ пирки чӗнсе калани . . . . . . . . 33


„Сунтал“ журналăн 1933 çулхи декабӗрпе нойабӗршӗн тухмали 9—10-мӗш пӗрлештернӗ номӗрӗ çитес кунсенчех пичетленсе тухать. Подписчӗксем ăна йанвар уйăхӗн вӗçнеле илме пултараççӗ.

„Сунтал“ редакци.

Тăхăрăмĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Октябĕр 1933 ç

# СУНТАЛ

8 (102)-мĕш №

Чăваш совет писателĕсен Оргкомитечĕн уйăхра пĕрре тухакан илемлĕ литературпа критĕк журналĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: Чувашреспублика, г. Чебоксары. Красная площадь, Наркомпрос. Оргкомитет СЧСП.

## Кăтартулă республĕкшĕн, произведенисен пахалăхĕшĕн.

Чухăн çĕршыв... никамшăн та паллă мар- йăпăхнă, çарамас çĕршыв. Унтан та кунтан ишĕлчĕк тарăн çырмасем таткаласа выртнă ку çĕрĕн хытанка уйĕсене. Никам та вĕсене йусасшăн кĕрешмен. Çырмасем тăрăх хăрăк улăмпа витĕннĕ пĕчĕк те лапчăк çуртсемлĕ час-часах хура пӳртсемлĕ вакă йалсем ларнă пытанса. Ку йалсем—аваллăх пусмăрĕпе хупланнă, пăнтăхнă, патша чинавникĕсемпе улпутсем ĕмсе хăртнă, сĕм тĕттĕм йалсем. Никам та вĕсене çутатасшăн тăрăшман.

Чăн та, çак чухăн йалсенче те кашнинчех—иквиçĕ, виç-тăватă, йе ытларах та тĕлте—хăйне йевĕр „капăрлатнă" пӳртсем те ларнă саралса. Вăл пӳртсенче пурăннă ĕлĕкхи „йал патшисем„—чухăнсене сĕлĕх пек ĕмнĕ кулаксем, куштан-пуйансем. Тĕттĕм йалсем хушшинче, кашни 7—8 йал пуçнех ларнă карăнса пĕрер чиркӳ. Танкăлтаттар нă вĕсем текех йăвăр чукун чăнĕсене, аташтарнă, минретнĕ тĕттĕм халăх тăн-пуçне. Илĕртнĕ чухăн халăха ултавлă суйă пурнăçăн ырлăхсемпе йăпатса.

Чиркӳсемпе йунашарах—усламçăсен пасарĕ. Пасар тавраш ĕнче—хупах, трактир... кивĕ пурнăçăн ирсĕр лачакисем... Çавăн пек пулнă вăл кивĕ пурнăçăн сăнсăпачĕ, çакăн пек пулнă революциченхи Чăваш çĕршывĕн тулашĕ.

Шала кĕрсен, йĕри-тавралах курăнакан чухăнсем хушшине, вĕсен пĕчĕк пӳрчĕсене кĕрсен—татах та хăрушăрах карттин, илемсĕр пăнтăх пурăнăç. Тумхахлă урай... сĕрĕмпе сарăхнă çтенасем, хăрăмпа хуралнă мачча. Кĕтес-çурăксенче вĕркĕшет таракан, унтах вĕшĕлтетет шăршлă хăякăли. Нар саккисем çинче—çĕтĕк тумтир купи. Унтах пыйти те, пăрçи те йăва çавăрать. Етеммисем çинче—кĕçĕ, трахом, чирчĕр... Акă мĕнле пурнăç пулнă чухăн пӳртĕнче. Унта тулли вуша, инкек-синкек, хуйхă. Пуçлăхсем хĕсеççĕ, кулакĕ кăшлать. Çакăн пек вăл пулнă чухăнсен пурнăçĕ,—Совет влаçĕчченхи чăваш пурнăçĕ. Çакăн пек пурăннă кивĕ чăваш йалĕ. Ку пурнăç вăл патша влаçĕн нацилĕ тата економикле хĕсӳ пуçлăхĕсем айĕнче хавшанă, чирленĕ, йĕрипен вилсе пыракан чăваш ĕçхалăхĕн пурнăçĕ пулнă. Халăхĕпе пĕрлех унăн çĕршывĕ те хытса, çимĕççĕрленсех пынă. Кун пек хăрса ситнĕ çĕршыв-кĕтессем ĕлĕкхи Раççей империнче сахалах пулман. Уйрăмăнах Атăл тăрăхĕнчи, Раççейĕн Хĕвелтухăç йенче пурăнакан вак нацисем вĕсем пурте чăваш ĕçхалăхĕ куракан кунçулех тӳссе пурăннă. Çак усал пурнăçа тăвакан мăшкăллă пусмăрлăха никам та мар,—пĕртен-пĕр Октябĕр революцийĕ çех ĕмĕрлĕхех çапса сирчĕ.

16 çул тултарчĕ Октябĕр пулни. 16 çул ситрĕ вутлă Октябĕр Раççей империйĕ çинчи пуслăк сăнчăра çапса салатни. 16 çул çитрĕ чăваш ĕçхалăхĕ СССР-чи ытти ĕççыннисемпе пĕрлех ирĕке тухса ирĕклĕн сывлама пуçлани. Октябĕре организацилекен Ленин партийĕ—большевиксен парти пулăшнипе чăваш ĕçхалăхĕ те, Совет çĕрĕнчи ытти нацисем пекех автономи илсе, хăйĕн пурнăçне хăйех йусаса пыма пуçларĕ. Октябĕр революци 16 çул тултарнипе пĕрлех—13 çул тултарчĕ ку автономийе илни.

Советла автономи вăл—пролетари диктатурилĕ ĕçхалăх автономийĕ. Ку автономи—аслă революционер Ленин вĕрентсе панă наци политĕкне пурнăçлакан, нацисен тĕпне—ĕççыннисене имлесе чĕртекен автономи. Ленинла наци политĕкĕ вăл халăхсен капиталисăмла обчĕствинчи çийелти сийе, ĕçхалăхне сĕлĕх пек ĕмсе тăракан буржуалă сийе сирсе пăрахса, халччен айалта таптанса пурăннă сийсене чĕртсе хăпартакан хăватлă политĕк. Ку политĕке пурнăçа кĕртсе пыни— кирек-мĕнле пĕчĕк нацисене те чăннипех те çутăлăха кăларса вĕсене пурте пĕр тан шутланакан социалисăмла пурнăçа, пысăк културалă пурнăçа илсе тухать. Ленинла наци политĕкĕпе пулса тăнă автономисене рабочи класăн комунисла партийĕ пуçарса çул кăтартса пырать. Вĕсем çак парти пулăшнипе чĕрĕлеççĕ, унпала ӳсеççĕ, унпах вăйланаççĕ. Ку чăнах та çапла иккене епĕр халĕхи вăхăтра хамăр Чăваш республĕкĕ ӳссе вăйланса, културланса пынинчен те аванах куратпăр. Çакнах кăтартаççĕ пире хамăр кӳршĕри Тутар, Мари, Удмурт ĕçхалăхсен автономиле çĕршывĕсем те.

Комуниссен партин Чăваш организацийĕпе унăн Облăçри комитечĕ пуçĕнче тăракан çулпуçĕ Ç. П. Петров йулташ йĕртсе пынипе Чăваш республĕкĕ йулашки çулсенче нумай çитĕнӳсем туса хучĕ. Ĕлĕкхи йăпăхнă, тĕпренех хавшанă, чухăн та чирлĕ çĕршывран пулса тăнă Чăваш республĕкĕ халĕ ĕнтĕ йăлтах урăхла сăн-сăпат йышăнса тăчĕ. Ĕлĕк, революциччен, индустри шăршине те пĕлмен çарамас çĕршыв—пĕрремĕш петилеткăра индустрин малтанхи улăпĕсене çуратса ӳстерчĕ (Куславка, Çĕмĕрле), çакăнпа пĕрлех индустрин малашнехи гиганчĕсене лартма никĕс хывса хăварчĕ (Енергохимкобинат, Сăрстрой, тата ыт. те). Çак петилеткăрах чăваш пролетариачĕн малтанхи кадрĕ те пулса тăрать. Чăваш çĕршывĕн економĕки чĕрĕлсе çирĕпленет, унăн културлăхĕ сарăлать. Октябĕр революциччен чăваш хушшинче хут пĕлекенсен шучĕ кашни 100 çын пуçне пурĕ те 18 çын çех шутланнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсен

шучӗ 90%ран та иртсе кайнӑ. Ӗлӗк 3—4 ҫул пуҫне те аран-аран 30—40 ача шӑнаҫмалӑх пӗрер пӗчӗк шкул, прихут шкулӗ ҫеҫ пулнӑ вырӑнне, час-часах хӗсӗк хваттерсенче пӑчӑхса тӑнӑ шкулсем вырӑнне—халӗ ӗнтӗ 1 сыпӑклӑ пуҫламӗш шкулсем кашни ҫалтапа пӗрех ӳсе-ӳсе лараҫҫӗ. Ӗлӗк, революциччен, халӗхи Чӑваш республӗкне кӗрекен талкӑмра кӗҫӗн шкулсем пурӗ те 600 ҫахӑн ҫеҫ пулнӑ пулсан, вӗсенче пурӗ те 30 пин ачана ҫахӑн ҫеҫ вӗреннӗ пулсан, халӗ ӗнтӗ ку вырӑнта 1049 пӗремӗш сыпӑклӑ шкул, вӗсенче 106.000 ача вӗренет. Вӗсем пурте 7-шер ҫул таран вӗренмеле. Тата халӗ ҫак вырӑнтах 315 КҪШ (вӑтам шкул), вӗсенче пӗр-икӗ ҫӗр пин таран ача вӗренет. Тата халӗхи вӑхӑтра чӑваш хушшинчех 24 тӗрлӗрев техникум, 4 рабфак, 2 аслӑ шкул. Ӗлӗкхи вӑхӑтра чӑваш хушшинче чӑваш ӗҫҫыннисене вӗренме вӑгам шкулсемпе аслӑ шкулсем уҫасси ҫинчен тӗлленме те май пулман. Кусемсӗр пуҫне халӗхи вӑхӑтра ӗнтӗ сахал мар халӑха шкул тулашӗнче вӗрентмели учрежденсем те (вулав пӳртчӗсем, хӗрлӗ кӗтессем, тата ыт. те). Ҫакӑнпа пӗрлех ҫитӗннӗ ҫынсен хут пӗлменлӗхне пӗтернине те пысӑк вырӑна хумала. Халӗ ӗнтӗ шкул ҫулне ҫитнӗ ачасем пӗри те шкул талашӗнче ҫулмала мар. Пурин те 7-шер ҫул вӗренмеле. Хуҫалӑхпа культур строительствин пур ҫупписенче те ӗҫлекен кадӑрсем те халӗ чӑвашсен хӑйсен хушшинчен тухнӑ ӗҫҫыннисемпе тулса пыраҫҫӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех чӑваш ӗҫхалӑхӗн хӑйӗн искуствин те ҫуралса ӳссе ураланчӗ. Халӗ ӗнтӗ чӑвашӑн хӑйӗн театрӗ, хӑйӗн музыкӗ, ИЗО искусстви пур. Ҫак ҫулсенчех чӑваш литератури те ӳссе саралса ҫитрӗ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, ҫутӑлӑх ӗҫӗпе Чӑваш ҫӗршывӗ ӗлӗк ӗмӗтленме те пултарайман пысӑк ҫитӗнӳсене туса хучӗ. Ку ҫитӗнӳсем Чӑваш республӗкӗ культурлӑх фронтӗнче хӑватлӑ ҫӗнтерӳ тунине кӑтартаҫҫӗ. Ҫапла ӗлӗк, Совет влаҫӗнччен, сӗм тӗттӗм пурнӑҫра пӑчӑхса пурӑннӑ чӑваш ӗҫхалӑхӗ—халӗ 100%-пех вӗреннӗ наци пулса—культурлӑ ҫутӑ пурнӑҫ туса хурас тапхӑра ҫитсе кӗчӗ.

Халӑха вӗрентес ҫенчен, культурлӑх ҫенчен пысӑк ӳсӗмсем тунипе пӗрлех—Чӑваш республӗкӗ халӑх сылӑхне упрас тӗлӗшпе те нумай ҫитӗнусем тӳрӗ. Больницасем ҫышланчӗҫ. Вӗсенче ӗҫлекен медицинӑ ӑстаҫӗсем чӑвашран пулса пыраҫҫӗ. Ҫакна пула, ӗлӗк ирсӗр трахомпа, кӗҫӗпе, тӗрлӗрен чир чӗрпе асапланса пурӑннӑ чӑваш ӗҫхалӑхӗ ку чирсене хӑй хушшинчен ӗмӗрлӗхех кӑкласа ывӑнма тӑрӑшать. Ӗлӗк культурсӑр пурнӑҫпа пӳртҫуртри тасамарлӑхра ҫӑралса пурӑннӑ ӗҫхалӑхӗ,—халӗ ӗнтӗ профилатӗкпа санитари урлӑ, чӑн-чӑнах та таса пурнӑҫпа пурӑнассишӗн хавасланса кӗрешет.

Ҫулашки ҫулсенче тунӑ пахаран та паха ӗҫсенчен тепри вӑл—чӑваш ҫалхуҫалӑхне социалисӑмла никӗс ҫине куҫарас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем Чӑн, Чӑваш республӗкӗн коллективизаци прочӑнчӗ кӳршӗри крайсемпе облӑҫсем хушшинче кайра тӑратӑ-ха. Анчах, ҫавах та вӑл, ҫулашки ҫулсенче, коллективланнӑ ҫалхуҫалӑхне ҫирӗплетсе шанчӑклӑ ура ҫине тӑратас тӗлӗшрен пысӑк ҫитӗнӳсем туса хучӗ. Чӑваш республӗкӗ ӗлӗкрен хӑрса ҫитнӗ ҫалхуҫалӑхне социалисӑмла никӗс ҫинче коллективласа ҫултан ҫул унӑн тупӑшне ӳстерет. Агротехникӑ вӗрентнӗ пек ӗҫлесе пырса, ӗлӗк вакланса хӑрса ҫитнӗ уйсенчен ҫимӗҫлӗ, тухӑҫлӑ, тӗрлӗрен тырпулпа ҫешӗрекен уйсем туса хурать.

Чӑваш республӗкӗ иртнӗ ҫул хушшинче ҫалхуҫалӑхӗн кампанилӗ ӗҫсене пурне те вӑхӑтра тата тӗплӗн ҫеркелесе пырса, мӗн тумалисене ытлашшипех туса тултарса тӑчӗ. Ҫакӑншӑн вӑл хӑйӗн ҫатне Пӗтӗм Союзри хӗрлӗ хӑма ҫине кӗртме те тивӗҫлӗ пулчӗ. Ҫалхуҫалӑхӗнчи кампанилӗ ӗҫсен планӗсене срукӗсенче лайӑх тултарса пынӑшӑн ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗн тӗп органӗ—„Правда“ хаҫат ҫак октябӗр уйӑхӗнче, Октябӗр революци 16 ҫул тултарнӑ вӑхӑтра, Чӑваш республӗкӗн ҫатне пӗтӗм Союзри хӗрлӗ хӑма ҫине ҫырса хучӗ. Ку хисеп—пирӗншӗн пит те пысӑк хисеп. Вӑл пирӗн колхозникӗсемпе ӗҫхресченӗсен примерлӑ ӗҫӗсен чапӗ. Паллах, ку хисеплӗ хӗрлӗ хӑма ҫине кӗме тивӗҫлӗх паракан ҫитӗнӳсем вӗсем ахалех, хӑй тӗллӗнех пулса тӑман. Вӑл ҫитӗнӳсене епӗр хамӑрӑн ывӑнми паттӑр ҫулпуҫӗ Петров ҫулташ пуҫарса пыракан чӑваш парторганизацийӗ ҫертсе пынипе,—кулакла хирӗҫӗве хирӗҫ, оппортунисла сӳрӗклӗхе хирӗҫ вирлӗн кӗрешсе пырса вӗсене ҫапса сирнипе, тата кивӗ пурнӑҫран ҫулнӑ ҫаласемпе хӑнӑхусен чӑрмавӗсене сире-сире ҫанипе ҫех тума пултарнӑ.

Ҫак ҫулта Чӑваш республӗкӗ ҫалхуҫалӑх ӗҫӗсемпе анчах мар, ытти кампанилӗ ӗҫсемпе те мала тухса тӑчӗ. Сӑмахран, укҫа-тенкӗ пухас плансене тултарассинче те вӑл кварталран квартала аван ӗҫлесе пычӗ. Ҫакна кура, пирӗн ӗҫсене чысласа, ССРС финанс Комиссариачӗ „3 мӗш татӑклӑ ҫул“ заҫомӑн 18 мӗш тиражне Чӑваш республикӗн чӗринче—Шупашкарта туса иртгерчӗ. Кусемсӗр пуҫне ытти ӗҫсенче те (аш какай хатӗрлевӗ, вӑрман хатӗрлевӗ, т. ыт. те) пысӑк ҫитӗнӳсем туса пынӑ.

Ҫак ҫул хушшинче тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсенчен тепри вӑл, уйрӑмӑнах паллӑн курӑнса тӑраканни—ҫулҫӗр строительствинче тунӑ ҫитӗнӳ. Ҫулҫӗрсене ҫусаса лайӑхлатас, ҫӗнӗрен ҫулсем кӗперсем хывас тӗлӗшпе Чӑваш республикӗ пӗтӗм Совет Союзӗнче чи малти вырӑна тухса, пуриншӗн те кӑтартулӑ ҫулсемлӗ ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Чӑваш ҫулӗсем чӑнахах та лайӑххине иртнӗ ҫула Мускавран Кара-Кум пушӑ хирне ҫаврӑнса килнӗ авточупу експедицийӗ каласа пани те аванах ҫирӗплетсе пачӗ. Ку авточупу експедицийӗ хӑйӗн 9000 километр тӑршӗлӗ вӑрӑм ҫулӗнче Чӑваш республӗк ҫулӗсем пек тикӗс те тӳрӗ ҫулсене урӑх республӗксемпе крайсенче, тата облӑҫсенче ниҫта та курман. Кун ҫинчен вӑл пӗтӗм Совет Союзне каласа пӗлтерчӗ: ҫулҫӗрсене мӗнле тумалине Чӑваш республӗкӗнчен вӗренмеле, терӗ Кара-Кум авточупувӗн експедицийӗ.

Ҫапла ӗнтӗ Чӑваш республикӗ—ӗлӗкхи кӗркунне-ҫуркунне ҫе хӑш-пӗр тӗлте ҫулла та ишсе тухма ҫук ҫӗршывран—калкал та тикӗс, тӳрӗ ҫулсемлӗ ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Ӗлӗкхи саманара урапапа ҫӳреме ҫук лакӑм-тӗкӗмлӗ, лачакалӑ, пылчӑклӑ усал ҫулсем вырӑнне—автомобилсемпе трактӑрсем чупма пултаракан ҫап-ҫака ҫирӗп ҫулсем пулса тӑчӗҫ. Вӑл хӑйӗн лайӑх ҫулӗсемпе—автомобилленекен, трактӑрланакан Совет Союзне—малашне Совет ҫӗршывӗн пур кӗтессисенче те мӗнле ҫул-ҫӗрсем пулмалине кӑтартса пачӗ. Ҫапла, Чӑваш рес-

публĕкĕ çулйĕр тĕлĕшпе пĕтĕм ССРС-шĕн тĕслĕхлĕ, примерлă республĕк пулса тăрат. Ку пирĕншĕн хамăршăн та пит те хаваслă йапала.

Чăваш республĕкĕ хăйĕн йалхуçалăхĕнчи кампанилĕ ĕçĕсемпе мала тухса пĕтĕм Сойузри хĕрлĕ хăма çине кĕни, çакăнпа пĕрлех вăл çулйĕр тĕлĕшĕпе те пĕтĕм Совет Сойузĕшĕн примерлă республĕк йатне илни—ку чăваш ĕçхалăхĕпе унăн хастарлă ĕçĕсем çинчен пĕтĕм Совет Сойузне, тата çавăн пекех пĕтĕм тĕнчене те паллаштарат. Ку çитĕнӳсем патша улпучĕсемпе унăн чинавникĕсем ĕлĕк чăваш ĕççынни çинчен сарнă йĕрĕнчĕк мăшкăллăха йалтах сирсе ывăтаççĕ. Чăваш ĕçхалăхĕ ытти пысăк нацисем пекех хастарлă, вăл ĕçре тимлĕ, пултарулă. Хăйне комунистсен парти пек тĕрĕс йертсе пыракан пулсан, вăл хăйĕн ĕçченлĕхпе, тимлĕхĕпе социалисăмла пысăк строительтвă ĕçĕсенче малтан мала тухса, хăйĕн çĕршывне çулйĕр тĕлĕшпе çех мар—пур йенчен те кăтартулă республĕк туса хума та пултарат.

Паллах, пирĕн хамăрăн халччен тунă çитĕнӳсемпе çех лăпланса тăрасси пулмала мар. Халччен тунă çитĕнӳсене пирĕн пĕтĕм вăйа хурсах çултан-çул малтан мала йарса пыма тăрăшмала. Ку тĕлĕшрен пирĕн хамăрăн парти чăваш организацин çулпуçĕ Петров йулташ панă лозунга тытса, вăл лозунга пĕтĕм чăваш ĕçхалăхĕ умне çулăмлă саспаллисемпе кăларса тăратмала. Вăл лозунг çапла калат: **Çулйĕр тĕлĕшпе пĕтĕм Сойузшăн кăтартулă республике—пур йенчен те кăтартулă тăвар.**

Çакăн пек вирлĕ лозунг, çакăн пек пысăк задач тăмала пĕтĕм чăваш çĕршывĕ умĕнче çитес çулсем хушшинче.

Кăтартнă çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем тапхăрĕнче пурăннă чух, тата халь çеç асăннă лозунга пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнĕ тапхăрта—пирĕн чăваш совет писателĕсен те ку тĕлĕшпе ĕçлемели сахал мар. Чăваш писателĕсен ку тĕлĕшри задачĕ вăл—Чăваш республĕкĕ тăвакан çитĕнӳсене илемлĕ литературă урлă сăнласа, ăна илемлĕ сăмахсемпе картинласа кăтартасси, чăваш ĕççыннисене вĕсем мĕншĕн кĕрешни çинчен витĕмлĕ сăмахсемпе чĕрĕ картинлăн çырса парса, вĕсене ăнланма пулăшасси пулмала.

Йулашки 4—5 çул хушшинче, республĕкĕн тĕрлĕ йенĕсем тунă çитĕнӳсемпе пĕрлех, чăваш совет литератури те пысăк ӳсĕм туса хучĕ. Ку тĕлĕшрен ĕнтĕ халь никам та—чăваш литератури çук, йе—вăл ӳсмест,—тесе калама пултараймаст. Унăн ӳсĕмне куçпах курас те çен, çак çулсенче тухнă илемлĕ литератур кĕнекисене çеç илсе пăхмала, тата çитес вăхăтрах пичетрен тухмали произведенисем çинчен çех пĕлмеле. Ку ӳсĕм—чăваш совет литератури хăйĕн йышлăхĕ (количестви) йенчен тунă ӳсĕм. Чăваш илемлĕ литератури йулашки 4—5 çул хушшинче чылай произведенисен шучĕпе сарăлчĕ, ӳсрĕ, хăватланчĕ. Çак çулсенчех илемлĕ литератур тĕлĕшпе ĕçлекенсен кадăрĕ те чылайах ӳссе çитрĕ. Ку кадăр, партин чăваш организацине унăн ленинла Обкомĕ пуçарса пынипе, йулашки вăхăтра хăй ĕретĕнчи вак буржуалă, кулакла националисăмлă, национал-демократилĕ йухăмсене çĕнетрсе, чăн-чăн пролетарлă кĕрешӳ çулĕ çинче çирĕпленсе тăчĕ. Ӳсет, вăйланат, çирĕпленет чăваш совет писателĕсен ĕречĕ. Çавăн пекех ӳсет, вăйланат вĕсем паракан илемлĕ литературă та.

Анчах, çакăнпа пĕрлех ку вăхăтра чăваш писателĕсем умне тепĕр пысăк задач тухса тăрат. Вăл задач республĕке пур йенчен те кăтартулă (образцово) тăвассишĕн кĕрешнĕ тапхăрта унăн литературине те ытларах вăйлатса, **ăна пахалăх (качество) йенчен çӳлĕ вырăна хăпартасси пулат.** Чăваш илемлĕ литератури пахалăхне хăпартасси çитес çулсем хушшинче кашни чăваш писателĕ, кашни поет пуçĕнче тăракан пĕртте асран кайми хĕрӳ шухăш пулмала. Ку шухăш писателĕсем умне **„произведенисен пахалăхĕшĕн“** текен лозунг кăларса тăратат. Çак лозунга пурнăçа кĕртессишĕн кашни поетăн, кашни писателĕн пĕтĕм тимлĕхне хурса ĕçлемеле.

Мĕнлерен тумала-ха пирĕн илемлĕ литературăн пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе? Акă мĕн. Произведенисене—пурнăçа марксисла-ленинла ăнлачни тăрăк пролетарилĕ идеологин çирĕплĕхĕпе шăратса кăларнипе пĕрлех,—вĕсен çужечĕсене—тĕп шухăшĕсене анлăрах та тарăнрахăн илмеле, вĕсене формипе техники йенчен тĕплĕн туптаса, саваласа, йакатса кăлармала. Произведени çтилĕ вулама çăмăл пулмала. Произведени пысăк художествăлă пулмала. Произвевенийĕ чĕрĕ чĕлхепе, халăх ăнланмала чĕлхепе çырмала. Кирек мĕнле произведени пултăр: пысăк-и вăл, пĕчĕк-и,—сăвă-и, поемă-и, калав-и, повĕç-и, романи-и,—вĕсем пурте кашни сăмахне вицсе пăхса, турттарса пăхса, суйласа илнĕ сăмахсемпе çырнă произведенисем пулмала. Произведенин кашни сăмах çаврăнăшĕ (предложенийĕ) хăйĕн вырăнĕнче пулмала. Произведени вăл çитменнипе те, йе вăл ытлашши пулнипе те ан аптратăр. Çавăн пекех кашни предложенири уйрăм сăмах та хăй вырăнĕнче пулмала. Предложени пĕр-пĕр сăмах çитменнипе, йе сăмах ытлашшипе ан пăсăлтăр. Суйласа вицсе илнĕ сăмахсенчен предложени пулмала. Çавăн пекех тĕплĕн шутласа илнĕ предложенисенчен произведени пулса тăмала. Произведенийĕ вулакан çын, ăна вуланă чух, хăйĕн пĕтĕм сисĕмĕпе, пĕтĕм ăс-хакăлĕпе вăл произведенийĕ парăнса, унта мĕн вуланисене хăй куçĕпе курнă пекех курса, унта каланă фактсем пулнă çĕрте хăй те пулнă пекех пулса ирттертĕр. Сан произведенӳне вулакан çын, ăна вуланă чух—хăйĕн сисĕмне хумхатăр, вăл—произведенири геройсемпе пĕрлех савăнтăр, вĕсемпе пĕрлех хурлантăр, тарăхтăр, вĕсемпе пĕрлех пурăнса ирттертĕр. Çакăн пек çырнă произведенийĕ çеç паха произведени темеле.

Мĕнле тăраççĕ-ха пирĕн чăваш совет литературинчи халччен тухнă паллăрах илемлĕ произведенисем çакăн пек пахалăх тĕлĕшĕнчен? Тӳрех каламала—çук. Пирĕн чăваш совет писателĕсем, ваттисенчен пуçласа тин çырма пуçлакансем патне çитиччен, ку таранччен хăйсен произведенисен пахалăхне хăватлăрах тăвасси çине пикенсе пăхман. Çырса пичетлесе кăларса пултăр. Вара çитет!

Илер-ха тĕслĕхе, сăмахран, хăш-пĕр паллăрнă писателĕсем çырнисене. Тукташа илер. Вăл сăвăпа та, прозăпа та çырат. Унăн сăввисене те, прозăпа çырнисене те вулама çăмăл. Анчах та çырнисем час-часах çийелген, ăшăкăн шăйăртарса пыраççĕ. Унăн чи пысăк произведенийĕ—повĕç „Вăкăр çырми“—вулама пырат те пек, çăмăл. Анчах произведенире шухăш тарăнлăхĕ çук, художествăлăх

начар, тата ёненмеле мар, пурнăçра пулмас фактсем тĕл пуласçĕ. Малала илер Трубина Мархвин йулашки произведенисене („Мучар", „Ĕç тухмарĕ", „Паллă пункт"). Уйрăмăнах „Мучар" калава вуласăн,—вулаканăн унта пулнă фактсене нимпе те çаенес килмест. Клавра пулакан ĕçсем пĕрин хыçнăн тепри—темле, искусствăлăн çыхăнса пыраççĕ. Вăл ĕçсем пулмассăнах туйăнаççĕ. Çавăнпа та, автăр çав тери ёненмеле мар çырса пынинчен час-часах, вулавă чух хăна-ху имевсе йе тарăхса кайатăн. Çакăнта асăннă йулташсем ан кӳренччĕр тесе, епĕ хамăн произведением пирки те тӳррипех каласа паратăп. Ман сăвăсем, тӳрех каламала йаклаcа çитнĕ сăвăсем мар. „Хĕнхур айĕнче" поемăн çитменлĕхĕ—ăна нумай слогла вгçепеле·çырни. Ку вулама йăвăрлатаҫ. Çапла „Хĕнхур айĕнче" поемă та техники йенчен лайăх шăратса кăларнă произведени мар. Малала Краснов-Аслин „Тăвала" романне илер. Ку роман ĕнтĕ чăваш илемлĕ литературинче хăйĕн çужечĕ тĕлĕшпе, тата пысăкĕш тĕлĕшпе те паллă вырăн йышăнса тăраҫ. Анчах та романа Краснов—Асли тĕплĕн формăлама пĕлмен, унăн чĕлхине йакатса çитермен. Романăн кашни предложенинчех йе ытлашши сăмах пурри, йе сăмах çитменни, йе хăш сăмахсем хăй вырăнĕнче тăманни паларать. Вырăнĕпе паллă фактсем çинче хыттăн асăрхаттарса хăварма пĕлменни, йе вак-тĕвĕк ĕçсем çинчех ытлашши чарăнса тăни нумай тĕл пулаҫ. Уйăп Мишши йулашки сăввисене мухтакансем пулчĕç пулсан та,—ку сăвăсем (поемисем те) техники йенчен, çавăн пекех художествăлăх йенчен те пиçсе çитнĕ йапаласем мар. Хусанкайăн йулашки вăхăтри произведенисем час-часах çиелтен пынипе, илемĕш çуккипе аптраççĕ. Митта Ваçлей сăвви-поемисем—час-часах ăш-чикĕ йенчен пуçа нимĕн хăварман пушă сăмахсемпе тĕртĕнсе пыраççĕ. Илемĕшĕ начар. Техники—тонĕкăпа çилабĕкă хушшинче пыракан рамкăсăр техникă.

Епĕ кунта урăххисене илместĕп те. Мĕншĕн тесен, халъхи чăваш литературинче çакăн пек паларнă писатĕлсемпе поетсен произведенисем те пысăк çитменлĕхсемпе апатраççĕ пулсан, ун пек çитменлĕхсем ытти писатĕлсен çук тесе калама памаççĕ. Ку çитменлĕхсем пуринчен ытла çамрăк писатĕлсен произведенисенче курăнаççĕ.

Çак çитменлĕхсем вĕсем—пирĕн произведенисен пахалăхĕ начаррине кăтартакан кăлтăксем пулса тăраççĕ. Ку кăлтăксене пирĕн пурин те çине тăрсах пĕтерме тăрăшмала. Пайантан малашне кашни писатĕл, кашни поет произведенисен пахалăхĕшĕн кĕрешмели лозунга хăй умне çирĕппĕн лартса, ăна хăйĕн кашни çĕвĕрен çыракан произведенинчех пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлетĕр.

**Елгер.**

# Çĕр чĕнет

**Ерлик Хĕлипĕ.**

Çĕр чĕнет,
        Çĕр кĕтет,
                Çĕр сĕнет...
Пĕчченрен чун тӳссе тăраймарĕ.
Еп илтеп...
                Еп итлеп сассине—
        Çĕр ĕçченĕ—чăваш комунарĕ...
Март. Хĕвел...
Сывлăш уçă. Йур ирĕлет.
„Чаплă" хĕл халъ—чăлах: чапсăрланчĕ.
Ман кăварлă чĕре—партбилет.
Ман пайан колхозра пĕтĕм шанчăк.
Ман вăйа,
                ман хуçа сĕлĕх пек,
Ĕлĕкрех—
—сăвăратчĕ,
        — сăхатчĕ!
Майăмраччĕ йалан серепе,
Хам пулсан та матур, йашă каччă...
Халъ—
    Ак
        Еп...
Пĕччен мар:
                Еп—ертел!
Еп ертел машинин
                хурçă винчĕ!
Тусăм,
    тыт—
        вăйхална:
                кĕрлеттер!
Тусăм,
    вĕт—
        Çĕр чĕри те чĕрĕлчĕ!
Ав,
    куратни,
            уйхир
                çĕнтумланчĕ?
Вăхăт çитрĕ пулас:
        илт—
            чĕнет...
Пĕрлешсе ĕçлесе
        Вĕт ылханçă—
                Мăн хуçа—çук ĕçмĕ
                        йунăма тек
Ĕçченсем,
        колхозра—
Кĕвĕлер, пулăр хатĕр!
        Çĕнĕ ĕçĕн
                хатĕрне!
Вара тин,
        уйхирĕм хурлăхланмĕ.
Вăл хумханĕ
        чăн ĕç кĕввипе.
Çĕр чĕнет,
        Çĕр кĕтет.
                Çĕр сĕнет,
Пĕчченрен чун тӳссе тăраймарĕ.
Еп итлеп...
        Еп итеп—сассине—
— Çĕр ĕçченĕ—чăваш комунарĕ.

# Урăх чĕре

(Роман сыпăкĕ)

**Кăтра Мишша**

1918 мĕш çул...

Йал. Салат Васли салат суттипе самăрăлса пурăннă аслă йал. Улшăнман пек пысăк йал, пĕртте улшăнман пек, ĕлĕкхи пекех тулашĕнчен пăхма. Ту вĕçĕнче—йĕкĕр тăрăлă шурă чиркÿ ĕçхалăхĕн айăпсăр „çылăхĕсене касарса“ лараччĕ,—çав вырăнтах ларат. Йал çинеле пăхсан катаранах, пуринчен малтан, самăр Салат Васлин сала пек çурчĕсен шупка-симĕс çийĕ куçа пырса тăрăначчĕ,—ку та çав çавах. Салат Васлин сала пек çурчĕсенчен инçех мар Хыт Хĕлĕпĕн чус çине сăмала йарса витнĕ çурчĕсен çийĕсене курма пулаччĕ,—çав çавах, ĕлĕкхи вырăнтах лараççĕ. Кулмас çырми хĕррипе вăрман пек кашласа ларакан йăмралăх йенне пăхсан, Хупах Çтапанĕн хĕрлĕ çурт çийĕсене курма пулаччĕ;—кĕр çитнипе çулçисене тăкса шăпарланнă йăмрасем хушшипе халь те курăнаççĕ вĕсем. Йалтан пĕр икçĕр чалăшра Хыт Хĕлĕпĕнултă çунатлă çил арманĕ сывлăша касса пурлăх пухса лараччĕ,—вăл та унтах. Кулмас çырми çинчи Хупах Çтапанĕн пурлăх кустаракан ик чуллă арманĕ те çавăрăнат йерипен. Унăн анлă пĕвинче каскăн çилпе çырансене çулласа выртакан хумлă-хумлă пăтранчăк шывĕ катараçах курăнат.

Ху паллана ĕлĕкхи Аслă йалахши ку,—тесе патнерех çывхаратăн, йал ăшчикне кĕретĕн. Унта акă мĕн курăнат. Чиркÿн решоткăлă карти алăкĕ умĕнче тĕрлĕ çимели йапаласемпе, вак таварпа астарса ларакан самăр Салат Васлин сар сăрпа сăрланă лапки те вырăнтах ларат-ха. Анчах, ку лапкан тимĕрле мăнă алăкĕ çине çакса йанă мăнă çăра увăрăлмийех çыпçăнса ларнă.

Шухăшласа тăма вăхăт çук,—малалах шăватăн. Каллех куç умне тухат: Хупах Çтапанĕн иртен-çÿрене илĕртсе кÿртсе хуйха-суйха „сирекен“ трактир алăкĕ çинче те çавăн пек пысăк çăра.

— Мĕнле капла?—ыйтса тăрат самăр Салат Васли алăкĕ çинчи пысăк çавра çăра.

— Хăçан уçăлмала?—антăхса тăрат Хупах Çтапанĕн трактир алăкĕ çинчи тутăхнă йăвăр çăра.

Виттĕрех тÿхса кайатăн, çавах та йал тĕппех улшăннине пĕлме хĕн-ха. Анчах, ку йал хушшинче чарăнсах тăрса, унăн пур хушăкĕсене те, пур килçурчĕсене те кĕрсе пăхсан, вăл йал мĕнле улшăннине тĕппипех пĕлетĕн. Нумай улшăнтарнă ку Аслă йал хăйĕн ĕмĕрхи сăн-сăпатне, нумай. Кирек хăш йенчен илсессĕн те пĕлтĕр-висĕм çулхи Аслă йал мар ку, вунă-вуник çул кайарахри те мар. Чĕри те урăх ун. Иртнĕ çулсенче ун чĕрин чĕр тымарĕ Салат Васлийĕ пулнă пулсан—халь вăл мар. Йала тытаччĕ Салат Васçи. Старăстă, йал пуçĕ—теччĕç ăна. Вăл мĕн тăвас тенĕ—пулса пыраччĕ аслă йалта. Хăйне те йал пуçĕ теме май пурччĕ, пуçлăхах темеллеччĕ ăна. Пурлăх тĕлĕшĕнчен те ăна çитекенни çукчĕ.

Ак халь шăлт урăхла: халь çеç фронтран килнĕ мужиксем аслă йалăн пуçĕ пулса тăраççĕ, аслă йалăн аслă чĕри—Типшĕм Тимка. Тимка—а лă чĕрен чĕр тымарĕ. Анчах никама та „старăстă“



темеççĕ халь йалта. Ун вырăнне „совет“, „комбед“ тенисем илтĕнеççĕ. Хальхи йал пуçĕсам—чухăнсем.

Кам тунă вĕсене йал пуçлăхĕ? Хăйсемех пулнăши вĕсем пуçлăх—ĕлĕкхи Салат Васлисем пек? Çук, хăйсем мар. Чухăнсене чухăн халăх аслă йал пуçĕ туса лартнă. Ирĕк вĕт халь, ирĕк. чухăнсен ирĕкĕ.

Пĕлет аслă йалăн çĕнĕ чĕри хăйĕн мĕн тумалине, лайăхах пĕлет. Вĕренмелĕх пулнă вĕсен. Сахал мар хурапа щурра асгунă вĕсем. Хăйулăн туса пырат вулĕçтăвком хушнă ĕçсене Аслă йалăн çĕнĕ чĕри. Кашни виç кунта пĕрех çитсе тăрат Типшĕм Тимка вулĕçтăвкома. Кашни кайса килмессеренех çĕнĕ хыпарсем илсе килет Типшĕм Тимка Салат Васли самăрлса пурăннă аслă йала. Кашни çĕнĕ хыпара Аслă йал çыннисен халхисене майлаштарса чикет. Кашни кас тенĕ пек пухусем пухат.

Ак Аслă йал халăхĕн пурлăхне шута илсе тухрĕ çĕнĕ чĕре. Самăр Салат Васлин тырăлă амбарĕсемпе йĕтем çинчи çапман капанĕсем те шугланчĕç.

* * *

— Контрибуци!—çĕнĕ сăмах илсе килчĕ вулăсран Типшĕм Тимка революци хумĕпе чÿхенекен Аслă йала.

— Кам çине хурас, кам?...—хăйĕнчен хăй ыйтат революци хумĕпе чÿхенекен Салат Васли самăрланса пурăннă Аслă йал.

— Кам тÿлеме пултарат—çавăн çине!—çухăрат революци хумĕпе чÿхенекен Аслă йалăн çурри.

— Кам тÿлеме пултараканĕ мĕншĕн айăпла?

Пурте ҫӗр акатпӑр вӗт,— ҫухӑрать ҫав йалӑнах тепӗр ҫурри.

— Аҫтан тупса пама пултартӑр Вани Ҫтапанӗ? Мӗн сутас тетӗр унне?— татса хурать Типшӗм Тимка.

— Еп айаплӑ-и уншӑн?! Хама тивӗҫлине тӳлетӗп те, мӗн ӗҫ пур манӑн ҫынпа,—ҫухӑрать, итлесе ларса кӳтсе ҫитнӗ Салат Ваҫли. Кӗҫ ҫеҫ лампӑ сӳнсе лармасть—чӗтренет хурал пӳртӗнчи вӗриленнӗ сывлӑш.

— Ес пулмасӑр...

— Мӗншӗн?.

Хурал пӳрчӗн хавшаса ҫитнӗ пӗренисем чӗтреме тапратаҫҫӗ. Ҫӗр хутах ӑшӑ йавине пӑрахса тухса тарать пӳрт ҫийӗнчи улӑм ӑшне кӗрсе ларнӑ айахлӑ ҫерҫи.

— Йулташсем!..—лӑплантарасшӑн кӑшкӑрать Типшӗм Тимка. Анчах урнӑ халӑх ӑна итлемест. Урнӑ халӑх кӗҫ-вӗҫ тытӑҫса ӳкес пек харкашать.

— Йулташсем!.. Ан шавлӑр-ха,— темиҫе хут ҫухӑрса аран лӑплантарать Типшӗм Тимка урнӑ халӑха.—Чухӑнсен ирӗк вӗт халь,—малала чӑсать вӑл хӑй сӑмахне халӑх лӑплансан.

— Ӗҫхалӑхӗ мӗн тӑвас тет—ҫавна тума пултарать.

— Ну-ва...

— Ҫапла...

— Тӗрӗс...

Типшӗм Тимкана каласа пӗтерме памасӑрах, шавласа илет хум анчӑклӑ халӑх.

— Кам—тӳлеме пултараймансем ҫине хурас тет,— ҫавсене алӑ тӑратма ыйтатӑп,—хушать комбед председателӗ Типшӗм Тимка.

Шӑкӑрах тӑрса ларчӗҫ хытанка хӑрӑк аласем.

— Йарӑр. Кам хирӗҫ?

Тӑлӑхан тӑрса ларчӗ алӑк патӗнчи кукӑрта пилӗк-ултӑ алӑ.

— Паллӑ: тӳлеме пултараканнисем ҫине хумала пулчӗ. Ну, кам-кам ҫине хуратпӑр?—каллех ыйтать комбед пуҫлӑхех.

— Мӗнле апла?..

— Тӗтӗм тӑрӑх хумала... ҫухӑраҫҫӗ алӑк патӗнчи кара ҫавартараххисем.

— Мӗншӗн?..

— Тарҫӑпа...

— Сана кам чарса,..

— Ес...

Тепӗр хут кӗрлеме тытӑнать каҫхи пуху. Аран-аран лӑплантарать Типшӗм Тимка.

— Пӗре—Салат Ваҫли ҫине, тепре... алӑк патӗнчисем шавланине итлемесӗр, пӳрне ҫине хурса шутлама тытӑнать хурал пӳртне савӑланнӑ пуху.

— Епӗ ҫичӗ ҫул старӑстӑра ҫӳрерӗм. Никама макӑртман,—ҫаплах ҫухӑрать Салат Ваҫли.

— Мӗнчулшер хурас? Ыйтать пуху хӑйӗнчен хӑй.

— Салат пӗр пилӗк пинне чӑтать. Виҫҫӗшне—Хупах... Иккӗшне—Хытти.. Пулчӗ те хайхи,—тесе хучӗ пӳрне ҫине хурса шутласа пынӑ пухӑвах.

Шутлӑр-ха, халӑх?—йавашланчӗ Салат Ваҫли, ҫилӗ ҫӗнтерейменнине кура.—Аҫтан тупса парас тетӗр... Турпас мар вӗт...

— Ҫитӗ кунчул пуйнипе.,. Сан кунта каласса тӑмали те тивӗҫ ҫук... Тухмала та каймала анчах.

— А-а-а-а! Каллех кӗрлет хурал пӳрчӗ.

— Шӑпланӑр-ха,—чарать Типшӗм Тимка.—Ҫак Аҫана виҫӗ кун хушшинче пухса вулӑса ҫитермелле. Ну, манӑн урӑх нимӗнле те ӗҫ ҫук. Халь ҫитӗ саланма та пултаратпӑр.

Васкамасӑр саланать пуху. Пӗрер-икшерӗн ҫеҫ туха-туха саланаҫҫӗ. Ҫынсем тухса пӗтнӗ май, Тимкапа Шур Кӑпитун та кайма тухрӗҫ. Кап! йарса тытрӗ тахӑшӗ ҫенике тухсан Типшӗм Тимкана, ҫӗтӗк шинел аркинчен.

— Кӑшт йул-ха, ывӑлӑм,—пӑшӑлтатрӗ Типшӗм Тимкана пӗр хӑлхинчен вӑрттӑн сасӑ.

— Ну, мӗн?—ыйтрӗ Типшӗм Тимка чарӑнса.

— Мӗнӗ ара... Анну саклат пырса хунӑ хӑмӑтне те парӑп. Тыррине те кайала илмӗп. Кирлӗ пулсан татах та... каллех...—пӑшӑлтатрӗ малтанхи сасах.

— Мӗн, кирлӗ пулсан татах та?—хыттӑн ыйтрӗ Типшӗм Тимка.

— Ара, шутла-ха, ывӑлӑм. Аҫуна та халӗччен те вӑрҫман... Чакарма май килмест-ши хут? Ахалех тумӑттӑм,—тилмӗрет кайакан Типшӗм Тимкана тытса чарнӑ ҫын.

— Еп мар ӗнтӗ ӑна. Халӑх тунӑ йапала. Ҫавӑнпа ним каласса тӑмали те ҫук. Киле кай та, хатӗрле хӑвӑртрах укҫуна,—татса хучӗ Типшӗм Тимка.

— Ес те ҫынах-ҫке, ачам. Ес тума пултаратӑнах ӗнтӗ, ачам, ҫак ӗҫе. Еп старӑстӑра ҫӳренӗ чух, ун пек ӗҫсене часах майлаштараканччӗ. Ара, ачам, пилӗк пин теикӗ—пилӗкҫӗр те мар,—ӳкӗтлет кап! тытса чарнӑ ҫын.

— Ҫук! Ан калаҫса тӑр. Ӗҫӗ пӗтнӗ. Килне кай та, хатӗрле пайанах,—тесе уйӑрӑлса утрӗ комбед пуҫлӑхӗ Типшӗм Тимка, пӑшӑлтатакан ҫын чӗрине пӑхмасӑрах.

Ҫав тери шӑртланса тарӑхса йулчӗ Самӑр Салат Ваҫли. Анчах ҫав самантрах ним тума та пӗлмерӗ. Тӗрлӗрен шухӑшсем ҫиҫӗмле ҫиҫе-ҫиҫе илчӗҫ унӑн пуҫӗнче.—Персе вӗлерес ҫакӑнтах!—тесе шутларӗ пӗр шухӑшӗ. Кирлӗ мар. Ӑна пӗтернипех ӗҫ пӗтмес,—тесе лӑплантарчӗ тепри. Ах, ахаль!.. терӗҫ ик шухӑшӗ пӗрлешсе. Вӑрҫрӗҫ шухӑшсем. Такулӑхах, йавӑҫ сӳре шӑлӗсем пек самӑр пӳрнисем, вӑкӑр майӗ пек ӗнсине кӑтӑртаттарчӗҫ. Ним тума пӗлмесӗр килнеле утрӗ хумханса ӑшчикӗ пӑтраннӑ Салат Ваҫли.

— Ай, пуҫа кӗмерӗҫ... Краҫҫинпа тӑвар пама пулса пӑхмалаччӗ, шельмӑна. Ҫавӑрӑначчӗ те пуҫтен,—аса илчӗ килеле утнӑ май, ним-тума пӗлменнипе кеҫӗтмен тачка ӗнсине тачка пӳрнисемпе кӑтӑртаттарса.—Мӗнле ҫавӑрас ку шуйттана? Ыран ирех хӑмӑтне леҫтерсе парасчӗ,—хӑй тӗллӗн шутласа пырать Салат Ваҫли. Кашни вун-вуник пусӑмрах мӑнтӑр ӗнсине кӑтӑртаттарать, кеҫӗтмесӗрех хыҫҫӗ тачка пӳрнесем.

Пыйтӑсем ҫыртма пуҫларӗҫ пичке пек самӑрланса ларнӑ Салат Ваҫлин хӗрлӗ вӑкӑр ӗнси пек тачка та хӗрлӗ ӗнсине. Мӑнтӑр пӳрнисем ӗҫлӗ пулчӗҫ. Уйӑрӑлмаҫҫӗ вӗсем мӑнтӑр ӗнсерен. Кӗҫӗтмесӗрех кӑтӑртаттараҫҫӗ. Выртса та ыйӑх килмест ун кӗҫӗр. Пухуран та ытла часах тавӑранманччӗ. Чылай пулсаччӗ. Паҫӑрах вӑхӑт сывӑрма. Анчах нийепле те сывӑрса кайаймасть вӑл. Нийепле ун патне пыраймасть ыйхӑ. Чӑлпарах салатса йараҫҫӗ сывхаракан ыйхӑна вӗресе тухакан шухӑшсем. Ҫыврас тесе саланса выртнӑскер, тепӗр хут тӑрса тумланчӗ те, ҫӗр хутах пуп патне тухса утрӗ.

* * *

— Ну мӗнле? Хатӗр-и, Ваҫли Петровч?—ирех персе ҫитрӗҫ Типшӗм Тимкапа пӗрле ик-виҫӗ чухӑн—комбед ҫыннисем.

— Шутлă пулăр-ха, есĕр. Ĕнерех каларăм вĕт мĕнлине? Ăçтан тупса парăп, ывăлăм—Тимофи Иванч, ун чухлĕ укçана—чĕрине тытса тилмĕрет Салат Ваçли.

— Револуцилĕ саккун хушать: паратăн-и, памастăн-и—татăклăн ыйтать Типшĕм Тимка.

— Нийепле те пама пултараймастăп.

— Нумай ан калаç. Тепĕр сехетрен хăвах пырса панă пултăр. Хирĕçсен,—револуцилĕ саккун сана мĕн тумалине пĕлет!—терĕç те, Тимкапа ун йулташĕсем васкасах тухса карĕç. Тепĕр ик-виçĕ минутран вĕсем Хыт Хĕлĕп патне кĕрсе çухалчĕç.

* * *

— Тырпулăма ăçта чикес? Мĕн тумалине пĕлни пурлăх хыççăн çакăнни пулать пуль ĕнтĕ,—вăрăмăн хашлатса илчĕ Салат Ваçли, комбед пуçлăхĕ Типшĕм Тимка тухса кайсан.

— Йур ăшне...

— Çтапанах чĕнмеле пуль...

Тепĕр сехет мар, виç-тăват сехет те иртрĕ. Контрибуци укçине леçсе парас шутпа тапранмарĕ те Салат Ваçли. Пама та шутламасть вăл.—Мĕнле май килĕ-ха, тесе шутлать хăй.

Каллех персе çитрĕ комбед пуçлăхĕ Типшĕм Тимка—паçархи йултăшĕсемех. Вĕсенчен пĕри—Шур Кăпитун, тепри—Ăрмитон Упрамĕ.

— Паратăн-и, памастăн-и? татăклăн ыйтаççĕ Ваçлирен.

— Параймастăп, чăнах параймастăп, ачасем. Çук ман унчухлĕ укçа. Хăвăрах шутласа пĕлĕр. Укçа вĕт турпас мар. Укçа йур пек çўлтен çуса пухăнмасть.

— Апла пулсан, халех ăйруна кўлсе пар. Ăйрупа пĕрлех ху та пыратăн кĕнчелере. Есĕ арĕсленнĕ шутланатăн,—тесе хучĕ Тимка.

— Ăйăр?.. Мĕнле ăйăр? Парам ак сире епĕ ăйăр!—хăй те сисмерĕ, аллине шалавар кăсийине чиксе йачĕ Салат Ваçли.—Ă-ăм... сире!.. мăшкăлатăр!—кăшкăрчĕ вăл хыттăн.

— Ан кăшкăр! ан ур! Мĕн тума хушнă—ту халех,—терĕ ăна Тимка.

— Сире-и? Сире-и епĕ пăхăнмала?.. Акă епĕ!.. терĕ те вăл, кăсийинчен йакăлт вулвер кăларса, унпала тĕллерĕ Типшĕм Тимкана.

Ним те сикмерĕ леш. Тин мар курать вăл унпеккисене, нумай курнă. Пĕри те хăрамарĕç вĕсем. Çакăнтах, сасартăк, виççĕш те пĕр харăс кăларса тĕллерĕç пичке пек йăтăнса ларакан самăр аш катки—Салат Ваçли çине. Чăшăл! тăрса карĕ Салат Ваçлин чалăшла уçса хунă çўçĕ. Лăштах вĕçерĕнсе ўкрĕ ун тачка аллинчи вулвере.

— Кĕрĕст!—кĕрĕслетрĕ урайне ўкнĕ вулвер.

— Мйак!—мйаклатрĕ, çўлеле сиксе илчĕ кăмака çумĕнче питне çуса ларакан хăмăр кушак.

Самăр Салат Ваçлин çăпала пек куçĕсем шарса карĕç. Ун çинеле пăхнă виçĕ вулвер унăн тачка шăмшаккине тытса силлерĕç. Тинех вăл хăйĕн пўрнисем вĕçне çитичченех вĕри йун сăркаса аннине асăрхарĕ.

— Ах!..—урай хăмисене кисрентерсе чупса тухрĕ шалти пўртрен кăвас чĕресĕ пек сарăлса кайнă Марфа, Салат Ваçлин сар çу пек йуратнă арăмĕ.

— Пирĕн пулать ку,—тесе илчĕ Типщĕм Тимка çĕре ўкнĕ вулвере.

— Паратăн-и, памастăн-и?—виççĕн пĕр харăс ыйтрĕç кĕç-вĕç тăрăнса анас пек чĕтресе ларакан Салат Ваçлинчен.

— И-исĕ ту-ух-ха, Ма-марфа,—хушрĕ хăраса чĕтрекене йернĕ сассипе Ваçли хăйĕн масла кăмпи пек тачка маткине. Ўкĕнсе, пăшăрханса хушрĕ вăл.

Пилĕк пин укçанăн, пĕр вулвер парса йачĕ пайан самăр Салат Ваçли. Кĕçĕтмесĕрех, тата хытăрах хыçса илчĕ вăл хĕрлĕ ĕнсине.

Хаш-ш! ассăн хашлатса илчĕ Салат Ваçли.

— Ех! ой!.. ох!.. Мĕн пулчĕ ку? Мĕн?.. Тĕлĕк-и, чăнах-и? Е-ей, Мар-фа-а!.. иртсе карĕ пулмала пирĕн сарăлса пурнасси... Иртрĕ пуль патшапа пĕрлех... Пĕтерет ку совет!—тесе хучĕ вăл Типшĕм Тимкасем тухса кайнă хыççăнах.

# Çĕнтеретпĕр!..

**Ванин Федор**

Ех, сисет ман чĕре:
Пĕрлешўлĕ ĕçре
Нимскере парăнми вăй-хăват
пур!..

Çĕн хĕвел çуттинче
Çĕнелет çут тĕнче...
Епĕр ун пикĕсне хаљ хыватпăр.

Çак ĕçе тунă чух
Уркенсе тăма çук.
Кам кахал, ĕсчене вăл çул патăр.

Çамрăксем!.. Ей, васкăр!..
Кам ĕсчен кам хастар,—
Çав анчах тĕнчере пулĕ паттăр.

Ĕççыннийĕн алли
Пурнăçа авмали...
Ех, авар-ха!.. Хăват вĕт хаљ епĕр!..

Йăвăр пулĕ, анчах
Пĕр вершук та ан чак...
Пурпĕрех епĕрех çĕнтеретпĕр!

7-XI 1938 г.

# Çĕнĕ Йункă

*Краснов-Кĕçĕнни.*

**(Поемăн йулашки. Пуçламăшĕ „Сунталăн 6—7 мĕш №-че).**

X

Ман чĕрем кулат̆ кăна,
Чĕрем хаваслăхпа кĕрлет.
Мĕн кăна пулмаст̆ тума
Çак бољшевиксемпе пĕрле!

. . . . . . . . . .
. . . . . . . . . .
. . . . . . . . . .
. . . . . . . . . .
. . . . . . . . . .

Халапри пек çавă, тейĕр
„Çĕнĕ Йункă“-на çитсен.
Сарă хĕр кăкрийĕ йевĕр
Чăмăртаннă улмисем

Патша çурчĕ пек, çуртра
Сыснисем тăваççĕ салă.
Кăмăллă хăйсем, шултра,
Касăр та курнус сăмсалă.

Улăхĕ—ме пух, тет утă
Кашни çул 12 капан.
А уттийĕ тутлă, тутă—
Сĕлĕпех шет пĕр тăван.

Такисем те тăттава[4])
Курăк тĕшĕреççĕ çеç—
Первăй суртла аш тавар
Пит ударлăн хатĕрлеç.

Ĕнисем çине-çине
Йăлăнаççĕ çу çиме.

Сурăхсем ăшă сăкман
Хатĕрлесшĕнех куран.

Чăххисем пурте парка—
Парнелеç çăмартапа.

Праçникри пĕкех, çиçсе
Савăнаççĕ чечексем.
Акăш пек çӳреç ишсе
Пахчинче купăстасем.

Ачисем ахăлтатса
Вĕçтереç ача çуртне.
Хурĕсем чампăлтатса
Вăратаç çырма шывне.

А хулийĕ инçетрен
Пулăшсах тăрат̆:
Вулатат̆ кашни куллен
Ăс нуххи—хаçат.

Вăт мĕнле аван иккен
Бољшевикла колхоз тусан.
Ак хăçан иккен етем
Хĕнхурлăха йарат̆ хуса.

Вăт хăçан кулак умне
Манатăн ес чĕркуçленме.



„Çĕнĕ Йункă“ колхоз председателĕ Салдакейĕв йулташ. Председателре 3-мĕш çул ĕçлет.

Ак хăçан иккен куççем
Курма пуçлаççĕ лайăхрах.
Ак хăçан иккен çӳççем
Кăвакармаççĕ çамрăклах.

Вăт хăçан иккен шуйтан
Хăратайми пулат̆.
Вăт хăçан иккен йалтан
Есрел тухса тарат̆.

Вăт хăçан иккен тута
Кулмашкăн хĕтленет.
Ни йала ес, ни йута
Тухмастăн кĕленме.

Вăт хăçан иккен хĕлле
Ĕнтĕркемест етем.
Вăт хăçан чăн çĕнĕлле
Мужик пурнат̆ иккен.

Вăт хăçан хĕл пулсанах
Ес тăханатăн сар кĕрĕк,
Вăт хăçан, хăçан сана
Чăн-чăн етем тĕсĕ кĕрет.

Ак хăçан вăл, ак хăçан
Сана çемçе, ăшă.
Ак хăçан иккен чунтан
Сават̆ çумри мăшăр.

Вăт хăçан сан арăму
Пăрахат̆ ĕсĕклеме.
Вăт хăçан çав харкашу
Манат̆ çуртна кĕме.

Вăт хăçан салма унат̆
Аннӳ шур тулăран.
Вăт хăçан ху тăллуна
Ес чистийех татан.

Вăт ăçта иккен масар
Туйанаймаст̆ виле куллен,
Вăт ăçта иккен таса-
Таса та савнăçлă етем.

Вăт ăçта-ха йытпырши
Çын пыршине куммаст̆.
Вăт хăçан иккен çĕршыв
Илемсĕр курăнмаст̆.

Вăт хăçан сан питӳнте
Шăлан çеçке çурат̆.
Вăт хăçан сан чĕрӳнте
Шăпчăк йава тăват̆.

Тумĕ пур, çиме çитет,
Партирен пĕрмай хисеп...
Аван-çке пурнăç, пит аван
Бољшевикла колхоз пулсан.

XI

„Çĕнĕ Йункăна“ пырсассăн
Савăнатăн тем тĕрлех.
„Çĕнĕ Йункăра“ хавассăн
Ĕç йурри шавлат̆, кĕрлет.

„Çĕнĕ Йункăна“ пырсассăн
Сан чĕрӳ йурлатĕ çеç.
„Çĕнĕ Йункăра“ хавассăн
Вĕр çĕнĕ тĕнче тĕртеç.



Н. Йаковлев (Йаку Микули) 1930 çултанпах колхоз правлĕни членĕнче ĕçлет. „Çĕнĕ Йункăн“ куљтçут ĕçĕсене тăваканĕ.



Колхоз йĕтемĕ çинче ĕç вĕрет. „Çĕнĕ Йункă“ çентабĕрĕн 8-мĕшĕ тĕлне пур тырра та çапса пĕтернĕ,

Ывтăнат çеç хумлăн-хумлăн
Йуpă кулă пĕр вĕçрен.
Çĕнĕ чунлă „Çĕнĕ Йункă“
Çавнашкал ĕнтĕ, атсем.

„Çĕнĕ Йункăра“ çĕн пурнăç
Çитĕнет шав шавласа.
„Çĕнĕ Йункăра“ хур пулмĕç
Çынсенчен кайа йулса.

Анчах ку çеç-и мĕн, ку çеç-и
Лайăххи, атсем?—
Çĕршер-çĕршерĕн хаҧ ӳсеççĕ
Паттăр колхозсем.

Кунта çеç-им-ха выратпăр
Хăвăрт та маттур?
Кунта çеç-им-ха çав паттăр
Теппейсен Верукĕ пур!

Пиншер-пиншерĕн çитĕнеççĕ
Чăрсăр ударниксем.
Пиншер-пиншерĕн çитĕнеççĕ
Хастарлă Веруксем.

Пăрлă çурçĕр, шăрăх кăнтăр,
Шурă мамăк, симĕс кантăр.
Атăл, Днепăр, йе Çавал,
Чул хула, йе йăвăç йал,—
Пур çĕрте те пĕр пек çемĕ,
Пур çĕрте те пĕр пек сас:
Çĕнтерет çĕнтернĕçемĕн
Хĕпхĕрлĕ йалавлă клас.
Тӳрĕ пӳллĕ ту, йе шурлăх,
Сенкер кӳлĕ, йешĕл улăх,
Сăрт, çырма, йе лупашка,
Ленинград йе Шупашкар,—
Пур çĕрте те шавлăн-шавлăн
Ĕç йурриĕ йавăнат.
Шавлăн-шавлăн, анлăн-анлăн
Çĕнĕ пурнăç хывăнат.

ĂНЛАНТАРНИСЕМ:

[1]) Чат—хăшпĕр çĕрте „чиствйех“, „чисти“, „каснă лартнă“, „пекех“, тата урăхла та каласçĕ.
[2]) Мадиков Йаку—комсомолĕц пулсан та, сĕлĕ вырма тухмасăр кăнтăрлаччен харлаттарса çывăрнă.
[3]) Кçенй—Тойкилдин матки. Ĕç вăхăтĕнчех пасара йартлатнă.
[4]) Тăттава—пĕрмай, вĕçĕмсĕр, йалан, тăтăш.

# Хăраман утаман

### Мих. Ҧамаҧ.

Хаҧ кăна йешĕрсе çурăлан
Йăм-кĕрен чечек пек акă ман;
Çенĕрен çĕнĕ тум варкăшат,
Çĕнĕрен çĕнĕ вăй акăнат...

Нихăçан никама парнас çук—
Хаҧ и пек вăйпала чĕррĕнех.
Кăкăрта вут-кăвар хĕрнĕ чух
Сӳнтереймĕ никам чĕрене.

Пайан еп çĕнтерӳ кĕреки—
Çĕнĕрен çĕнĕ вăй туптама.
Хаҧ кăна аттака кĕрекен—
Вăл вимрен хăрами утаман“...

17-6—33 ç. Çирĕклĕ.

# Укахви

## Курак.

(Калав*). очух)

I

— Колхозниксен ĕçкунĕ тăрăх уйăрмали ыраша вăрланăшăн, тата выльăхсене çитермелли фонда хăйсем хушшинех салатса лашасене выçă вĕлерневĕшĕн —„Çĕнĕ йĕрке“ йатлă колхоз председателĕ пулнă—Нараńăв Йакур Иванча, завхозне—Кичемейĕв Ваççил Йакăвлĕча, тырă виçсе тăракан—Кашкăрăв Гаврил Кирилăча, тата выльăхсене пăхса усракансен пуçлăхне—Илехменĕв Прохăр Липатăча, Уголовни кодĕксăн 63-мĕш тата 116 мĕш статйисемпе айăпласа, персе пăрахмала,—тесе вуларĕ Крайри судăн суд пригăвăрне.

Суд çурчĕ шăп. Çекретар аллинчи ручкине вырăнтан вырăна куçарса хуни те илтĕнет. Укахви чĕтресе кайрĕ. Икĕ начарланнă аллисем хăйсем тĕлĕнех чăмăртаннине хăй те сисмерĕ вăл.

—Çапла кирлĕ. Çапла кирлĕ кашкăрсене. Çавсем пирки иккен епĕ, пилĕк ачампа, выçă ларатăп, çийĕмĕр-пуçăмăр çĕтĕк,—терĕ те, сутра пулнă халăхпа пĕрлех тулала тухса кайрĕ.

Тулта март хĕвелĕ Укахвийе хирĕç пăхса йăл!... кулчĕ. Уççăн сывларĕ Укахви. Çут тĕнчерен писнĕскерĕн—пурăнасси килсе кайрĕ.

— Шуйтансем!—тет вăл килне кайнă чухне те, выçă хăварчĕç вĕт халăха...

* *
*

Укахви иртнĕ çулта çу хута поварихăра ĕçленĕ. Хĕрĕх сыншăн пĕçерсен—ăна пĕр ĕçкунĕ панă, хĕрĕхрен кайа пулсан—процент тăрăх. Тырă вырса кĕртес вăхăт çитиччен куллен 10—15 çынран ытла апат çитермен вăл. Çавăнпа та çу хута ĕçлесе те унăн 65 ĕçкунĕ анчах пухăннă. Кашни ĕçкунĕшĕн вăл 5 кило ыраш илнĕ. Пурĕ 325 кило. Çемйи—6 кашăк. Пурте пĕчĕк ачасем, ĕçлемесĕр çийекенсем анчах: вĕсем вилнĕ чухăн упăшкинчен йулнăскерсем. Çав 20 пăт ырашне авăртса вăл çемйине сичĕ уйăха çитернĕ; расхутне те çавăн çинченех илсе хупласа пынă. Ку февраль—çăнăх уйăхĕччĕнех пĕтсе çитет. „Нетрудоспособнăйсен“ фончĕ пулман. Çавăн пирки Укахви пĕтĕмпех аптраса, колхозăн çĕнĕ председателĕ патне пырать.



Хĕрлĕ лав—Шупашкарта.



Республĕкри колхозник ударниксен 2-мĕш сйесне Тутаркас районĕнчен пынă хĕрарăм делегаткăсем.

— Выçă вилетĕп вĕт, Иван Ванчă, ачасем те макăраççĕ. Чумаралăх пĕрер пăт çăнăх „авансăм“ параймăн и, тархасшăн,—йăланать Укахви.

Тăлăхсене тем пек шеллесен те председателĕ вĕсене пулăшу параймасть.

— Пĕр кило та çук, Укахви акка,—тет председателĕ.

— Апла манăн, ачамсемпе пурнас çинченех, вăйăм пур çинчех вилес-им?

— Ним те тăваймастăп.—Кивĕ правлени тырăсене салатса пĕтернĕ. Халĕ пирĕн вăрлах та çитеймест, фураж та сахал лашасене те выçă вĕлерсе пĕтерчĕç: сакăрвунă лашаран хĕрĕх икĕшĕ çеç йулчĕç. Çийĕнчех çитерсе турлетмесен—вĕсем те ĕçе йурăхлă пулас çук, тет председателĕ.

— Хĕрĕх икĕ лашапа икçĕр килĕлĕ колхозăн çĕрне йепле акмала?—тĕлĕнет Укахви.

— Ĕнесене кÿлес пулать, Укахви акка.

Укахви çак сăмахсене илтсен хĕремесленсех пуçăннăччĕ йатлаçма.—Хам ĕнеме хам аллăмпах парса сире вĕлерттермĕп ĕнтĕ,—тесе тулхăраччĕ вăл малтанах.

Кайарахпа çĕнĕ правлени тĕрĕсне, кам айăплине хăй куçĕпе хăй курса пĕлсен, хăй хăлхипе илтсен урăхла шухăшла пуçларĕ.

— Тыр-пулла вăхăтра акаймасан—тухăçĕ те тухмĕ, хамăр та выçă вилĕпĕр. Халĕ ачама ĕлемке йарсан та пыраççĕ. Колхозра тырă пулмасан—никама та ырлăхĕ тивĕç çук. Ĕнесене лашасен пайне çитерсен вĕсем ĕçлесе ыванмĕç, ĕçленĕ вăхăтра пире те çимелли парĕçĕ те—шухăшларĕ те, Укахви:

---

*) Ку калава Вăтам Атăл крайĕнчи колхоз пурнăçĕнчен илсе çырнă.

— Нимӗн тума та ҫук.. Килӗшес пулать санпа Иван Ванч. Халиччен ӗнепе ҫӗр сухаланине курма мар илтмен те-ха епӗ. Анчах та... Ӗнисем сухалама-сӳреме пултараҫҫӗ пулсан, килӗшмелех пулать санӑн сӑмахпа, тесе хучӗ вӑл пуҫне ҫӗреле усса.

Ҫаплах вӑл ыйтнӑ тыррине те илеймерӗ. Мӗншӗн тесен, кивӗ правлени сӑтӑрла ӗҫленипе, колхозӑн чӑнахах та халӗ авансла памали тырӑ ҫук. Ҫаксене пӗлсе тӑнипе Укахви каллех вӗҫӗмсӗр тарӑхса илет кивӗ правленире ӗҫленӗ Найанӑв ушкӑнне.

II

Ҫураки пӗтес вӑхӑтала ҫур хӗвелӗ хир ҫине пӑхса йалкӑшрӗ. Йӑвӑҫ-курӑк та ҫулҫисемпе сарӑлса йешӗре пуҫларӗ. Тӑрисем кӗмӗл шӑнкӑрав пек сассисемпе йурласа ҫӳлерен ҫӳле хӑпараҫҫӗ. Уй чечекӗсем сарӑлса, ырӑ кунсене пӑхса ҫеҫкисемпе лапӑсгатаҫҫӗ.

Ҫуркунне шӑтса тухнӑ чечексем пек „Ҫӗн йӗрке“ колхозниксем хирӗсене тухса ӗҫӗсемпе савӑнаҫҫӗ. Вӗсем, выльӑхӗсемпе пӗрле, ҫуракийӗн йулашки гектарӗсене сӳресе акаҫҫӗ. Виҫӗ ерне пӗр канми ӗҫленӗ пулин те, ывӑна та пӗлмеҫҫӗ.

Колхозниксен ӗретӗнче ҫуркуннехи хӗвел пек ҫутӑлса, ӗнисене выльатса Укахви сӳре сӳрет. Вӑл ҫӳрене тухни те виҫӗ ерне иртет. Ҫав виҫӗ ерне хушшинче вӑл пӗр кун та ӗҫрен йулмаст. Хӑшпӗр ирхине, ӗнисене кӳлнӗ вӑхӑтра унан кӳрши, Кули:

— Ывӑнмарӑн и ӗнтӗ, Укахви кума? Пайан манӑн кайас мари-и сӳрене? тет.

Кули сӳрене тухсан Укахви хӑйӗн ӗҫкунӗсем чакасран хӑрама пӑхать. Ывӑнсан та ӗҫлесех пулать.. Манӑн кам ӗҫлетӗр тата? Есӗ мӗнма пулесшӗн-ха мана? Санӑн упӑшку та, ывӑлу та ӗҫлет вӗт-ха?—ӳпкелешерех калать Укахви.

Тӑлӑх Укахви ӗҫшӗн, ӗҫкунӗшӗн тӑрӑшнине кура Кули хӗпӗртет.

— Сана пулесшӗн мар епӗ ку сӑмаха калатӑп, Укахви кума, тесе йӑпатать вӑл ӑна.—Манӑн мӑшӑрӑмпа ывӑлӑм ӗҫлени те ҫичӗ ҫынлӑ ҫемйене пурӑнмалӑх ҫитет. Епӗ сана йӑвӑр мар-и тесе анчах ку калаҫӑва тапратрӑм, тет вӑл Укахвине.

— Йӑвӑр мар, Кули кума, йӑвӑр мар. Мӗншӗнха йӑвӑр пултӑр? Ӗнем манӑн, апатне лаша хисепӗпех ҫинипе, ҫур витре сӗт параканскер, пӗр витре тултаракан пулчӗ. Хам пӑхса, йӗркелӗ сӳренипе—вӑл ывӑнмасть те: виҫ тӑват йӗрлӗ сӳреакине, сан ӗнупе пӗрле, иккӗшӗ пӗр куна пӗр гектар ним те мар сӳресе тухаҫҫӗ. Ҫавӑнпа епӗ ӗнемпе ӗҫлесех 3 ернере чылай ӗҫкунӗ илетӗп. Ҫу хутах ҫапла ӗҫлесен—епӗ ачасемпе текех выҫӑ лармӑп, тет вӑл хавасланса.

— Ӗҫле, ӗҫле, Укахви кума, сывӑ ӗҫле. Пурӑнӑҫ ӗҫе йуратать ҫав, тет те Кули Укахвийе куллен кун анкартисем хыҫне ҫитиччченех ӑсатса йарать.

Укахви пикенсех ӗҫлет. Ӑна кура халӑх та хавасланса ӗҫлет.

* * *

Ҫураки пӗтсен „Ҫӗн йӗрке“ колхозӗ йешӗл курӑк ҫине, правлени умне пуху пуҫтарать. Пуху пуҫлансан, ҫуракинче ӗҫленӗ колхозниксене, ҫуракине тӗплӗн туса вӑхӑтлӑ пӗтернӗшӗн, хӗрӳлӗ салам калать. Саламсем хыҫҫӑн ударникӗсене премипараҫҫӗ. Чи пысӑк, хаклӑ премийӗ—20 метр хӗрлӗ тавар.

— Кама тивӗши ку йапала?—тесе хӗпӗртеҫҫӗ ударниксем.

— Унччен та пулмасть—колхоз председателӗ сӑмах пуҫлать. Пурте хӑлхисене тӑратаҫҫӗ.

— Кивӗ правлени пирӗн колхоз пурӑнӑҫне масар чавса шӑтӑк умнех ҫитерсе тӑратнӑччӗ, тесе пуҫлать председателӗ.—Тата тепӗр—класлӑ тӑшман ӑнсӑртран пырса кӑшт тӗртнӗ пулсан—пирӗн ҫӗнӗрен ҫуралнӑ, ҫутӑ, малала ҫитӗнсе ҫитсе халӑха ӗмӗр курман савӑнӑҫ кӳрекен, социалисӑмла пурнӑҫа кӗмели колхоз ҫав масар шӑтӑкне ӳксе тӑпрапах хупланмалаччӗ. Кайарах пулин те епӗр, комуниссем, ҫав сӑтӑрлӑха курса, тӑшмансене халӑх суче умне тӑратса вӗсен йачесене, хайсемпе пӗрлех, пурнӑҫран хуратмала турӑмӑр. Анчах та... вӗсене пӗтернипех колхоз пурӑнӑҫӗ ура ҫине тӑраймарӗ, пирӗн вӗсем тустарнӑ пурлӑхсем кайала килмереҫ, вилнӗ лашасем те чӗрӗлмереҫ, тата ытти те. Вӗсене урӑх майран шыраса тупмала пултӑмӑр. Колхозниксене сӑмахпа та каласа нумай ӑнлантармала, вӗрентмеле пулчӗ. Вӑл пысӑк ӗҫри чи малтан ӑнкарса колхоза ура ҫине тӑратасшӑн пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлекенсенчен пӗри—Укахви пулчӗ. Укахви хӑйӗн ҫиме ҫук пулин те, хӗрарӑмсене пухӑва пуҫтарчӗ те, вӗсене ӑнлантарса парса ӗнесемпе сӳремели ӗҫе йышӑнчӗҫ. Ӗнисемпе ҫуракийӗн виҫҫӗмӗш пайне ӗҫлесе—пилӗк ернелӗх ӗҫе виҫӗ ернере пӗтерчӗҫ. Ҫавӑнпа вӑл чи малта тӑракан, куҫ умӗнчи пысӑк ӗҫ пулса тӑчӗ. Ку ӗҫе Укахви пуҫласа йарса Укахвийех йӗркелӗ турӗ. Вӑл пирвайхи ударницӑ пулчӗ. Ҫавӑнпа ӑна, Укахвийе, премий паракан комиҫҫи ырласа, мухтаса чи пысӑк, чи хаклӑ парне пама йышӑнтӗ. Укахвие чи пысӑк, чи хаклӑ премий паратпӑр: вӑл—акӑ. Ме, тыт, Укахви,—тесе 20 метр хӗрлӗ тавар парать Укахвийе председателӗ.

Укахви, хӗпӗртенипе, ним кала та пӗлеймест. Пур сӑмахӗ те—спаҫҫибӑ, тесси ҫеҫ..., анчах ку сӑмах та ӑшӗнчен тухаймасть.

— Ку та анчах мар-ха, Укахви ҫемйи выҫӑпа аптранине кура, ҫӗнӗ тырӑ ӗлкӗриччен, ӑна тунӑ ӗҫкунӗсемшӗн ҫемйине пурӑнмалӑх аванс шучӗпе парса тӑмала турӑмӑр, тет.

Колхозниксем: „урра“ кӑшкӑраҫҫӗ, алӑ ҫупаҫҫӗ. Комиҫҫи малала ӗҫлет. Ытти ударниксене парнелет. Укахви хӗпӗртет.

— Халӗ ӗнтӗ мана, ачасемпе, ҫиме ҫӑкӑр та пур, тумланмалӑх тавар та пур. Мухтав—тӗрӗс ӗҫлекен правленийе! Ҫӗнӗ пурнӑҫа ҫавӑтса кӗрекен колхозӑмӑр сывӑ пултӑр, унӑн пурнӑҫӗ ҫирӗплентӗр. Ӑна ҫирӗплетессишӗн тата пикенерех ӗҫлӗп епӗ. Ытти хӗрарӑмсене те хам пекех ӗҫлеме чӗнетӗп, терӗ вӑл.

Ҫурхи хӗвел хӑпарнӑҫем хӑпарать. „Ҫӗнӗ ирӗк“ колхоз пурнӑҫӗ те ҫулган ҫул ӗнтӗ ӳснӗҫемӗн ӳсет. Колхозниксем колхоза йуратаҫҫӗ. Колхоз членӗсем пурте Укахви пек ӗҫлеме тӑрӑшаҫҫӗ.

# Йăран

## Петилеткăн виççĕмĕш,

*3-мĕш йурă.*

**Н. Шупуççынни.**

Совет çĕршывĕн мĕн çитмест,
Мĕнрен малта хăш-хăш патшалăх?
Мĕншĕн авалхи йĕр çĕтмест?
Мĕншĕн хуллен куçат хуçалăх?

Совет влаçĕ политĕкрен
Мĕн пур патшалăх урлă пусрĕ,
Анчах пит йапăх технĕкрен—
Шуйтан пек йулнăçке индустри.

Йалти тырпул,—вĕтшак хуçалăх,
Пусмассерен чăсмак йăран,
Ăçта унпа тытан каçалăк?
Ăçтан харам пыра пăван?

Пролетарнатăн диктатурĕ
Кайра пырасшăн тытăнман:
Йурлатăр сават, ăнтăр тырă,
Тĕрпĕр салантăр йут тăшман.

Кайран мала иртме тухсан
Индустри ĕçĕ хăвăрт кайтăр!
Тĕпкомра Сталин ал сулсан—
Мĕнпур Сойузĕ пултăр хатĕр!

Ак хурçă Сталин вирлĕ хыврĕ
Хуçалăх планĕн никĕсне,
Политбюро тишкерсе тухрĕ,
Ырларĕ планăн çулйĕрне.

Анчах Бухарин, Томски, Рыкăв
Таракантан тăваççĕ звер:
„Ăнсăрт тăкакçке! Тем ан тухтăр,
Йепле кулаксăр çĕр ĕçлер?“

Ей, сылтăм сулăнчăк, сулахай,
Çапатăр пушă парапан,
Чупатăр хăвăр пĕрехмай
Оппортунислă сукмакпа.

Ак петилеткă тухрĕ вăйлă—
Мĕнпур ĕççынĕ пит хавас:—
— „Тăваттăра тухмашкăн кирлĕ,—
Ку пурнăç“—терĕ ĕçлĕ клас...

Ăçта пăхан, ăçта пулан—
Йăлтах куç виттĕр курнă Сталин.
Мĕнле çтихийшăн пултăр план,
Анчах ăна та кӳлнĕ халĕ.

Чуралла мăшкăллă ĕçе
Халь чаплă йат та шеп хисеп,
Халчен курман-илтмен виçе
Ăмăртура ĕçе хисет.

Социалисăмлă ăмăрту
Тултарчĕ вăй,—çĕклерĕ ту,
Машшин туптарĕ Донбаса,
Кĕрнеклĕх кĕчĕ Кузбаса.

Ĕçри герой ăсталăх урлă
Ĕçе ăнтарчĕ тем таран,—
Совет çĕршывĕн тĕпсĕр пурлăх
Тухат хисепсĕр шахтăран.

Трупалă нехтăллă фонтан
Вуншар пин тонлă тан тапат,
Йухат Батума Бакуран—
Буржуйсен вăчĕ лапчăнат.

Ударниксем пиншер пиншерĕн
Пĕр чарăнмасăр çапрĕç свай,
Бетонпа Днепăра пĕверĕç—
Хĕвел пек тухрĕ Днепрострой.

Мускав васкат мала хастарлă,
Çӳлтен çӳле çĕклесшĕн темп,
Мĕнпур Сойуз ĕçлет ударлă,
Кун пек хавас курман етем.

Унта ак трактăр, кунта комбайăн
Кунта та сават—комбинат.
Мĕмпур буржуй пăхат куçайĕн,
—„Ăçтан тухат, тет, ку хăват?“.

Ак кĕç! Виç çул та çитеймест,
Хунатрĕ пилĕкçĕр вунсаккăр,
Пĕр пин те хĕрĕх ЕМТес
Ĕрĕхтереççĕ çĕрпин трактăр.

Çерем çĕрне ават совхоз,
Иалсемсерен ӳсет колхоз,—
Ак, тăпăлат сăхă йăран
Çĕлен пек выртнă вырăнтан.

Прахăçланчĕ йут фордзон,
„Интернă“ иртрĕ малала.
Уйхирте хĕрĕх пин колон
Ака тăват ăмăртмала.

Кулак—пăчланнă выç çăхан—
Тăкат йунавлă шăп ылхан,
Çапах çын урлă колхоза
Чикесшĕн тилĕлле сăмса.

Сиси-сисмен пăшăл пăттн
Тек пĕçерет тăшман тути:
Ĕçре сарасшăн тавлашу,
Хакра сĕнесшĕн танлашу.

„Колхоз каснан, Советăн пурлăх,
Вĕçи-хĕрисĕр! Ват, салат!
Валеçĕр пыр тăрăх тĕш тырă,
Колхоз пĕтес пек-пур халап“.

Хайар кулакшăн пирĕн парти:
—„Ан ашкăн! Санăн иртрĕ кун,
Колхозăн хăйшĕн хаклă хатĕр,
Ăна куç пек сыхлат саккун“.

Алла тытаť те тимĕр шăпăр
Шăлаť çÿппеле колхозран,
Çапах сисеччен йăпăр-йăпăр
Сахал мар сăтăр кулакран.

Советпа парти, комсомул
Колхозшăн уçрĕ аслă çул:
Хунатрĕ вăл ăратлă выльăх,
Ĕçленĕ тăрăх хушрĕ пурлăх.

Колхоз сараť тĕпрен тымар,
Çеçки-çеçки кăвак чечек,
Кулак вырттаť вилме сывмар,
Кăкланчĕ класĕ çумçам пек.

— Ÿсет колхозăн çимĕç шухă,
Тырри-пулли пура тулли—
Машшин кÿме тултарĕ тупăш,
Ĕçре йантраť хавас кулли.

Машшинпала пур ĕç калкал,
Пĕрлешнĕ ĕç параť йерçÿ, —
Йалтан хула тытаççĕ ал,
Сыхланнă вăйăн ăнăçу.

Кăмрăк та тимĕр хаклă чул
Советшăн нехтă пулчĕ йун.
Йутран килен çĕнрен машшин
Тытса утланчĕ хамăр çын.

Мĕнпур пăспала паравус
Тапратрĕ йачĕ хур;ă хул:
Социалисăмлă Сойуз
Комун патнеле тытрĕ çул.

5.12—33 ç.

Мускав, Герцен у. 57 кв. 15.

# Мухтав йурри

**Ахтупай Валентин.**

Йунпа пиçнĕ,
Хĕнпе илнĕ
пурнăçа
Епĕр мар-и
Ăна тивĕç
мухтама?—
Хĕмлĕ-вутлă
Револьуци—
тăвăла
Çĕнĕ сăвăç
Çĕнĕ сăвă
сăвăлаť.
Çĕнĕ сăвă—
Ĕçлĕ çемĕ
шăратаť,
Ĕçлĕ çемĕ—
Вăл çĕклет мĕн
вăйхала.—
Ĕçре ÿснĕ
Вут хĕрÿлĕ
çемĕрен
Вĕçрĕ чăнлăх,—
Тĕрĕс сăнлăх
тĕнчере.
Ирĕкленнĕ
Пĕрлешÿлĕ
уйхирте,
Пин бригадă,
Ĕçре савăн,
хĕпĕрте!"

Пин бригадă
Ĕçе тухрĕ
пĕр кавар,
Ĕçре чĕртрĕ
Ĕçре чĕртрĕ
шĕл кăвар.
Хапрăк-савăт
Пирĕн—
тивĕçлĕ тĕрек.
Сывлăр савăк,
Ĕçлĕр вăйлă
вут чĕрен!
Çĕрĕн-пинĕн
Хапрăк -савăт
кĕр! кĕрлет,
Пăчăхайнă
Мул тĕнчийĕ
чĕтĕрет.
Тăшман йышĕ
Курăнсассăн
хуп хуран—
Ăна хирĕç
пултăр
шанчăклă хурал!
Хурçă йурă
Кисрентерчĕ
пуç çинче,
Вĕçен кайăкăн
Тĕрленчĕ
çут инçет,
Йунпа пиçнĕ,
Хĕнпе илнĕ
мухтава
Епĕр мар-и
Ăна тивĕç
мухтама?
Хурлăх урлă
Епĕр тухнă
çĕнтерме;
Пĕрге сывлăпăр—
Кисренĕ
кив тĕнче.

# Кăмăл тĕрĕспевĕ

Чÿрече умĕнчи лăстăр ват йĕлме
Тексĕмлерĕ ирхи кăмăлăма.
Умри ĕмĕте тĕрĕсреххĕн пĕлме
Пурнăç пульсĕ çине хутăм аллăма.
Пурнăç пульсĕ вĕри пурнăç йунĕ çăра.
Ахалех-мĕн ăшра сĕмсĕр нишлĕх шĕвет.
Умăмра ÿсекен вут вĕрен стройккăра
Çĕнĕ кун тивĕçне—çĕн етемлĕх ÿсет.
Çĕн етемлĕх ÿсет, ÿсет çĕн тĕнче—
Уй хирте, шахтăра, савăтра...
Ахăр вăйăм вĕрет çĕн тĕнче йышĕнче
Кунсерен савăкран савăкрах.
Çивчĕ, хĕмлĕ чĕлхе тăвăл-йурă сапаť,
Вĕтет çивчĕ чĕлхе нишĕхен кăмăра.
Ĕнер револьуци пуçларĕ ман клас,
Пайан револьуци йусаť хамăра.
Авăкри йăвăрта чĕтресен халь чĕрем—
Ачашлап, пахалап йăлтăрка ĕмĕте.
Çирĕплеп ĕмĕте—çирĕплеп чĕлпĕре
Хĕмленен вăйăмри вут-кăвар хĕмĕпе.

# Ӆава—хĕрлĕ салтак.

**Петĕр Хветуккĕ.**

I.

Хĕллехи сивĕ сывлăша уççăн çурса паттăр йурă йан-йанраса кайат:

„... Пирĕн куç вичкĕн витĕр курат,
Хăравçă тăшман шалт тарат...“

Ку йурра иртсе пыракан хĕрлĕ салтаксен роти шăрататă. Кĕлисене тимĕр çапнă атăсем шурă йур çинче—шăтăрт, шăтăрт-шăтăрт! тугарса харăссăн утса пыраççĕ.

— Раз! два! три!..

— Рота, стой!.—йанраса кайрĕ сасă.

Кăшкăракан командирĕ çўлĕ çын мар. Вăл сарлака кăкăрлă, вăтам пўлĕ çын. Ун çинче кăвак вăрăм шинел питĕ килĕшўлĕн тăрат. Командирĕн пичĕсĕм хĕп-хĕрлĕ çунса тăраççĕ. Шӆом сăмси çинче шап шурă пас тытса ларнă. Хĕрлĕ çăлтăрĕ йăлтăртатса, сар тĕсĕ кайнă вырăнĕсем çуталса тăраççĕ. Савăнат вăл хăйĕн ротипе. Пĕр Ӆава çеç пăсат унăн кăмăлне. Вăл нихçан та ытти хĕрлĕ салтаксемпе тан пымаст. Йе кайа йулат, йе ура уттисене улăштарат.

— Йулташ Кузмин, командă панине итле! Командă панă хыççăн ан сиккелен, тўрĕ тăр. Тух кăшт малала. Ăнлантăн-и? Акă час командă паратăп, йĕркене ан пăс. Калана, сана, ан сиккелен, тесе. Тăр лайăх.

Ӆава нимĕн те шавламаст. Вăл куçĕсене командир çинчен иле пĕлмест. Вăл ун çинчи тăваткăл хĕрлĕ паллăсене пăхса ытараймаст. Хăй те çыпăçтарăччĕ, анчах..

Ӆава йăлтан килни тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ. Килĕнче ун ашшĕсем пур. Колхоза Ӆавсем тахçанах кĕнĕ. Ӆава нумайччен шухăшлат. Хăй çине тарăхсах хытă шухăшлана чух унăн тутисем мăкăӆт, мăкăӆт! сиксе тăраççĕ. Хăш чух вăл йĕме патнех çитет. Хăвăхаймаст-ха вăл Хĕрлĕ çарти пурнăçа.

Командир каланă чух, хăш вăхăтра вăл нимĕн те илтмест. Унăн пĕр шухăш. Пăшал пеме кайсан та вăл пуринчен начар перет. Пăшал пайĕсене те пĕлмест. Час ак пулемет çинчен вĕрентме тытăнаç çĕ. Ун чух мĕнле?

Командир ротăна уттарма тытăнат. Командир ротăна çаврăнтарат. Çук нимĕн те тума çук Ӆавапа. Вăл, сылтăма каласан—сулахайа çаврăнат, сулахайа каласан—сылтăма çаврăнат. Уттарнă чух йе йулташĕсен урисем çине пусат, йе командă панине илтеймест те.

Ăмăрту догăвăрĕсене йышăнат, пурнăçа кĕртесси çинчен асăнмаст те. Пухусенче каласан, те хурлават, те савăнат,—нимĕн те чĕнмест. Нимĕн те пĕлме çук. Мĕншĕн пурăнат Ӆава—йулташĕсем те ăнланмаççĕ.

— Куçмин, мĕне есĕ капла йуратăн? Стройра çўреме пĕлместĕн. Голитшкулта сывăрса ларатăн. Иала кайсан колхоза мĕнле пулăшăн?

Командира хирĕç нимĕн те чĕнмест. Те ăна апла калани аван: кăшт хĕрелет, савăннă пек пулса кулат.

Хĕрлĕ салтаксем пурте столовăйа апат çиме кайаççĕ. Ӆава кайа йулат. Йе пиçиххине çыхаймаст, йе пăшалне çынпа пĕрле тасатаймаст (вăл нихçан та пăшалне çынпа пĕрле тасатман). Татах Ӆавана командир кăшкăрат:

— Хăвăрт çаврăнкалама кирлĕ. Кунта хаӆ, вĕренне чух—вĕренмеле. Вăрçă пулсан, санпа мĕнле тăшмана çĕнтермеле?

Шухăша кайат Ӆава. Намăс ăна йулташĕсем умĕнче. Начар çынна—йулташĕсемпе ĕлкĕрсе пымасан.

— Санран çын тăвăпăр. Тăрăш есĕ. Ĕçе вĕренмен, ăса кĕмен çын çук вăл хĕрлĕ çарта. Ху пĕлменнисене йулташусенчен ыйт, вĕсемпе пĕрле ĕçле,—тет командир.

* * *

— Ну, мĕнле пурăнатăн Куçмин? Ĕçсем мĕнле пыраççĕ? Ăнланатни, пулăшаççĕ-и йулташусем?

— Начар.. Епĕ вĕренме пултараймастăп. Пуçа нимĕн те кĕмест. Пулмаст манран путлĕ хĕрлĕ салтак. Йăвăр пурте, ăнланма çук.

— Апла мар. Санран питĕ лайăх хĕрлĕ салтак пулат. Есĕ тăрăшмастăн кăна. Есĕ вĕренме те пултаратăн. Пăрахас пулат кутăнланма.

Ӆавана командир каланă сăмахсем уçсах йачĕç. Командир майпа каласах Ӆавана вăтантарат. Чăнах та ĕçе тытăнмала капла, йулташсем хыççăн сĕтĕрĕнсе, ĕç тухмаст. Ӆавана хĕнемеççĕ, мăшкăлламаççĕ, сăмахпа çеç аван каласа шухăшлаттараççĕ.

— Санăн ĕçе тытăнмала. Санăн хăвна ху йапăха йамала мар. Йулташусене ĕлкĕрсе пымала, хăвна ху хытă тытмала.

— Командира хирĕç Ӆава нимĕн калама та аптăрарĕ. Темĕн каласа, темĕнле йурамала. Командир татах Ӆавана хистет:

— Санăн хăвна ху шеллемеле мар. Ĕçпе ĕçлĕхрен тухăп тесе ан шутла. Йулташусемпе ăмăртусем ту, ăмăртусене тултарма, вĕсене пурнăçа кĕртме тăрăш. Хăв пултараймасан йулташусемпе ĕçле. Ан ўркен ĕçре.

Командир, сăмахĕсене каласа пĕтерчĕ те, Ӆава патĕнчен пăрăнса коридорпа утрĕ. Ӆава тарласах кайрĕ: „Тин хăтăлтăм иккен, урăх манпа каласмĕ ĕнтĕ“,—тесе шухăшласа илчĕ вăл. Çавăнтах, ўкекене—тўпеле тенĕ пек, ун патне комсомолĕç Тришкин пырса тăчĕ.

— Кузмин, тавай иккĕн ăмăрту тăватпăр. Çак виç кун хушшинче винтовка йăлтах вĕренсе çитмеле. Вара пулемет çине куçăпăр. Ăна та халех çырса хурар.

— Апла, сана питĕ аван ăмăртăва чĕнме, есĕ пурне те пĕлетĕн те...

— Санăн та пĕлмеле, çавăнпа ăмăрту тăватпăр та. Пĕлмесен пулăшăпăр.

— Йурат, ата çыр.

* * *

Ӆава тăрăшсах, хăйне ирĕксĕрлетсех винтовкăна вĕренет. Кĕçĕр уншăн темле çав тери ырă каç пек туйăнат. Винтовкăна салатса хунă. Хăрах куçне хĕснĕ те винтовкă кĕпçи витĕр пăхат. Ун патне Тришкин пырат те—ствол мĕншĕн винтăлине

ыйтать. Лӡава ăна та каласа параймасть. Пухма хуш рĕ те, пухаймасть.

— Ак çакна лайăх пăх. Ак çакна ку вырăна лартмала, асту ан ман. Ыран тытăнса вĕренсен, йăлтах вĕренетпĕр, унтан пулемета тытăнăпăр. Пĕр пилĕк-улта кун вĕренсен, пулемет та нимĕн те мар. Ĕçе тытăна си çеç вĕт,—тет комсомолĕс Тришкин.

Лӡава винтовкăна лайăх вĕренсе çитрĕ. Винтовкăна вĕреннĕ хыççăн ăна çăмăллăн, ыррăн туйăнса кайрĕ. Шухăшсем пулемет çине куçрĕç. Лайăх пулать, ăна та вĕренсен,—тет вăл.

Лӡава вĕренсе кабинетран тухма кăна хатĕрленĕччĕ, ун патне пĕр вăтам çуллă пĕчĕкрĕх çын пырса та тăчĕ. Унăн хушамачĕ Тимин. Вăл Хĕрлĕ çарта нумайранпа ĕçлет. Тимин Лӡавасен ротинчи парторг.

— Ну, Куçмин, мĕнле санăн ĕçсем пыраççĕ? Вĕренӳ мĕнле пырать? Ăмарту догăварĕ пурнăçа кĕрет-и? Тăрăшан пулмала есĕ хаӡ. Тахçанах çапла кирлĕ.

— Хаӡ майа кĕме пуçларăм,—тет кăшт питне пĕркелесе Куçмин.

— Ну, каласа пар-ха, мĕнле пурăнаççĕ сирĕн килте. Çыру çыраççĕ-и? Колхозра кам йертсе пырать. Кулаксем кĕрсе тулман-и?

— Колхозра тырă нумай. Кăçал пĕлтерхинчен тырă нумай уйăрнă.

— Есĕ килне çыру çырса йар. Мĕнле çуракине хатĕрленеççĕ? Вăрлăх çитет-и? Çавсене санăн пурне те пĕлес пулать.

— Вăл тĕлĕшпе пирĕн колхозра ĕç аван пырать.

— Çапах та çыр. Сирĕн çемйесем мĕнле ĕçлеççĕ? Колхозниксем мĕнле пурăнаççĕ, тĕплĕн пĕлмеле санăн,—терĕ йулашкинчен Тимин—парторг.

Лӡава вĕренме тăрăшать.. Тришкин ăна куллен пулăшса пырать. Тимин—парторг та хистесех тăрать. Лӡава пулемета та вĕренсе çитрĕ. Анчах политикпа нимĕн те пĕлмест.

* * *

Çĕрле. Шăп. Тулти електрицă хунар çутисем чӳречерен кĕрсе касăрма ăшĕнче мĕлке ӳкереççĕ. Хĕрлĕ салтаксем пурте çывăраççĕ; вĕсенчен хăшĕ—пĕри тепле ăйхă тĕлĕшĕпе йăнăшса илни, йе хăшĕ-пĕри пыр тĕпĕпе хăрăлтаттарса çывăрни çеç илтĕнет. Тăрсан тăрсан çил шăхăрса, шурă йура вĕçтерсе чӳречесене шăкăртаттарса илет.

Лӡава дежурнăй. Вăл коридорти сĕтел умне ларнă та, куçĕсене хуплакаласа анаслакалать. Нумай та лараймарĕ: сĕтел çине тайăнчĕ, пуçне сĕтел çине хурса сĕлекине йухтарсах харăлтаттарма тытăнчĕ. Тăсать ăйха, ирĕк Лӡавана. Çак вăхăтрах аллинчи пăшалĕ вĕçерĕнсе, йерипен çтена çинелле ӳпенсе тăчĕ.

— Ра а-а-з-з-з! Кам дежурнăй?—йанраса кайрĕ сасă.

Лӡава пуçне çĕклерĕ те, пăшалне тытма тытăнса айакала сулăнса кайрĕ. Вăл пăшалĕ аллинче пулманнине тинех сисрĕ. Çаврăнса пăхрĕ Лӡава. Ун умĕнче полк дежурнăйĕ тăрать.

Сăмах пĕтрĕ. Лӡаван нимĕн каласа та тĕрĕсе тухма çук. Сисет вăл хăй айăплине. Ăйхи йăлтах таçта кайса кĕчĕ. Ӳт тирĕ тăрăх темле сивĕ йун сăркăлтатса кайрĕ.

Ирхине, Лӡава дежурнире тăнă чух çывăрнине полкăра пурте пĕлеççĕ. Намăс Лӡавана. Полкă командирĕ Лӡавана арĕс парса, ăна пĕр суткана гаупвахта хупса лартрĕç. Гаупвахта ăна хăй йулташĕсемех илсе кайрĕç. Вăл йулташĕсенчен вăтанса çĕреле пăхса иртсе кайрĕ.

Ĕç начар. Капла йурамасть. Шухăша кайать Лӡава. Çынпа тан пуласчĕ. Çтена хаçат çине те ун çинчен çырнă. Тата, çитменнине, мăшкăласа карттин туса хунă. Лӡава сĕтел çинчĕ сĕлекине йухтарса çывăрать.

Йалтан ун хăлхине пĕр сăмах кĕрет:

— Есĕ пире кансĕрлетĕн. Вĕренсе ĕлкĕрсе пымас тăн. Сан пирки пире лайăх мар,—теççĕ ăна йулташĕсем.

— Çук, капла йурамасть. Тӳсме çук кăна малала. Тăрăшатăп. Мĕнтен кайа вара епĕ хам йулташ сенчен? Чăнах та пире парти çывăрма хушмасть,—терĕ те Лӡава, çтена хаçачĕ çине хăй малала тăрăшса, ĕлкĕрсе пыма сăмах парса, çырма ларчĕ.

Çтена хаçачĕ çинче пысăк статйа. Лӡава çырнă статйа. Вăл статйара Лӡава хăйне хăй тӳрлетме пулса хĕрӳлĕ сăмах парать.

* * *

...„Сывă-и, мĕнле пурăнан, ачам? Епĕр сан çыруна илтĕмĕр. Тĕлĕнсех кайрăмăр: мĕнле-ха есĕ те колхоз çинчен шухăшлатăн? Сирĕн пĕр вĕренмели çеç вĕт. Тата малала хамăр ĕçсем çинчен çырса пĕлтерем. Колхозра ĕçсем аванах мар. Лашасем вăйран кайрĕç. Выӡăх апачĕ çук, вăхăтра астумасăр салатса пĕтерчĕç. Лашасене астăвакан Кирук, лашасене панă сĕлле вăрлать, теççĕ. Вăл лашасене пăхакансен асли пулса тăрать. Машинсем хатĕр мар, тӳрлетме тытăнман-ха. Вăрлăха кĕлете пухса хунă та, çивитти начар пирки нӳрелсе хĕрсе кайнă теççĕ.. Халĕ колхоз председателĕ лама Караçĕ. Вăл колхоза кĕрес умĕн лашине те сутнăччĕ. Халĕ ăна партийе кĕнĕ теççĕ. Ĕçкунĕпе тырă нумай илеймерĕмĕр. Пирĕн çемйе 483 ĕçкунĕ ĕçлесе тунăччĕ, уншăн 43 пăт ыраш, 3 пăт вир, тата 6 пăт пăрса çеç пачĕç. Хăшĕсем, колхозра йĕркелĕ ĕçлеменнисем те, 80—90 пăтшар илчĕç. Караç хăйĕн хĕрĕснашшĕне ĕçлемесĕрех 153 ĕçкунĕ панă,—теççĕ. Хĕреснашшĕ пĕр кун та ĕçлемен, пурте пĕлеççĕ—йалан сутуилӳ туса çеç çӳрерĕ. Çитменлĕхсем çинчен каласма çук, пурне те хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Хăйсем май ерех ĕçтерсе çавăраççĕ. Тĕрĕслеме килсен те вĕсенех ĕненеççĕ.

Кĕтерне качча кайать пулĕ. Хăтасем нумай çӳреççĕ. Куччĕнеçлĕх 25 тенкĕ укçа йаратăп. Сывă пул.

Санăн аçу—Таппуç.“

Лӡава, çыруне вуласа тухсан, шалт тĕлĕнсе кайрĕ. Мĕнле-ха çав ĕлĕк суту-илӳç пулнă, лавкаçă пулнă çын ывăлнĕ—Караçа председателе суйланă? Тата партийе кĕнĕ пулать,—шухăшлать Лӡава. Ак çавăнтах ăна парторг хăйсен колхозĕ çинчен ыйтса пĕлни асне килсе кайрĕ. Тин вăл мĕн иккене шухăшласа илчĕ. Çыруне кĕсйине тĕркесе чикрĕ те уттарчĕ. Çул çинче вăл тата Сталин йулташ колхоз ударникĕсен сйесĕнче кулаксем çинчен каланă сăмахсене аса илчĕ. Чăнах та кулаксем тĕсне-питне улăштараççĕ иккен.

— Ну, мĕнле пурăнатăн? Вĕренӳсем мĕнле пы-

раççĕ? Йулташсене ĕлкĕрсе пыратăн-и?—тĕпчет парторг.

— Лайăх мар. Акă халĕ килтен çыру илтĕм. Колхоз председателĕ—лавкаç ачи... вăрлăх та çĕрет тесе пĕлтереççĕ,—терĕ те Лђава, çыруне Тимина кĕсйинчен кăларса пачĕ.

Тимин çыруне вуласа тухрĕ те:—Каларăм сана колхозра мĕнле ĕçлеççĕ тесе, халђ пĕлтĕмĕр ĕнтĕ сирĕн колхозра мĕнле ĕçленине. Есĕ пирĕн колхозра аван тетĕн. Сталин йул. кулаксем халђ усçăн кĕрешменнине лайăх каласа хăварчĕ. Кулаксем тĕсне питне улăштараççĕ. Тен Кирук та кулаксенчен тĕр-ха.

— Кируксен çил арманĕ пурччĕ, урăх пурлăх пулман ĕнтĕ.

— Кулак, кулак, конечно, Кирук. Çил арман хуçи пулнă пулсан чухăн пулман ĕнтĕ

— Весем патĕнче йалан Пликан ĕçлеччĕ çав.

— Итле, ак мĕн тумала халех пирĕн. Çакăч çинчен халех сирĕн районри хаçата çырас, тата прокурор патне. Вăл йĕркесĕрлĕхе пĕтермеле. Колхоза тўрлетмеле, кулаксенчен тасатмала..

Лђавана Тимин районри „Ленин çулĕпе“ хаçа редакцине, тата прокурор патне çырчĕç. т

II

Çĕнĕ хыпар нимĕн те илтĕнмест. Çаплах, ĕлĕк хипех пурăнаççĕ-ха „Прогресс“ колхозра. Ĕçлеççĕ, хăшĕ-пĕрисем ывăлĕсене авлантараççĕ, хăшĕсем хĕрĕсене качча параççĕ. Теприсем тата мĕн те пулса ĕç тăваççĕ. Йал тени йалах ĕнтĕ, ахаљ тăракан пĕри те çук.

Йур тин çеç çуса чарăннă. Çанталăк ăшă. Ачасем кĕпĕрленсе чупса çўреççĕ. Тин çунă йура йĕр туса, йал вĕçĕнчен лашине хытă чуптарса районтан пушă йалсовет умне пырса чарăнчĕ. Пайанхипе виççĕмĕш кун ĕнтĕ пуштă çукчĕ. Хаçатсем нумай килнĕ.

— Ку тĕрĕс мар. Кăна çыраканĕ кураймасăр çырнă. Ăçтан кулак ачи пулмалла Караç? Ашшĕ тахçанах вилнĕ. Вăл унтанпа пурне те хăй вăйĕпе тунă,—терĕ йалсовет председателĕ Таймаков хаçат вулакан комсомолĕс Çитăр çине пăхса.

Йалсоветĕнче халăх тăп-тулли. Кăвак тĕтĕм урайĕнчен пуçласа маччана çитиччех çумăр пĕлĕчĕ пек йавăнса çўрет. Йал советне пынă çынсем хăшĕ шăл витĕр сурса лараççĕ. Председател сăмахĕ хыççăн, кулма та чарăнчĕç. Унччен,— “аванах лекнĕ-ха Караçа“,—тесе кăшт шăла йĕрсе ларатчĕç.

— Ăна сирĕн пек манкасем çыраççĕ. Пĕлместĕр çын мĕнле ĕçленине,—шаплаттарса хучĕ председател.

Таймакова йалсоветĕнче никам та хирĕç чĕнмен. Пĕр Çитăр çеç хирĕç калаçса тўрре тухаймаст. Парти йачейки çук. Йалта пурĕ те виç кăндидат çеç. Комсомол йачейкин çыруçи—Караç арăмĕн шăлнĕ—Ваççа.

Йалсовет председателĕ—Таймаков ку йал çынни мар. Вăл ĕнтĕ çулталăка йахăн ĕçлет Китимĕр йалĕнче.

Каç пулат. Лаша пăхакансем шыв турттараççĕ.

* * *

Сĕтеле çапа-çапа комсомол йачейкинче нумайччен тавлашрĕç. Çитăр нимĕнпе те килĕшмест Ваççа сăмахĕпе:

— Каланă сире—Караç кулак тесе, урăх нимĕн те çук. Колхозра мĕнле те пулсан усăлă ĕç турĕ-и? Çук. Колхозра 13 гектар хуратул хире йулчĕ-и? Йулчĕ. Лашасем çимели улăма ăçта кирлĕ унта салатрĕ-и? Салатрĕ. Кĕлетре вăрлăх çĕрет-и? Çĕрет. Кам астумала ăна? Вăл. Кĕлет çийĕ нимĕне те йурамаст, вăл ăна тўрлеттермерĕ. Вăл колхоза салатасшăн. Хаçат çине çырни тĕрĕс. Ăна хирĕçлеме çук. Вăл заметка прокурора памала.

— Вăл йал çынни, хăвăр пĕлетĕр. Йал çыннине усал тума аванах мар. Хăçан та пулсан кирлĕ пулĕ вăл пире Хăт мĕн калăр та—вăл партийцă. Çавăнпа ку заметкă тĕрĕс мар тесе йышăнас. Епĕ çавăншăн, терĕ Ваççа,

— Мĕншĕн вăл хăйĕн хреснашшĕнне ун чухлĕ ĕçкунĕ çырнă? Хреснашшĕ пĕр кун та ыррăн ĕçлемен. Тырă нумай илчĕ. Тĕрĕс кăгартнă хаçатра,—пĕччеченех хĕрсе тавлашат Çитăр.

Нумай тавлашрĕç комсомолĕцсем. Çук, Ваççа йыснĕш майлах. Йыснăшĕ çинчен хирĕçле каланине проткол çине те çырмарĕ.

Çитăр килне пĕччененех таврăнат. Такам, урам пĕр айаккипе хытă чупса кайрĕ. Инçе те мар, Караç пўртĕнче хытă кăшкăрса калаçаççĕ. Çитăр Караç пўрчĕ умне пырса тăчĕ те, калаçакан çынсен сăмахĕсене итле пуçларĕ. Хытă кăшкăрăт Таймаков:

— Кам апла хăйса сан çине тăма пуçланă? Пăчăртас ăна пырши тухиччен. Мĕнле вĕсем йал пуçлăхĕнчен иртме пултараççĕ? Камра Совет влаçĕ? Манра!—кăкăрне хыттăн çапсах вăрçат Таймаков.

Унтах çинçе сасă йанраса кайрĕ. Ку Ваççа, собранире пулнă ĕçсене каласа парат. Хăй мăйне тăснă, аллинче ерех черки.

— Илтетĕн и Павăл Иванчă? Каларăм вĕт, çав Çитăр тăват тесе. Урăх çын кам пултăр. Тĕрĕссипе каласан, колхозĕ мура кайакан йапала çеç. Сан шутпа мĕнле, тĕрĕс пырап вĕт? Сан сăмаххусен чен тухмастăп,—сĕгĕрет сăмахне Караç.

— Тĕрĕс-с-с,—пўрнисемпе сĕтеле шаккаса ерех кĕленчи çине пăхса ларат Таймаков.

— Куратăр-и, унта та вăл мĕн калаçат. Халăх хушшине сăмах сарат. Миçе хут çырчĕ ĕнтĕ вăл района та,—сĕлекине йухтарат Караç.

— Латнă, епĕр хăтăлма вĕреннĕ. Хăтăлăпăр-ха. Сăмах илме кивçене каймала мар. Есĕ, асту, тулă çăнăхне хатĕрле. Килекене памалах пулат.

— Çав Илйин прокурор килет пулмала.

Сăмах таталчĕ. Килеле тайкаланса, сĕнксе утаççĕ Таймаковпа Ваççа. Виççĕн тепĕр йĕнеле кайрĕç, паллă мар. Татах темĕн тума йулчĕ-ха Караç патне колхоз председателĕн заместителĕ—Таљук.

* * *

— Чĕнсе килĕр. Давай срочно! Нимĕнле ĕç те килме чараканни пулмала мар,—терĕ те хут кăларса çырма пуçларĕ таçтан, районран килнĕ çын.

Йалсовет сторăшĕ нимĕн те ăнланмарĕ.—Кам ку, мĕншĕн халĕ чĕнтерет? Шухăшласа пырат çул тăрăх. Ку çын пирĕн пата килнине астумастăпçке?

Пĕлĕтри çăлтăрсем пĕр-пĕрипе пытанмала выљаççĕ. Уйăх, вĕсене кĕтнĕ пек, пĕре çуталат, тепре пĕлĕт айне кĕрсе пытанат. Вăхăт—çур çĕр иртни икĕ сехет.

Таймаков чӑн малтан ҫитрӗ. Тайкаланать. Пуҫӗ кӑшӑла-кӑшӑлланӑ пек хӗсет. Хӑйӗнчен ерех шӑрши тӳсме ҫук кӗрет. Сӗтел хушшинчи ҫынна курсанах, Таймаковӑн пӗтӗм ҫанҫурӑмӗ тарласа кайрӗ.—Мӗншӗн, кам???

— Есӗ пулӑтни Таймаков?—ҫемҫен те ӗҫлӗн ыйтрӗ палламан ҫын.

— Епӗ.

— Лар.

Чӗннӗ ҫынсем пурте пухӑнчӗҫ. Пурин те куҫсем шывланса тӑраҫҫӗ. Пурте ӳсӗр. Палламан ҫын часах сисрӗ пурте «кӗрекере» ларнинӗ. Вӑл ытлашши нумайах та тӗпчесе тӑмарӗ. Мӗн кирлисене ыйтса пӗтерсен, хут ҫине ҫырчӗ-ҫырчӗ те, тивӗҫлӗ ҫынсене ал пустарчӗ. Унтан, ирччен лӗхе выртса канма, хватере карӗ.

Тепӗр кунне, ирхине, ҫак тӗпчев туса ҫырнӑ ҫын—Караҫа, Ваҫҫана тата темиҫе ҫынна йусанмали ҫурта тытса ӑсаттарчӗ. Чӳклев тума хатӗрленӗ тулӑ ҫӑнӑхӗ те ахалех тӑрса йулчӗ.

III

— Мӗнле пурӑнатӑр, атте-анне, тата йӑмӑксем?

Епӗ питӗ аван пурӑнатӑп. Халӗ савӑнмала пулчӗ манӑн. Епӗ йӗлтӗрпе йарӑнса ӑмӑтура иккӗмӗш преми илтӗм. Халӗ ӗлӗкхи пек мар: йулташсене аван ӗлкӗрсе пыратӑп. Хӑма та питӗ аван. Командир сем йуратаҫҫӗ, тата хут купӑс калама вӗрентӗм. Час лагӗре кайатпӑр, хатӗрленме тытӑнтӑмӑр ӗнтӗ. Епӗ Хӗрлӗ ҫарта капла пуласса шанманччӗ, халӗ епӗ йалтах улӑшӑнтӑм. Ҫырӑва та аван вӗренетӗп. Тата ҫырам. Пире кунта ҫырса пӗлтерчӗҫ: йалти „путсӗр пуҫлӑхсене“ веҫех арӗсленӗ иккен. Вӑл аван, малала ӗнтӗ пирӗн колхоз та ҫӗнелӗ, лайӑх ӗҫлеме тытӑнӗ. Епӗ службӑ петсен, рабфака вӗренме кайма шутлатӑп. Халь ҫавӑнпа хатӗрленетӗп. Тепӗр икӗ ернерен отделни командирӗ пулатӑп.

Хӗрлӗ ҫар саламӗпе—Ԗава“.

* * *

Ԗава чӑн лайӑх хӗрлӗ салтаксенчен пӗри пулса тӑчӗ. Вӑл пур ӗҫре те малта пурать. Хӑй отделенине чи малтан тытӑнса вӗрентме пыҫлать. Ԗава отделенийӗ матур вӗренет. Вӑйӑ кайнӑ чух, йе тавранӑ чух отделени час-часах йурра йантаратать:

Никто пути пройденного
У нас не отберет,
Конница Буденного
Дивизия, вперед!

— Раз, два, три...

Отделени ҫумӗнче паттӑрӑн утса пырать Ԗава. Вӑл хӑй те йурлама ӑста, унӑн сасси уйрӑмӑнах уҫҫӑн тухса шӑрататӑ.

# Йепле вӗренетпӗр.

## Пайанхи частушкӑсем.

### Курак.

Колхоз ӗҫне ӗҫлеме
Йепле вӗренетпӗр:
Авалхи йӑласене
Ҫапса ҫӗмӗретпӗр.

Ӗҫлесе анчах ҫиме
Йепле вӗренетпӗр:
Ӗмӗрхи йулхавсене
Ҫапса сирпӗтетпӗр.

Хут пӗлменсем пурӗ те
Йепле вӗренетпӗр:
Тӗттӗмлӗхе тӗнчерен
Тӗппипех сиретпӗр.

Выльӑхсене ҫитерме
Йепле вӗренетпӗр:
Колхоз тырпул вӑррисене
Тӗрмене чикетпӗр.

Йапалана усрама
Йепле вӗрентетпӗр:
Колхоз мулне тустарсан—
Чикелентеретпӗр.

Бӳрократлӑ ҫынсене
Йепле вӗренгетпӗр:
Ҫтена хаҫачӗ ҫинче
Вӗсене чикетпӗр.

Куккӑр шухӑшлисене
Ӑса вӗрентетпӗр:
Ӑшӑ вырӑнӗсенчен
Персе вӗҫтеретпӗр.

Тасатусем тӑвасран
Ӗҫе вӗренетпӗр:
Кулаксене хамӑртан
Тымарпех хиретпӗр.

# Сӗрмекупӑс

**Аганӑв Леонид.**

(Калав).

Кӑҫал ҫуркунне ҫеҫ Хӗрлӗ Сормӑври верфрен антарнӑ вӗр ҫӗнӗ пӑрахут „Память Покровского“ июлӗн 5-мӗшӗнче Мускав портӗнчен тухса, виҫӗ талӑк ӗнтӗ анаталла йарӑнтарса пырат̆. Ку вӑхӑт хушшинче вӑл Мускав шывӗ ҫинчи нумай шлюҫӑсем витӗр тухрӗ, Коломнӑ, Резаҥ, Мурӑм, тата нумай хуласемпе савӑтсем, саласемпе колхозсем ҫумӗпе иртсе карӗ. Халӗ вӑл хӑйӗн хӗрлӗ тӗслӗ кӑкрипе Ока шывне хӑватлӑн ҫурса, ик йенеле сирпӗнтерсе вӗҫтерет...

Иккӗмӗш класӑн 17-мӗш кайутинче епӗр виҫҫӗн: епӗ, тата манӑн икӗ йулташ.

Вӑхӑт каҫпала. Палубӑ тӑрӑх чылайччен ҫӳресе уҫӑлтӑмӑр. Унтан, вӗри апат ҫийес тесе, иккӗмӗш класӑн салонне тухрӑмӑр.

Кунта—калама та ҫук таса. Кӗтессенче мачча патнех ҫитекен пысӑк тӗкӗрсем. Кантӑксем ҫинче симӗҫ, хулӑм пустав чаршавсем. Сӗтелсем ҫинче терлӗрен чечек... Хыҫалти ҫтена патӗнче, икӗ кантӑк хушшинче, йӑм хура пианинӑ йӑлтраса тӑрат̆.

Хел каҫах тасалӑх йенчен питех те мухтамала мар обшчежитисенче пурӑннӑскерсем. тата ҫири тумтирсем те салонсенче ҫӳремелискерсемех мар пирки, епӗр малтанах темеле иментӗ пек пултӑмӑр. Анчах та, салонра ларакан ытти пасажирсем те,—пӗр пит те самӑр, пӗгӗмпех пурҫӑн ӑшне путнӑ, хут̆ мӗн ҫине те лорнет витӗр ҫех пӑхакан майрасӑр пуҫне—пурте хамӑр йевӗрлине кура, иментӗ пек пулни часах иртсе карӗ.

...Пирӗнпе пӗр сӗтел хушшинче, пире хирӗҫ, икӗ патвар, хулӗсемпе мӑйӗсене хуп хура пуличченех ҫунтарса йанӑ икӗ хӗр апат ҫийеҫҫӗ. Вӗсем пирӗн ҫине тек-текех пӑхкаласа хӑйсен хушшинче пирӗн пиркийех пулас—темскер калаҫса, хуллен кулкаласа та илеҫҫӗ. Пире те ҫиме пырса пачӗҫ

— Инҫе кайатӑр-и, йулташсем?—сӑмах хушрӗ пире хирӗҫ ларакан хӗрсенчен пӗри, кӑлкан пек хумханса тӑракан ҫӳҫли.

— Тӗрлӗренех пур... Ҫывӑхарах кайаканни те, инҫе кайаканни те,—тетӗп епӗ.

— Ҫапах та ӑҫта ҫитиччен? Тен, пире ваҥҥи попутчӗксем есӗр?

Еп хамӑр йулташсем ҫине пӑхкаласа илтӗм те, хӗрсене хамӑр ҫинчев каласа патӑм:

— Епӗр ҫакӑнпа иксӗмӗр,—терӗм хампа Ваҥук ҫине кӑтартса,—Шупашкара ҫитме ӗмӗтленетпӗр, акку йулташ... (пуҫпа Йусуф йенеле султӑм)—Хусана кайат̆...

— Есӗр мӗн, студентсем-и?

— Студентсем... А есӗр хӑвӑр кам?

— Епӗр—Сталинградри страктӑр савӑтӗнчен.

— Мускава мӗнле, ӗҫпе килтӗр-и? Йе...

— Ҫук, ахаҥ. Канса ҫӳретпӗр,—терӗ калаҫӑва малтан пуҫарса йараканни, сенкер куҫӗсене выҥаткаласа.—Курорт вырӑнне...

Калаҫу часах ӑнсах карӗ. Официант пурне те иккӗмӗшне пырса пачӗ, епӗр ҫӗнӗрен ҫиме тытӑнтӑмӑр, анчах калаҫу пӗртте таталмарӗ. Вӗсем—пирӗн ҫинчен, епӗр—вӗсем ҫинчен ыйтса пӗлме тапратрӑмӑр.

...Вӗсен биографийӗсем пирӗн ҫӗршыври нумай пиншер ҫамрӑксен биографийӗ йевӗрлех мӗн: иккӗшӗ те рабочи хӗрӗсем, иккӗшӗн те ача чухнехи ҫулӗсенче пӗр ҫутӑ кун та пулман, хурапа шурра пит нумай курма тивнӗ, граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче пӗри ашшӗне. тепри пӗртен-пӗр пиччӗшне ҫухатнӑ (урӑх унӑн никам та пулман). Совет влаҫӗ вырнаҫса ҫирӗпленсен тин пурнӑҫ йӗркене кӗнӗ вара: икӗшӗ те ача ҫуртӗнчен тӳрех ФЗУ-на кӗрсе вӗренсе тухнӑ, унтан савӑтра ӗҫлеме пуҫланӑ. Ударлӑ ӗҫленӗшӗн преми хыҫҫӑн преми илсе пынӑ, каҫ-каҫ савӑт ҫумӗнчи ВТУЗ-ра вӗренме пуҫланӑ... Кӑҫал ҫуркунне вӗсене савӑт виҫкӗтеслӗхӗ пӑрахутпа Сталинград—Мускав—Сталинград кайса килессипе премиленӗ Халӗ Мускаври пилӗк кун пурӑннӑ хыҫҫӑн, вӗсем кайала савӑта кайаҫҫӗ мӗн...

Апат хыҫҫӑн хӗрсенчен пӗри—Аҥутӑ йатли—пианинӑ патне кайса ларсе, пӗр ҫӑмал кӗвӗ выҥаса илчӗ. Унтан винтӑлӑ пукан ҫинче ларнипех пирӗн йеҥеле вӑр-р... ҫавӑрӑнса:

— Тен, есӗр выҥатӑр пуҥ?—тесе ыйтрӗ.—Выҥӑр-ха, итлес килет.

— Чӑнах, ачасем... Выҥатӑр вӗт есӗр, пасӑр сирӗн кайутӑран скрипкӑ сасси те илтӗнчӗ,—терӗ тепри. Беллӑ йатли.

Епӗ Йусуфпа Ваҥук ҫине ыйтулӑн пӑхрӑм:

— Мӗнле... кӑмӑл пур-и сирӗн?.

— Выҥас тесен—выҥама пулат̆—терӗ Ваҥук.

Аҥутӑ пукан ҫинчен тӑчӗ. Ваҥук ун вырӑнне йышӑнчӗ. Епӗр ӑна йӗри-тавра карталанса лартӑмӑр. Унтан Ваҥук ҫӑмӑл аккордсем туса клавишсене тӗрӗслесе тухрӗ те, пире пурне те ыйту пачӗ:

— Мӗскер выҥас-ха сире ваҥҥи?

— Хут̆ те мӗн, хут̆ те мӗн!—терӗҫ хӗрсем.—Ху мӗскер йуратан ҫавна.

— Апла пулсан—йурӗ еппин..

Ваҥук выҥама тытӑнас шутпа пӗрик аккорд тума ӗлкӗрчӗ ҫеҫ—сасартӑк хӑйхи лимонпа, чей ӗҫсе сарӑлса ларакан майра сӗтел хушшинчен шавлӑн тӑчӗ те, хӑйӗн 12—14 ҫулхи хӗрачи ҫине пӑхса, пурне те илтӗнмеле:

— Идем, отсюда. Неля, сейчас здесь барабанить начнут! Нигде покоя нет нам с тобою!—тесе хучӗ. Пурте, тӗлӗнсе кайса, ун ҫинеле ҫавӑрӑнса пӑхрӗҫ. Ҫав самантрах майра хӗрне ҫавӑтрӗ те, салон алӑкӗ патнеле пант, пант, пант—кисрентерсе утса карӗ. Анчах алӑк патне ҫитсен, мӗскӗнӗн кӗтмен ҫӗртен кайала таврӑнмала пулчӗ.

— Гражданка, вы сумочку забыли!—тесе кӑшкӑрчӗ ӑна пассажирсенчен пӗри.

Майра пӗҫернӗ панулми тӗслӗ пулса кайса, хӑйӗн сӗтелли патне таврӑнса ридикӳлне илчӗ те, малтанхинчен те хӑйартарахӑн, никам ҫине пӑхмасӑр, алӑк патнеле утрӗ. Анчах—„инкек ҫине—синкек“ тенӗ пек каллех ӑнмарӗ шереметӗн: лӑп салон варне ҫитсен, сасартӑк пуканран такӑнчӗ те, кӗмсӗр кемсӗр! малала тирӗнсе укрӗ.., Аллинче мӗн пулнӑ—веҫех урай тӑрӑх сапаланса карӗ. Кунта вара тӗлӗнсе ларакан пассажирсем тӳсеймерӗҫ—пурте харӑс, ахӑлтатса кулса йачӗҫ. Майра сиксе

тăчĕ те, йапалисене йăпăр-йапăр пуçтаркаласа, хыçалтан пушăпа хăвалана пекех тухса пĕрхĕнчĕ.
...Кулса лăплансан, Ваҫук выҫăма тытăнчĕ.
— „Çуркунне",—терĕ вăл.—Норвеги композиторĕ Григ çырнă йапала..
Унăн ал пӳрнисем пианинă клавишĕсем тăрăх калама та çук ç̈мăллăн çӳреме пуçларĕç. Кĕвĕ малтан майĕпе, лăпкăн пуçланса карĕ, унтан çӳлеле хăпарнă çемĕн хăпарса, хăпарса пычĕ. кăштах тăхтасан пианинă пĕтĕм аслă кăкрипе кĕрлеме тапратрĕ.
— Пăр кайат!—тесе кăшкăрчĕ Ваҫук. Хăй çав вăхăтрах хĕрнĕ çемĕн хĕрчĕ, пӳрнисемпе çех мар, пĕтĕм кĕлеткипе выҫарĕ вăл.. Кĕвĕ чылай хушă çав çӳлĕ сыпăкра йарăнса тăчĕ, унтан хуллен чакса, лăпланса пычĕ те, пачах анса ларчĕ. Ваҫук выҫăма чарăнчĕ.
— Бравă, бравă!..—тесе ал çупса йачĕç хĕрсем савăнăçлăн. Вĕсемпе пĕрлех—салонри ытти хăш-пĕр пассажирсем те: пĕр çутă куçлăхлă, чылайах шупкаланнă сухаллă рабочи тĕслĕ çын, унпа йунашар ларакан ватăрах хĕрарăм (унăн арăмĕ пулас) унтан пĕрмай шахмăтла çапăçса пыракан икĕ çамрăк çын, тата вĕсен çумĕнчи хĕрарăм—алă çупса илчĕç.
— Тата выҫăр, тата...
Ваҫук нимĕн те шарламарĕ клавишсем çине пăхса кăштах пухăша кайнă пек пулса ларчĕ те, калех выҫăма пуçларĕ... Ку кĕвĕ малтанхинчен пачах расна пулчĕ, епĕ часах ку чăвашла йапала иккенне тавçăрса илтĕм, анчах мĕнле йапала, тата кам йапали пулнине нийепле те чухлаймарăм... Кĕвĕре малтанах вĕçĕмсĕр хурлăх, хуйхă йанрарĕ. кăштах тăхтасан унта ӳсех пыракан тархă илтĕнме пуçларĕ, пĕр вăхăт пĕтĕмпе пăтрашса кайса таттисĕр савăт шав тăчĕ, унтан вара вăл шавран савăнăçлă, çĕнтерӳлĕ сасăсем çиеле тухрĕç...
— Мĕнле йапала ку камăн? Темскер—восточнăй нумай пек туйăнат кунта,—терĕ шахматиссенчен пĕри, Ваҫук выҫăма чарăнсан.
Ванук тăруках ответ памарĕ. Унтан шахматис йенеле çаврăнчĕ те:
— Никамăн та мар,—тесе хучĕ.
— Мĕнле—никамăн та мар?—тĕлĕнчĕ шахматтис.—Ăна кам та пулин çырнă-ха вĕт, вăл хăйне тĕллĕн пулман.
— Еп ăна хам çырнă,—терĕ Ваҫук, çĕнĕрен аккордсем туса.
Капла калани шахматиса пуçĕпех тĕлĕнтерсе пăрахрĕ вара.
— Не-у-же-ли?.. терĕ вăл сăмахха темиçене пайласа. Ваҫук çине тăй й пăхрĕ.—Не может быть! Вĕт ку...
— Ма? Ма „не может быть"?—каласа пĕтерме памарĕ ăна часах вĕриленекен Йусуф. Пирĕн хаҫ искуствă фронтĕнче талантлă çамрăксем сахал ĕçлеççĕ и мĕн?
— Вăл апли-апла та, но...
— Нимĕнле „но" та çук. Епĕр Совет Сойузĕнче пурăннине манас пулмаст, йулташ. Пайан епĕр колхозник, йе ахаҫ рабочи, а ик-виç çултан—музыкант, художник, йе тата мĕн те пулин...
Тĕрĕс, тĕрĕс,—хушса хучĕ Аҫуттă.—Сăмахран, пирĕн саватра иртнĕ хĕлте живăппеçе, тата музăка вĕрентекен мастерскойсем уçăлчĕç. Весенче аллă рабочи таран вĕренеççĕ. Ниччево, пит те пултарулисем пур. Вĕрентекенĕсем калана тăрăх, чылайĕшĕнчен пысăк ăстасемех пулаççĕ, тет...
Шахматисăн куна хирĕç нимĕн каламалли те йулмарĕ. Епĕ, хамăн йулташăн пултарулăхне тата ытларах кăтартас шутпа, Йусуфа айăкĕнчен тĕкрĕм:
— Скрипкуна илсе тух-ха...
Вăл мавăн шухăша ăнланчĕ курăнат Ваҫука хăлхинчен темскер пăштăн каларĕ те, кайутăна чупса кайса хăйĕн сĕрмекупăсне, тата пĕр тĕрке ноттăсем çĕклесе пычĕ. Кун хыççăн вара пирĕн чăн-чăн концерт тапранса карĕ...
Малтан манăн йулташсем—хăшне пĕрле, хăшне уйрăмăн—хĕвеланăç йенчи композиторсен —Шопен, Бетховĕн, Лист, Верди, Бизе Серасатте произведенийĕсенчен выҫарĕç, унтан вырăссене тытăнчĕç: Чайковски, Иполитăв-Иванов, Бородин... Нумай выҫарĕç вĕсем, пит пысăк аудитори умĕнче тăнă пекех пĕтĕм чĕререн хĕрсе кайса выҫарĕç Малтанласа салонра пирĕнсĕр пуçне тата çич-сакăр çын çех-чĕ анчах пирĕн „концерт" тапранса кайсан, итлекенсем йышланнă çемĕн йышланчĕç, I-мĕш клас пăссажирĕсем те веçех пирĕн салона тулчĕç, тата пăртакках вăхăт иртсен пăрахут кăпитанĕн помошнĕкĕсем те пычĕç (Кăпитан хăй вахтăра пулнă). Вĕсем çех те мар—паçăр епĕр пианинă çинче парапппан çапасран хăраса тухса тарнă лорнетлă майра та хĕрĕ-мĕнĕпех йăтăнса тухрĕ. Вара çак пĕтĕм халăх, чăваш каччипеле тутар тшикнчĕ тĕнчери музăк класçикĕсен произведенийĕсене çав тери пысăк ăсталăхпа выҫанине калама та çук кăмăлласа итлерĕ...
Анчах та музăка пуринчен те ытла паçăр асăннă—çутă куçлăхлă, чылайах шупкаланнă сухаллă çын пысăк пăлханупа итленине асăрхарăм епĕ... Ваҫукпа Йусуф пĕр-ик йапала выҫаса илсенех. вăл малтанхи вырăнĕнчен тăрса—музыкантсем хыçне, çывăхарах пырса ларчĕ. Унтан пĕр вунă минут те иртрĕ, те иртмерĕ—вăл хăйĕн пукание çĕклесе айаккарах. Ваҫукпа Йусуфăн пичĕсене курма май пур çĕрелле вырнаçрĕ. Итленĕ чухне, вăл музăка лайăхрах çăтасшăн пулнă пек, тек-текех ӳсĕркелесе пырне тасатрĕ, темшĕн куçлăхне тыта-тыта тӳрлетрĕ, музăк чарăнсан пуринчен ытларах ал çупрĕ...
— Мĕнле çын-ши ку? Ма ун пекех пăлханат вăл?—шухăшларăм еп хамăн ăшăмра ун çинчен.

* * *

...Вăхăт вуниккĕ патнеле сулăнсан тин выҫăма пăрахрĕç манăн йулташсем. Пăссажирсем татах та выҫаттарасшăнччĕ вĕсене, анчах Иусуф вĕсем ыйтнине хирĕç, естрадă çинчи пек кăмăлăн кулса илсе пуçне тайрĕ те:
— Пит пысăк тав пире ыр кăмăлпа итленĕшĕн, анчах та—етем трактăр мар, ывăнакан йапала,—терĕ.—Çитменне, вăхăт та нумай ĕнтĕ. Çавăнпа та—ыр каç пултăр сире!..
Епĕр хамăрăн кайутăна карăмăр!
Тепрер пилĕк минутран, çывăрма выртиччен уçălса кĕрес тесе, еп палубă çине тухрăм..
Тулта—ăшă, тӳлек те çутă каç. Пăрахут сăмсинеле пырсан, куç умне ытармала мар илемлĕ карттин тухса тăчĕ. Пĕр йенче, сылтăмра, çемçе те хура-симĕс кĕççепе витĕннĕн туйăнакан çӳлĕ çăмламас тусем, вĕсен çийĕнче йап-йака, сенкер-кĕрентерех пĕлĕт; тусемпе пĕлĕт сăнĕсем шыв çине ӳксе тĕкĕрти пек курăнса пыраççĕ; сулахайра—вĕçĕ-хĕррисĕр тӳрем улăхсем тăсăлаççĕ, вĕсене

тăрăх утă капанĕсем хура пăнчăсем пек сапаланнă. Пирĕн умра—унта та кунта хĕрлĕ, симĕс, шурă бакен çуттисем шыв çинче выљаса тăраççĕ... Çаксем çине куç илмесĕр пăхса тăрсан, Ренессанс вăхăтĕнчи художниксемпе XIX ĕмĕрти чи чаплă пейзажиссен—Констебљ, Коро, Левитан картинĕсем аса килсе кайаççĕ. Анчах ку танаштару темиçе самантранах çухалса кайаť, мĕншĕн тесен вăл картинсем çинчи çвирел калакан кĕтÿçсемпе хитре кăкăрлă хĕрсене—пирĕн çул çинчи пĕрехмай курăнса иртекен çÿлĕ тăрпалă савăтсемпе, тулли баржăсене тăвала ухлатса сĕтĕрекен вăйлă букçирсемпе нимĕнле те йунашар тăратма май килмест.

— Çук, çук...—шухăшлатăн хăвна ху,—пирĕн пурнăç карттинĕсене ÿкерме хамăрăн Рембрандсемпе Ватоссем, хамăрăн Репинсемпе Врубĕлсем*) кирлĕ...

...Палубă тăрăх такам ман патала утса пыни илтĕнчĕ. Умри улшăнсах пыракан картинсене пăхса, айалта шыв мĕнле шавланине итлесе тăраканскер, епĕ кайала çаврăнса пăхмарăм. Тепĕр çур минутран ман çумма паçăрхи çутă куçлăхлă старик пырса тăрса, палубă карлăкĕ çине чавсаланчĕ.

— Темле çывăрас килмест...—терĕ вăл, кăштах тăрсан.—Çанталăк ытла та лайăх кĕçĕр.

— Çанталăк питĕ те хÿхĕм çав,—çирĕплетрĕм еп унăн сăмаххине.

— Хаљ йалта утă çулаççĕ.

Калаçу ăнмарĕ, таталчĕ. Йалта хаљ утă вăхăчĕ пулнине еп унсăрах пĕлнĕ, мана ун çинчен сÿтсейавни кирлĕ пулман. Урăххи çинчен калаçмали сăмах тупăнмарĕ... Вара епĕр чылай вăхăт ним шарламасăр, кашни хăйĕн шухăшĕсене шухăшласа, ним тĕлсĕр малала пăхса пытăмăр. Старик пирус чĕртсе туртса йачĕ, куçлăхне илсе шăлса тăханчĕ... Унтан тăрук ман патала çаврăнса тăчĕ те:

— Итле-ха, çав паçăр музăк калакансем—санăн йулташсем-и вĕсем?—тесе ыйтрĕ.

— Манăн йулташсем-çке. Ма вара?

— Так, ахалех... Таçта вĕренеççĕ-и вĕсем, ку ĕçе? Еп каласа патăм. Стартк калех пирус чĕртрĕ те, темшĕн тарăнăн сывласа илчĕ!

— Нта, самана...

— „Мĕнле етем ара ку?"—шухăшларăм еп ун çинчен тепĕр хут.

— Мен кирлĕ ăна?

Вăл пăртак шухăша кайнă пек пулса тăчĕ те, татах ыйтрĕ:

— Малтан камсем пулнă ара вĕсем?

— Малтан-и? Йалти ачасем!—терĕм те еп, ыйтăва тÿррĕн ăнланса.

— Вăл мар ха. Еп урăххи çинчен пĕлесшĕн, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем камсем пулнă? Учиттĕл-и, вăрман улпучĕ-и унта... Тен пуйанскерсем?

Старикĕн шухăшне еп тинех ăнлантăм та, „апла мар" тесе—пуçпа султăм:

— Çу-ук, йулташ. Пĕлессÿ килет пулсан...

— Питĕ пĕлес килет!—каласа пĕтерме памарĕ мана старик.—Питĕ интереснă-ха вăл мана.

— Вĕсем икĕш те тăлăхскерсем пулнă, йулташ Сĕрмекупăс калаканни—тутар ачи—вунтăватă çула çитиччен пĕр суккăрпа вакзалсемпе пристăнљсем, ташайаксемпе**) Сапан-туйсем тăрăх çÿренĕ. Суккăрĕ хут купăспа каланă, ку—сĕрмекупăспа. Çапла майпа вара хăйсене тăравтаркаласа пураннă вĕсем... Пĕрре, Самар йенчен пăрахутпа хăпарнă чух, ăна тутарсен музăк шкулĕнче вĕрентекен икĕ çын тĕл пулнă та, унпа шкула вĕренме кĕресси çинчен калаçма тытăннă. Ку килĕшнĕ. Вара çавăн хыççăн вăл тăватă çул хушши Хусанта вĕреннĕ, унтан хаљ иккĕмĕш çул ĕнтĕ Ленинградра вĕренет.

— Тепри тата?

— Тепри—чăваш ачи, унăн историйĕ те çавăн манерлĕрехех... Унăн тăван амăшĕ пулман, вăл амаçурипе пураннă. Ну—амаçурипе пурнăç йепле пулни палах ĕнтĕ: пайан тутă ыран выçă, тепĕр кунне—патак. Çавăн пирки ку ача килтен йалан пăрăнарах панă, пуринчен ытларах килте мар, йалта тĕрлĕ кĕсле-тумрасем тăвакан пĕр уксах старик патĕнче пураннă. Лешĕ ăна хăйне пĕрле ĕçлеме хăнăхтарнă, çав хушăрах—хăй пĕлнĕ таран музăка та вĕрентнĕ. Вăхăт малала пынă май, хăйхискер, ку ача старикрен хăйĕнчен те иртерме пуçланă: пайан мĕнле кĕвĕ илтнĕ—ыран ăна выљанă та ĕнтĕ. Илтнĕ кĕвĕсене выљани çитмест—хăйне ăс ĕн шухăшласа кĕвĕсем майлаштарма пуçласа... Тепĕрер ик çултан вара, йалти комсомол йачейкки пулăшнипеле, вăл вĕренме кайса вырнаçнă... Çапласкерсем пулнă вĕсем.

Шухăша кайса тăнă старик, çунса пĕтнĕ пирус тĕпне карлăк урлă Оканала ывăтрĕ те, тарăнăн сывласа йачĕ:

— Çак анчах-и?

— Мĕн пултăр тата урăх?Тепĕр ик çул иртет те акă, вĕсем музăк аслă шкулне пĕтерсе тухса, пысăк ăстасем пулаççĕ...

Старик нимĕн те каламарĕ. Чылай вăхăт пăрахут сăмси патĕнче шыв шавланисĕр, тата трÿмра, машин пайĕнче, хăватлă двигăтĕлсем хупă сасăпа кĕрленисĕр пуçне нимле сас-чĕв те илтĕнмерĕ.

— Нда-а... Самана...—терĕ старик калех.

— Мĕскер апла—ыйтрăм еп.

— Самана урăхла, пурнăç пачах расна, тетĕп... Хăшĕсем курма пĕлмеççĕ çавна, суккăр пек. А еп ăна витĕрех куратăп. Мĕншĕн тесен вăл ытла та лайăх курăнаť, шăлăм...

— Вăл тĕрĕс, çаплах ĕнтĕ,—терĕм епĕ, старик мĕн çинчен каласшăн пулнине ăнланаймасăр.

— Итле вăт ес мана,—терĕ старик малала,—еп сана пĕр истори каласа кăтартам...

— Мĕнлĕ истори? Тавай кала.

— Ак мĕнле истори...,—вăрахăн пуçласа йачĕ старик. Пĕр вăтăр çул ĕлĕкрех,—йаппуљ вăрçи те пулманччĕ-ха унчух,—еп хаљхи пек савăтра ĕçлемен, йалта пураннă. Пирĕн йалта ернекунсем пит чаплă пасар пулаťчĕ, тĕрлĕ çĕртен купцасем, усламçăсем пырса тулаťчĕç, хамăр йалта та сахалах марччĕ вĕсем; пирĕн йалтах становой пурăнаťчĕ, вăрман улпучĕ пурччĕ, темиçе учитлĕ, прихут пысăк пулнипе—пуп таврашсем виççĕн-тăваттăнччĕ. Пĕр сăмахпа, пирĕн йал чаплă та пуйан йал тесе шутланнă. Анчах, тĕрĕссипе каласан, пуйансем йалта вуник-вунпилĕк кил çеç пулнă, ыттисем вара... хăшĕ çĕн тырра çитиччен сиплешкеленнĕ, теприсен раштаврах çимели пĕтнĕ. Ун пеккисем пуринчен те ытларах пулнă. Ну, вĕсен пурнăçĕнче „чаплии" нимĕн те пулманнине чухлатăн ĕнтĕ есĕ, вĕсем темле тăрăшсан та, темле мекĕрленсен те „ыр çынсем" çывăхне те пырайман, вĕсен хуť йепле ĕмĕчĕсем те таталса пынă...

---

*) Тĕнчипе чаплă художниксем.

**) Ташайак—йармăнка.

— Ҫак пирӗн „пуйан та чаплӑ“ йалта, пӗр пӗчӗкҫеҫ, тӗтӗмпе пӑнчӑхса ларнӑ хура пӳртре Улемппи йатлӑ икӗ ачалӑ тӑлӑх арӑм пурначчӗ. (Унӑн упӑшки пӗр хуҫа патӗнче вӑрман касса пурӑннӑ чух йуман айне пулса вилнӗ-мӗн). Ачисене выҫтарса вӗлерес мар тесе Улемппи пупсем, вӑрман улпучӗ, становой патӗнче кил-ҫурт таврашне, кӗпе-йӗмӗсене ҫуса тасатса, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлесе пурӑнатчӗ... Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленипе, унӑн ачисене пӑхма вӑхӑт та йулман вара, ачисем хӑйсене тӗллӗнех ӳснӗ, мӗн тӑвас килнӗ—ҫавна тунӑ, никам та чышакан пулман вӗсене...

— Ҫапла пурӑннипе, аслӑ ачи (Петруш теччӗҫ ӑна) вунултӑ ҫула ҫитнӗ ҫӗре сӗрмекупӑспа калама вӗреннӗ. Таҫта вӗреннӗ ӑна вӑл, темле вӗреннӗ—пӗлместӗп, анчах та—тӗрлӗрен тӗрлӗ ҫемӗсем калаччӗ, тӗлӗнмеле хитре калаччӗ... Хӑй, шкултаменте вӗренменскер, санӑн йулташусем пек хут ҫине пӑхса мар, ахалех калатчӗ те ӗнтӗ, ҫапах та—пурте йурататчӗҫ унӑн музӑкне. Хӑй те касҫах кайаччӗ хӑйӗн музӑкӗшӗн, сӗрмекупӑспа вӑхӑт нумай иртсернӗ пирки амӑшӗ тем пекех вӑрҫӑ пулин те—пӑрахмасчӗ, кӑшт пушӑ вӑхӑт пулсанах-ҫавӑрса тытаччӗ. Тепӗр чухне, каҫ-каҫ унӑн тантӑшӗсем урамра, вӑйӑра, ташӑ-йурӑпа киленеччӗҫ, а вӑл ӑҫта та пулин, халӑхран айаккарах—йе йал хыҫӗнчи вӗтлӗхри уҫланкӑна, йе арман пӗви хӗрне кайса ларччӗ те, таттисӗр макӑртаччӗ хӑйӗн кивӗ сӗрмекупӑсне...

— Пурӑна киле Петруша сӗрмекупӑспа калама ӗҫкӗсем тӑрӑх илсе ҫӳреме пуҫларӗҫ. Малтанах ӳсӗрсем патне кайасшӑн пулман вӑл, анчах амӑшӗ ӑна ниҫтан та пӗр пус ӗҫлесе тупмастӑн тесе, макӑра-макӑра йатлаҫнипе, унӑн ирӗксӗрех килӗшмеле пулнӑ. Ахаљ ҫынсем ҫех мар, пуп таврашӗсем, пристӑв, тата ытисем те, хӑнасем пухсан Петруша илсе кайнӑ.

— Чылай вӑхӑт иртрӗ ҫапла... Пӗрре, ҫулла пуҫламӑшӗнче, пирӗн йалти учитлӗ патне кӳршӗ йалӗсенчи темиҫе учитлӗ хӑнана пынӑ пулнӑ, ачасенчен пӗри, каҫалапа арман пӗвине шыва кӗме кайсан, Петруш сӗрмекупас каланине илтнӗ те, ун патне пырса, унпа калаҫма пуҫласа йанӑ, хӑйӗн ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе ыйтса пӗлнӗ. Петруш темиҫе ҫемӗ выљаса парсан, учитлӗ хӑни ӑна вӗренме каймa кирли ҫинчен, вӗренсен мӗн пулма пултарни ҫинчен каласа панӑ... Пӗр сӑмахпа, Петруша пит те хаваслантарса йанӑ вӑл, ҫавӑнтан вара Петруш вӗренме кайасси ҫинчен ҫех шухӑшланӑ...

— Ҫимӗксенчи кӑруҫҫелсенче, ӗҫкӗсенче, ӑҫта май килнӗ ҫавӑнта сӗрмекупӑс каласа, Петруш ҫӑвӗпех укҫа пухнӑ. Ҫуртыррисем вырас вӑхӑт ҫитсен вара—кушеле ҫӑкӑр чиксе, купӑсне хутаҫпа ҫӗклесе, учитлӗ хӑни панӑ адрӗс тӑрӑх килтен тухса кайнӑ. Ӑҫта, мӗнле хулана кайса ҫӳренине хаљ астумастӑп ӗнтӗ,—Хусаначчӗ пулас,—анчах та... раштавччен ик-виҫ ерне малтан нимӗнсӗрех кайала киле таврӑнчӗ вӑл. Астӑватӑп—еп ӑна каҫалапа урам тӑрӑх иртсе пынине куртӑм. Аран-аран паларӑм вӗт... Тепӗр ыйткалакан та унтан нумай тасарах пулат ҫав. Тумтирри унӑн—пилӗк йытӑ харӑс туланӑ йеверлӗччӗ, пуҫне темле ҫӗтӗк шаљ таткипе чӗркенӗ, пӗр уринче—тӑпӑлса тухнӑ ҫапата, тепринче—ҫӑм калуш пекки. Ҫурӑмӗ хыҫӗнчи хутаҫӗнчен сӗрмекупӑс курӑнса пырат. Тӗлӗннипе, пӗр сӑмах та чӗнеймерӗм еп ӑна, сивӗпе хутланса, курпунне кӑларса тӑвала утса кайнине кураран ҫухаличченех пӑхса тӑрса йултӑм... Тепӗр кунне пӗлтӗм: вӑл хӑй ӑҫта ҫитес тенӗ ҫӗре ҫитнӗ иккен, хӑй кӗрес тенӗ шкула екзамӗн те чиперех панӑ, пӗр-ик ерне пек вӗреннӗ, анчах вӗреннӗшӗн тӳлеме укҫи пулманнипе, ӑна шкултан кӑларса йанӑ... Вара хуларан пӗр пус укҫасӑр, пӗр татӑк ҫӑкӑрсӑрах тухса кайнӑ та, йулашки тумтирне, кӗписене сутса тӑранкаласа, тепӗр чухне „христарати“ ыйтса илсе, виҫҫӗр ҫухрӑма йахӑн ҫурран килнӗ...

— Ҫак хӗлте Петруш килтен ниҫта та тухмарӗ. Сайра-хутра ҫеҫ, пыра-пыра чӗнсен, унта-кунта кайкаласа килеччӗ. Ку та укҫашӑн анчах пулнӑ. Хӑй—калама та ҫук хуйхӑратчӗ курӑнат, йалан шап-шур тӗслӗ ҫӳреччӗ, куҫӗсем путса анса кайнӑччӗ, ҫынсемпе питех те калаҫмасчӗ.

— Вӑрӑм хӗл иртрӗ те, каллех ҫулла пулчӗ. Труйскире пирӗн престол, йалта пысӑк ҫимӗк пулат. Ҫак ҫимӗк тӗлне пристӑв патне Атӑл хӗрринчи пӗр хулара лапка, тата трактир тытса пурӑнакан пиччӗшӗ пынӑ. Ну, пиччӗшӗ килнӗ йатпа пристӑв хӑнасем пухнӑ, ӗҫкӗ пуҫласа йанӑ, хӑнисене ташлатма Петруша чӗнтернӗ. Ҫакӑн чухне вара становой пиччӗшне Петруш кӑмӑла кайнӑ пулас,—вӑл ӑна хӑй патне пыма илертнӗ. Мӗнлемӗнле калаҫса татӑлнинех пӗлместӗп, анчах Петрушӗ лешӗ вӗренме пулӑшма пулнипе ҫех кайма килӗшнӗ, тет. Тепӗр виҫ-тӑват кунтан тухса та кайнӑ вара вӗсем...

— Анчах та—пӗрре ӑнманни ӑнмастех ҫав вӑл. Ҫип-ҫинҫе тӗлтен татӑлат, теҫҫӗ. Тепӗр тӑват-пилӗк уйӑхран Петруш каллех киле ҫаврӑнса ҫитрӗ. Каллех малтанхи йеверлех, каллех ҫурран,—пӗр сӗрмекупӑспе ҫех... Мӗн пирки пуљ тетӗн ес? Пуйан ҫын чухӑна етем выранне шутламан пирки!.. Леш становой пиччӗшӗ ӑна хӑй патне илсе ҫитернӗ те, ним йӗркесӗр експлоаттаци тума тытӑннӑ иккен. Кӑнтӑрла кунӗпе кил таврашӗнче ӗҫлеттернӗ—урай ҫутарманни ҫех йулнӑ, каҫхине трактирта ҫурҫӗр иртиччченех сӗрмекупӑс калаттарнӑ... Вӗренесси ҫинчен—пустуй шухӑшламали те пулман. Петруш хуҫана кун ҫинчен аса илтерсен, лешӗ ӑна: „Ӗҫле есӗ текех ан ӳркен, ӗҫлесен ман патра ахаљ те выҫӑ вилес ҫук“,—тесе хунӑ. Паллах, кун хыҫҫӑн Петрушӑн кӑмӑлӗ хуҫӑлмалипех хуҫӑлнӑ, ним тума та пӗлмен вӑл, каллех хуйха ӳкнӗ...

— Ҫав хушӑрах тата, ун ҫумне хуҫин арӑмӗ сыпҫӑнма тапратнӑ. (Курнӑ еп вӑл хӗрарӑма,—сахалтан та пӗр сакӑр пӑт туртаччӗ пуљ, урампа утса пынӑ чух—ҫӗр кисренеччӗ!). Пӗрре упӑшки килте ҫук чухне, ҫав ама аскӑн шухӑш тытса Петруша хӑй пӳлӗмне чӗнсе кӳртнӗ те, сулӑхмалипех ҫулӑхма пуҫланӑ. Петруш хӑраса кайнӑ; майраран вӗҫерӗнме хӑтланса ӑна хыттӑн тӗксе йанӑ та, пӳлӗмрен тухса тарнӑ. Леш Петруш тӗксе йанипе тимӗр кравaт пуҫне пырса ҫапӑнса, пуҫне суранланӑ иккен. Тепӗр кунне вара, ҫилине шӑнӑҫтараймасӑр, упӑшкине: „Ҫапла-ҫапла, Петруш мана пусмӑрлама тӑчӗ, аран вӗҫерӗнтӗм, кӗрешнӗ чухне пуҫ ҫыранланчӗ“—тесе елеклесе кӑтартайнӑ. Становой пиччӗшӗ, вырсарни кун майӗпе чылай сыпнӑскер, арӑмӗн елекӗ тӑрӑх Петруша пӗр пӗчӗк пӳлӗме чӗнсе кӳртсе, хӑйӗнчен нимӗн ыйтса пӗлмесӗрех, хӗнеме тапратса йанӑ. Ӑнсӑртран йут ҫынсем пырса кӗни ҫеҫ ҫӑлнӑ Петру-

ша. Вара вăл хăйĕн ăпăр-тапăрне пуçтаркаланă та, ча рах тухса шăвăннă. Ниçта кайма çуккипе, мĕскĕнĕн каллех киле таврăнмала пулнă.

— Киле çитсенех, вăл питĕ хытă чирлесе ӳкнĕ. Чирленĕ чухне калама та çук аташрĕ тет вăл, ăсран тухса кайса—сĕрмекупăсĕ çинчен, становой пиччĕшĕпе трактир çинчен кăшкăраччĕ тет... Çапах та, пĕр виçĕ ерне выртнă хыççăн, вăл сывалма пуçланă. Анчах, ура çине тăракан пулсанах, пĕрре, килте никам та çук чух, сĕрмекупăсне кăмака хысăкне çапса аркатнă та, мачча çине хăпарса, урхалăхпа çакăнса вилнĕ... Çапла вĕçленчĕ вăра çамрăк музыкант Петрушăн телейсĕр пурнăçĕ. Темле тăрăшсан та, темле тапалансан та—унăн ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймерĕç, çавăн пирки пурнăçĕ те таталче вара унăн... Халь пулсан—ыттисем пекех вĕренсе—çын пулмалаччĕ те вăл, анчах ун чухне самани вĕт... е-ех! Аса илме те йывăр...

Старик калама чарăнчĕ Унăн калавĕ манăн чĕрене темле сивĕ кичемлĕхпе тултарчĕ, епĕ чылайччен ним чĕнмесĕр, йăвăр шухăша кайса лартăм. Мана хам пурнăçра илтнĕ тата темиçе çавăн йевĕрлĕ хурлăхлă историсем аса килчĕç. Ун пеккисем нумай пулнă вĕт,—ĕçхалăх хушшинчен нумай талантлă çамрăксем, хăйсен таланчĕсене аталантарма май çуккипеле, пӳртрен раштав сиввине илсе тухнă чечексем пек хăрса ларнă...

— Халь—мĕскер, хальхи çамрăксем мĕне вĕренес килнĕ çавна вĕренме пултараççĕ...—тесе хушса хучĕ те старик хăйĕн калавĕ çумне, тăрса утрĕ. Ку сăмахсем сасартăк манăн шухăшсен йухăмне улăштарса йачĕç.

— Çапла, йулташ, çапла! Мĕншĕн тесен—епĕр хамăр пурнăç хуçисем! Хамăр телейе—хамăр тăватпăр!—тесе калас килчĕ манăн ăна хыттăн, анчах вăл палубă çинчен кайнăччĕ ĕнтĕ. Манăн пуçра çĕнĕрен çĕнĕ шухăшсем тапранса карĕç..

Кĕçех, епĕ хамăн шухăшсемпе çăван Шупашкара вĕçсе ӳкнĕ тĕп, мана революци уйавĕсем вăхăтĕнчи демонстрацисем аса килеççĕ, епĕ Хĕрлĕ плошчăтривчи трибунă тĕлĕпе хаваслăн йурласа иртсе пыракан шкул ачисене, рабфаксенчи, техникумсенчи, аслă шкулсенчи студентсене куратăп... Манăн куç умне хам пекех çамрăк музăкçăсемпе художниксем, артиссемпе сăвăçсем тухса тăраççĕ... Мĕн чухлĕ иксĕлми хаваслăх вĕсенче, мĕн чухлĕ вĕресе тăракан вăй! Вĕсем пурте—ирĕклĕ çĕршыв ачисем, вĕсем—çĕнĕ пурнăç чечекĕсем!

* * *

— Ес ма çывăрмастăн?—илтĕнчĕ хыçалти хĕр сасси.

— Ан кансĕрле ăна, вăл савни çинчен мечтать тăватъ,—кулса йачĕ тепри.

Ман пата Аньутăпа Белла пырса тăчĕç.

— Хăвăр тата ма çывăрмастăр?—ыйтрăм еп.

— Горкири автосавăта курма тухрăмăр,—терĕ Аньутă, куçĕ çине пĕтĕрĕнсе ӳкнĕ сар çӳçне кайала ывăтса.—Тăвала çĕрле иртсе карăмăр епĕр, ун чухне курма пулмарĕ...

— Халь те иртсе кайас мар тесе, кĕçĕр йури будилнĕк лартрăмăр вĕт,—хушса хучĕ Беллă.

...Сылтăм çыранри йăвăççен тăрринче ирхи хĕвелĕн малтанхи пайăркисем выльама пуçлани курăнчĕ. Кăнтăр йенчен вĕрекен йăваш çил пирĕн çӳçсене лăскаса, пит-куçа кăтăклама тытăнчĕ. Палубă карлăкĕ çине айăккăн улăхса ларнă Аньутă малтанах темле кĕвĕ шухăшлакаларĕ, унтан тăрук сасăпах пуçласа йачĕ:


„Ç. П. Петров“ колхозăн кăçал туса пĕтернĕ силос башни

— Железными резервами
Мы выросли везде...

— Авă, авă, курăнатъ!.. Пăхăр!—кăшкăрнă пекех анатала тĕлесе кăтартрĕ Беллă, хăрах аллипе Аньутăна хулĕнчен тытса.

Чăнах та, сулахай йенче, хăйăрлăх сăмсине урлă Горкири автосавăтăн кăвак корпусĕсем курăнса карĕç. Тепĕр улт-çич минутран пăрахут вăрăм сăмсак пуçĕпе çавăрăнса тухрĕ те, пирĕн ума пĕтĕм савăтăн калама та çук чаплă картинĕ тухса тăчĕ...

Аньутă каллех пасăрхи йурра йурласа йачĕ. Вăл пĕр çаврăм йурласанах, епĕр те ун çумне хутшăнса, малтан вăрахăнтарах, унтан пĕтĕм хаваслăхпа йурлама тапратса йатăмăр:

— Клянемся, будем первыми
В бою, в строю, труде...

...Сывлăш таса та уçă, сывлама çăмăл, пирĕн чĕресем хавассăн тапаççĕ. Хĕрӳлĕ йурă пĕтĕм шăмшака çĕклентерет, йуна хĕртет. Пирĕн пăрахут, лăпкă Ока шывне трактăр плугĕ пек çĕтсе, хăвăрттăн малала уткăнса пыратъ, ирхи чипер хĕвел, çĕнĕ куна савса, таттисĕр кулатъ.

Останкино, 23-IX—33.

# Тĕтрелĕ апрел

**Савир**

(Калав).

Атăл хĕрринче ларакан пĕчик çеç №-хула. Прахутпа иртсе кайнă чухне вăл инçетренех курăнать. Атăлăн васанкă хĕррипе лартса тухнă чул çуртсем илемлĕ сăн кĕргеççĕ ăна. Анчах хули варрине кĕрсен, унта пит чаплă йапала нимех те çук. Шалала кĕнĕçсем йеркипе ларса тухнă кивĕ йăвăç çуртсем çеç хупăрлаççĕ куç пуçа.

Çуркунне. Çанталăк ăшă. Атăлăн сакăлталă хĕрлĕ çыранĕсенчи йулашки йур татăкĕсем ирĕлсе пуçтарăннă пăтранчăклă шыв çуркуннене ăсатса, çинçен; йăс шăнкăрав пек шăнкăртатса йухать, унăн уç сасси ирген-çÿрен çынна килентерет.

Вăхăт—каçпала. Хулана йерипен тĕттĕм ытама хупăрласа илчĕ. Çапах та каç сулхăнĕ çук. Кĕçĕрхи апрелĕн йулашки каçĕ сĕт пек шурă тĕтре ăшне путрĕ. Лăпкă та ăшă пайанхи каç. Ленă, асламăшĕсем патĕнчен тухса, Ленин урамĕнчи сăртра ларакан пуљница çурчĕсем патне васкаса утрĕ.

Ытла та тĕттĕм, салху кĕçĕр каç. Халичченхи пек савăнăçлă, шавлă мар. Тÿпере те халичченхи чийе куçлă çăлтăрсем йăлкăшса пăхмаççĕ. Çершыв хуралçи—уйăх та курăнмасть. Тÿпере—пĕр çĕвĕсĕр, вĕçĕ-хĕррисĕр хура пархат хулăм пĕлĕт. Пăхлатса, хура тĕтĕмпе вут-хĕм пĕрĕхсе електростанци ĕçлеме пуçларĕ. Електрицă токĕ пралуксем тăрăх йарăнса хулана сасартăк, çиçĕм пек çутатса хучĕ. Васкаса, хыпаланса утать Ленă.

Илемлĕн, ĕречĕпе лартса тухнă йăвăçсем хушшинче икĕ шурă пуљница çурчĕ ларать пытанса. Пуљницăсенчи електрицă çутти кантăксем виттĕр ÿкнĕ урама.

Калинкесене йерипен уçса, пуљницăн çурчĕсем хушшинче йăвăçсем айĕнче çухалчĕ Ленă. Шăп. Пĕр сас та çук. Кăнтăрла кунĕпе ĕçлесе супнă пуљница çыннисем вăхăтлăха канма выртнă пулĕ.

Ленă, шăплăхран хăракан етем пек пуљницăн пысăк алăкĕсене çемçен хупса кĕрсе, çÿлти хута улăхса кайрĕ.

9 №-лĕ пÿлĕм. Вăхăтлăха вăл шаккамасăр итлесе тăчĕ. Унтан хуллен алăка шаккарĕ. Анчах хирĕç сасă çук. Тата хытăрах шаккаса пăхрĕ вăл—сасă каллех çук, алăк уçăлмарĕ.

—Çывăрать пулĕ, чармантарас мар,—шутларĕ хăй унтах.

Хăй те сисмерĕ, алăк хăлăпне таса шурă аллисемпе тытса туртрĕ. Алăк уçăлчĕ. Електрицă çунать. Акă вăл кĕрсе кайрĕ. Хыçĕнчен алăк шăлтăр р-т! туни кăна илтĕнсе йулчĕ.

Малтанлăха вăл ним тума аптраса тĕлĕрсе тăчĕ.

—Çитеймен ĕнтĕ вăл. Ытлашши нумай тăмĕ, курсах кайас,—шухăшларĕ кайран.

Унтан васкамасăр паљтоне хывса вешалкă çине çакрĕ. Кил хуçи арăмĕ пекех, сапаланса выртакан кĕнекесене, хутсене, хаçат-журналсене пĕрерĕн, пĕрерĕн пуçтарса майласа хучĕ. Тумгирсене вырăнсене майласа, урайне шăлса тасатса пурнете типтерлесе пукан çине кайса ларчĕ.

Пÿлĕм каллех шăп. Куçа йăмăхтаракан електрицă çути çине пĕр сикмесĕр пăхса ларчĕ Ленă. Ăшăпа чĕрĕлнĕ шăнасем ним тума аптранипе çутă патне пырса љустрă çумне перĕне-перĕне çапăçаççĕ. Каллех шăп. Каллех пушă хирти пек пĕр сассăр шăплăх.

Кĕтет, кĕтет Ленă. Никам та килмест. Акă кăридорпа хыпаланса улăхакан ураасси илтĕнчĕ.. Хытăран хытă илтĕнет ура сасси. Чарăнчĕ Минутлăха чĕнмерĕ. Мĕнле етемми паллă мар. Анчах ку çын чупсах хыпаланса килни паллă. Сывлама чарăнсах итлерĕ ăна Ленă.

— Чупсах килет ку,—хашкать,—шутларĕ вăл.

Акă, алăк умне çитнĕ çитмен, хăй çын алăка хăвăрт шаккать:

— Тошшă тархасшăн пырччĕ. Вилет вĕт!.. Урисем сивĕнеççĕ, аташать, Ах, манăн йуратакан упăшка, манăн шанчăк... Тошшă! Тошшă! тархасшăн çăлччĕ вилĕмрен,—хайар çинçе сасă татах нумай чĕтретрĕ пÿлĕме.

— Тухтăр çук,—терĕ Ленă алăка темшĕн шикленнĕ пек пулса уçса. Çавăнтах ăна, алăк хыççĕнче, пуçĕнчи тутăрĕ анса ларнă, куçуллĕ пит-куçĕсем шурăхса тĕссĕрленнĕ вăтам пÿллĕ çамрăк хĕрарăм курăнса кайрĕ.

Ăçта вăл, ăçта, Тошшă?—çиленнĕ пек, хайар сасăпа кăшкăрса ыйтрĕ хĕрарăм:

Таçта, пĕлместĕп,—терĕ Ленă. А-ах, ăçта-ши вăл?.. кирлĕччĕ, о-о ох!.. макăрнă пек йăнăшса йачĕ хĕрарăм; çапла кăшкăрнипех вăл варт çаврăнса картлашка тăрăх айалала чупса карĕ.

Каллех шăп. Каллех пÿлĕмре Ленă пĕчченех. Каллех çав антранă çурхи шăнасем çеç љустрă çумне çапăнса сĕрлени илтĕнет.

Акă тепĕр хут кăридорта, айалти хутра, йăвăр та сумлă ура сасси илтĕнчĕ. Вăйлăран та вăйлă йантартса хăпарать ура сасси. Çитрĕ. Пÿлĕм алăкне чĕр-и-р-и-и-ик тутарса кĕчĕ вăл кухњăна. Чăтаймарĕ Ленă. Кроват çинчен сиксе анса алăк патне чупрĕ.

— А, Тошшă!

— Ленă, Ленă?... Есĕ-и?...

— Мĕн чухлĕ вăхăт иксĕмĕр пĕр-пĕрне курманни! Йевле çитрĕн?

— Сывă-и?

— Сывă, аван...

Сăмахсем нумай, чĕлхе калаçасшăн, вакласшăн. Анчах чĕрисем иккĕшĕн те çамрăк...

Чăтаймарĕ Тошшă Ленăна пĕчĕк ачана тытнă пек ыталаса тытса чуп турĕ.

Туртăшмарĕ Ленă. Тошшăн çемçе ытамне ачашшăн парăнчĕ.

Тошшăн вĕри тутисенчен ÿсĕрĕлнĕ пек пулса Ленăн, пĕр самантлăха пуçĕ çаврăннă пек пулчĕ. Куçсем тĕтреленчĕç. Урай хăмисем ура айĕнчен хуçăлса аннăн туйăнчĕ ăна.

Çав вăхăтрах, Тошшă тытман пулсассăн, Ленă çĕре персе аначчĕ.

Тошшă çамрăк тухтăр—Антун—тесе чĕнечĕç

ăна хăйсен йалĕсем. Нумай та пулмасть вăл—Хусанта, медицинă институтĕнчен екзамен парса тухрĕ. Халĕ кунта, районри пульницара вăл аслă тухтăр.

Епĕр Тошшăпа Шупашкарти чăвашсен тĕп педтехникăмĕнче пĕрле вĕреннĕ. Питĕ аван йулташчĕ. Сарă кăлкан çўçлĕ, çинçе те йаштак пўлĕ, кăвак куçлă сарă ачаччĕ. Унăн тăрă таса куçĕсене, çурхи хĕвел пек ирĕлекен тутисене пăхсассăн, вăл йаланах савăнăçлăн çўренине пĕлме пулаччĕ.

Вăл Ленăн çавракă, пиççе çитнĕ панулми пек питне, чакăр, кўлĕ пек тарăн куçĕсенчен чылайччен тинкерсе, йуратулăн пăхса тăчĕ.

Анчах Ленăн куçĕнче халичченхи пек марри палăрчĕ.

— Тошшă, сана пĕри йĕрес пек килсе, хăй патне пыма йалăнчĕ.

— Ну?.. кам вара вăл?

— Камне пĕлместĕп. Упăшка вилет, хăвăртрах пыринчĕ—тет.

— Ах, епĕ ăна пĕлетĕп.

— Кам вăл?

— Вăл и? Райçĕрпай пуçлăхĕн арăмĕ.

Астумарĕ Тошшă, Ленăна сисĕнкĕсĕр хăй аллинчен вĕçертрĕ.

— Ех, йепле йуратаччĕ вăл хăйĕн упăшкине. Леш, Партас Германпе пĕлетĕн пулĕ? Шухăша кайрĕ Тошшă.

— Пĕлмесĕр. Йепле пĕлместĕп. Епĕр унпа виçĕмçул паллашнăччĕ,—чăнларĕ хирĕç Ленă.

— Самăй çав ĕнтĕ. Халĕ вăл вилес пек выртать.

— Йепле апла?

Вăт чирлерĕ те, йăвăрлансах карĕ.

— Ой, Тошшă,—хăвăрттăн чĕтренчĕ Ленă сасси.

— Мĕнле те пулин кайма тăрăшас пулать санăн унта.

— Çук. Епĕ унта кайма пултараймастăп, Ленă. Кайсан та чĕртейес çук. Май пур таран пулăшрăм ăна... Шутла-ха, хăçанчен кĕтнĕ епĕ çак куна. Шутласа пăх-ха хăвах. Мĕн чухлĕ вăхăт иртнĕ епĕр иксĕмĕр йулашки хут уйăрăлни. Халиччен... халиччен пĕрре те путлĕ хире-хирĕç ларса хамăрăн малалахи кунçулсем çинчен татăклăн калаçман. Ку пирĕн пурăнăçра чи кирли. Анчах хăçан?. Кăнтăрла епĕ йара кунĕпе ĕçре. Кунĕпе упа пек кĕрмĕшетĕп те, кайран вара мунчала пек сўсленсе аран-аран киле çитсе выртатăп.

Вăл хуллен, ачашшăн Ленăн пуçне тытса, ăна каллех вĕри тутинчен чуп турĕ. Çав вăхăтрах вăл Ленăн кăшт хĕрелсе кайнă питçăмарти çине, çаврăнса ўкнĕ сарă ылттăн пек çўç пайăрки çине пăхрĕ те ăна халличчен нихăçан курман пек ытарайми йуратса кайрĕ.

— Ытарайми илем!—хушрĕ вăл. Унтан каллех пĕчĕк ачана ыталанă пек ыталанса вĕççĕр чуп турĕ Ленăна.

Ленăн çавракă питлĕ сăн-сăпачĕ тулса çитнĕ уйăх пек çутă. Антуна хирĕç чуптăвассисĕр пуçне вăл урăх ним те тума пултараймарĕ.

— Тошшă, астуман та, ара санăн çийес килет пулĕ. Епĕ ухмах пек мансах кайнă?

Халех апат хатĕрлĕпĕр...

Хăйĕн çинçе, йанракан çамрăк сассипе сăмса анинчен хуллен çеç йурлакаласа, каçхи апат хатĕрлеме пуçларĕ Ленă.

Акă вăл ансăр та çўлĕ шкапран хутпа чĕркĕсе хунă йапаласем кăларса, алюмин кустрюль çине кăкай турарĕ. Примус чĕртсе, ăна примус çинче ăшалама тытăнчĕ. Пĕр тикĕс, пропеллĕр кĕрленĕ пек кĕрлеме тытăнчĕ примус. Вунсакăр çулхи çамрăк чĕрелĕ, выльаса кулса тăра сăн-сăпатлă Ленă хăйĕн тусĕшĕн килти хĕрарăм пекех апат хатĕрлет.

* *
*

Шăп. Примус кĕрлеме чарăннă. Ăшаланă аш сĕтел çинче пăсланса ларать. Ленăпа Тошшă пĕр чĕнмесĕр апатланаççĕ. Çурхи хаваслăхпа чĕрĕлнĕ шăнасем çеç сĕрлесе куçа йăмăхтарса çунакан лампă люстри çумне пыра-пыра çапăнаççĕ.

Ленă темшĕн салхулă.

— Тошшă, кирек-мĕнле шутласан та çав чирлĕ çын патне каймалах сан. Епĕ пĕлетĕп: пур-пĕрех есĕ кăмăллăн лăпланса лараймастăн. Маншăн... пулсан, ан та шухăшла.

— Епĕ пулнă унта темиçе хут та... мĕн тумалине тунă. Ун арăмĕ ĕнтĕ ăшĕ çуннипе çеç чупса килнĕ кунта, Ленăчкă,—терĕ те Тошшă, çак самантрах Ленăн пуçне хăй чĕрçи çине тайăлтарса йăлтăртатса тăракан сарă çўçне пайăркан-пайăркан уйăрма тытăнчĕ.

— Вăт çапла ларатпăр та, иксĕмĕр те чĕререн калаçатпăр. Хăвăн пурнăçу çинчен есĕ мана пĕрре те каласа памарăн. Йепле сана кукаму кунта йама пултарчĕ?

— Ах, есĕ пĕлместĕн, йепле лайăх вăл маншăн кукамай. Анчах вăл арçынсемпе ытлашши йавăçма хушмасть. Ай, çав ватă кукамайа иксĕмĕр çинчен чăннипех каласа парасчĕ. Мĕн-мĕн тет-ши вăл?

— Пĕлейместĕп. Анчах лайăххине кĕтмех çук. Сана кăна шанатăп.

— Тошшă, кала-ха, йепле есĕ мана пур йенчен те ĕненме пултаратăн?.

— Ленă, епĕ сана есĕ пĕр суймасăр ĕненме пултарнине тавçăрса илтĕм. Шутла-ха: епĕр иксĕмĕр те тăлăх, чухăн ўснĕскерсем. Есĕ те пĕчĕкренпех аçусăр, епĕ те аттеçĕр тарăхса ўснĕ.

— Итле-ха, Тошшă. Темчулах шутланă епĕ ун çинчен, çаплах та вĕçне шугласа çитереймен.

— Вĕçне? мĕн вĕçĕ? Иккĕмĕш пилĕкçуллăха пурнăçлатпăр. Социалисăм... ытарайми ырă пурăнăç... Сăвăнăçлă, телейлĕ кунçул кĕтет пире малала.

Чанкăр-р-р-р р!

— Мĕн?

— Телефон!

Тошшă хыпалансах йунашар пўлĕме туха чупрĕ.

Чăнкăр-р-р-р-р! чăнкăр-р р-р-р! чарăнмасăр чăнкăртатать телефон трубки.

Сывламасăр итлет Ленă, Антун телефонпа мĕн калаçасса.

Акă лери пўлĕмрен йăваш сасăсем илтĕнме пуçларĕç.

— Кто это? Лазарет? Ночное дежурство? В чем же дело? Несчастье! Что случилось?

— Отравили председателя колхоза? Нужно срочно принять меры! Привезите сюда! Нет подводы?!

Урăх илтĕнмерĕ. Анчах паллах, кăвакарса кайнă—кĕчĕ Антун.

Ленă çине тилмĕрнĕ пек пăхса чупрĕç унăн мăшăр куçĕсем пўлĕмре.

Акă иккĕшĕн те çунакан куçĕсем хире-хирĕç

пулчӗҫ. Иккӗшӗ те минутлӑха пӗр-пӗрин ҫине шӑтарас пек пӑхса чӗлхесӗрленсе тӑчӗҫ.

— Покровскинчен лазарета илсе килнӗ пӗр ҫынна колхоз председательне емелпе вӗлерме тӑнӑ, тет. Ну, мӗн тӑвас?

— Кайас... Кайас пулать...—тавӑрчӗ хирӗҫ Ленӑ, паҫӑрах хатӗрлесе хунӑ сӑмахне.

— Тӗрӗс, каймала,—килӗшрӗ Антун.

— Васка, кун пек чухне кашни ҫекунд та паха. Кашни ҫекунтах ҫын кун-ҫулне пӗтерме те, ҫӑлма та пултарать.

Урӑх сӑмах пулмарӗ. Калаҫма та вӑхӑт ҫук кун пек чухне. Антун хыпалансах картус тӑхӑнчӗ те, пальтоне тӑхӑнмасӑрах ҫӗклесе тухса чупрӗ.

— Питӗрӗнсе лар. Епӗ килеп,—пулчӗ Антунӑн сӑмаххи.

Йавӑр хыпаланакан ура сассисем таҫта инҫете кайса ҫухалчӗҫ. Каллех шӑп. Каллех пӗр сасӑ та ҫук. Каллех паҫӑрхи шӑнасем куҫа йӑмӑхтаракан лампӑ люстри ҫумне ҫапӑнса сӗрлени ҫеҫ илтӗнет Шӑп. Тӗлӗрет Ленӑ.

II

Ҫурхи каҫ. Колхоз кӗнчелерӗ. Пуйан Таңуш ҫурчӗ пулнӑ ку ӗлӗк. Пуйан тавраш тесессӗн, паллах, тайлӑк-тейлӗк ҫуртра нихӑҫан та пурӑнмасть.

Камӑн йалта чи лайӑх ҫуртсем?

Камӑн ҫуртсем тӑрне листӑ витнӗ?

Паллах, пуйанӑн. Арман хуҫисен, сутӑ тӑвакансен, ана-ҫаран тара илсе акакансен лайӑх ҫуртсем.

Хӑй ӗҫӗпеле ҫити-ҫитми турттӑнса пурӑнакан ҫын нихӑҫан та ҫакӑн пек пысӑк, виҫӗ пӳлӗмлӗ ҫурт лартайас ҫук.

Таҫтанах ахӑрса, сарӑлса лараччӗ ҫак ҫурт ӗлӗк. Кунӗн-ҫӗрӗн „чаплӑ“ пуйансем, хӑна-вӗрлесем татӑлмаҫчӗҫ. Чӑс-часах тенӗ пек ӳсӗрсен йурри ташши илтӗнеччӗ ку ҫуртра. Сахал мар чухӑнсем ӗлӗк илсе, пуҫ тайса иртсе кайаччӗҫ ку ҫурт умӗнчен. Курайманнисем те сахалах марччӗ. Хӑйӗн иртнӗ кун-ҫулӗнче пайтах ҫынна улталанӑ, пайтах вӗри куҫҫул йухтарттарнӑ Таңуш. Мӗн йухнӑ куҫҫӳле пӗр ҫӗре пуҫтарнӑ пулсан, пуйан Таңуша шыва кӗме те ҫитеччӗ-и тен.

Ҫук, епӗр ун ҫинчен питех шутламӑпӑр. Халӗ вӑл пурӗ-пӗрех пирӗн алӑра.

Ак ҫапла пулчӗ вӑл ӗҫ. Тухрӗ закон урӑхла, паллах, чухӑн майлӑ.

Ҫаплах, вӑкӑр пек йӑраланса пурӑначчӗ пуйан Таңуш. Мӑнтӑр пит-ҫӑмартилӗ сӑн-сӑпатлӑ. Хутран-ситрен халӑх ҫинче кӑтарткалаччӗ сӑн-сӑпатне. Унтан вӑрттӑн ӗҫ. Кулленхи ӗҫ. Вӑрттӑн сутӑ тӑвасси, вӑрттӑн ана-ҫаран илсе, тырӑ-пулӑ ылтлашши тӑвасси.

— Ха ха-ха-а! аппаланӑрах, аппаланӑр, ҫӗтӗк йӗмсем. Май килсен Совет влаҫӗпе те самайах пурӑнма пулать.

— Ҫук, сире епӗ нихӑҫан та хам алӑмран вӗҫертмӗп, тет вӑл тӗп сакайӗнчи тӑпра айне витсе лартнӑ чугун ӑшӗнче выртакан пӗчӗк ҫеҫ сарӑ ылттӑнӗсене чӑнкӑртаттарса пӑхса.

Унтан вӑл, ылтӑнпа тулнӑ пӗчӗк ҫеҫ чугунне ӗлӗкхи вырӑннех чаваласа хурать те, хыпаланса килкартине тухса кайать.

Ах, кунта,—тет вӑл ахалех ирӗлекен хулӑн тутисене пушшех сарса пӑрахса. Ҫавӑнтах чейе куҫӗсемпе, такамран шикленнӗ пек пулса, айккинеле пӑхса илет.

— Кам та пулин курсан?.. йури сыхласа тӑрсан?—пӑшӑрханнӑн хыҫса илет вӑл хура лапка сухалне. Ҫавӑнтах тата: ай, ытла та хӑравҫӑ ҫын еп, мӗн шикленмели пултӑр-ха ӗнтӗ?—пӑшӑлтатать хӑйне хӑй тарӑхса.

Ҫавӑнтах, пӗр самант сикмесӗр тӗлӗрсе тӑрать те:—ҫук, сыхланни аван йапала. Кам пӗлет, тен кашни утӑмрах ҫав кӗлмӗҫсем ман хыҫран, еп мӗн тунине сыхлаҫҫӗ-и тен?—тесе пӑшӑлтатать вӑл хӑй сӑмси айӗнчен.

Ҫак сӑмахсене каланӑ хыҫҫӑн, ҫӑмӑллӑн утать пуйан Таңуш. Ҫӑмӑл утать, анчах хӑйшӗн ҫеҫ ҫӑмӑллӑн пек. Тукмак пек йӑвӑр, мӑнтӑр урисем унӑн нихӑҫан та ҫӑмӑллӑн утма пултараймаҫҫӗ.

Йерипен сас кӑлармасӑр пахчана тухакан алӑка уҫса тухать вӑл, хапхи ҫапах, ӑна итлемесӗр, шӑлтӑрт! тӑвать ун хыҫӗнчен.

Кушак п к йӑпшӑнать лупасса. Ҫын ан куртӑрччӗ ытти йурать,—шутлать вӑл хӑй ӑшӗнче.

— Ха, курӗҫин тата, хамӑн пахча, кам пелет, тем тума килет ҫын,—тепӗр майлӑ шутлать тата ҫавӑнтах.

Лупас айӗнче алӑкпа хупланӑ шӑтӑк. Картлашкапа анмала шӑтӑкне. Тӗттӗм, сивӗ. Хӑрушӑ шӑтӑк а. Кӗрсессӗн-ҫанҫурӑм сӳлетсе кайать. Такамси ӗнкӗсӗр сиксе тухса йарса илсессӗн туйӑнать.—Ҫӳҫенмест те, хӑрамасть те пуйан Таңуш. Ӑна кашни кӗтес, кашни вырӑн паллӑ, ҫывӑх, аван.

Хӑйулӑн утса пырса хунар ӑшӗнчи йашка ҫу ҫуртине ҫутать вӑл. Сӗм хура шӑтӑка вӑйсӑр, хӗрлӗ йӑваш ҫутӑ ҫутатать.

Пысӑк, аслӑ путвал. Анчах йапалисем те аслӑ. Шутсӑр йапала. Пӗр пӳлӗмӗнче кулексемпе, миххи-миххипе тӗш тырӑ. Тепӗр пӳлӗмӗнче тумтир, кӗпе-йӗм те пур. унтан вара тӑварланӑ аш, йӳҫ пыл, тата ыт те.

Йулашки пӳлӗм. Пӳлӗм мар, йытӑ вити темеле кӑна. Тӗттӗм. Хӑруш. Хӑйулӑн, кӑмӑллӑн утать Таңуш.

Кӗптӗр-р, кӗ-птӗр!—Ай!—нихӑҫан та хӑраманччӗ, шарийех ҫухӑрса йачӗ Таңуш.

Йӑпӑр-йӑпӑр чупса тухрӗ ӑна хирӗҫ хӑмӑр мантӑр кушак. Астуман та, йапаласене шӑшисем ан ватчӑр тесе килсе йанӑччӗ пӗркун вӑл кушака. Кушакки те мӑнтӑр, Таңушта мӑнтӑр анчах темме сехрене хӑпартрӗ кушак.

— Ей-йай-а-а-а-й! турӑ сиртӗрех усала пирӗн патӑртан,—сӑхсӑхса илчӗ вӑл мӑнтӑр ӳтлӗ аллисене выльатса.

— Пур те тӗрӗс, хӑрамали ҫук,—тесе кӑмӑлне тултарса тухать вӑл кӑпӑртатса тӑракан хут укҫисене тимӗр арчине ҫӑрапа питӗрсе хурса.

Ку виҫӗ ҫул кайарах пулнӑ. Халӗ урӑх вӑхӑт. Урӑх самана. Аслӑлӑхӗпе мухтанса ларакан килҫурт та, мул та ҫук халь Таңушӑн.

— Ҫитӗ—санӑ ачам, хырӑмна ӳстерсе пурӑнма. Тарӑхса пӑх-ха есӗ те,—терӗҫ чухӑнсемпе вӑтамсем. Килтен кӑларчӗҫ: ҫуртне—колхоза, мулне—райӗҫтӑвкома пачӗҫ.

Ҫакӑ пӳртре ӗнтӗ колхоз кӗнчелерӗ. Виҫӗ пӳлӗм. Пӗринче правлени ӗҫлет, тепӗр икӗ пӳлӗмӗнче—ӗлӗк пуйан Таңуш патӗнче тарҫӑ пулса пурӑннӑ Микуш.

***

Ăшă, нўрлĕ кĕçĕрхи каç. Тăвăр—пăчă пўлĕмре Ыванса, тарăхса килнĕ Микуш районтан. Ши-ши-ши-ши-ш-и, чи-чи-чи, ш-ш-ш!—сĕрлет вĕреме лартнă сăмавар.

Унăн арăмĕ çаврака питкуçлă, çинçе шăмшаклă ытармала мар килĕшӳлĕ, йаланах кулса тăракан сăн-сăпатлă Нинă. Нинă Микушшăн хыпаланса чей вĕретет. Хыпаланат, чупкалат Нинă. Пĕр уйăхранпах килте пулманччĕ-вĕт Микуш. Вăл колхоз председателĕсен курсĕнче пулнă. Унтан пайан тин таврăнчĕ.

Вăхăт—ылтăн. Васкамала. Ĕç вĕрет. Ыран ирех çурхи акана тухмала. Çавăнпа та васкаса килнĕ ĕнтĕ Микуш районтан. Ываннă çинчен чей вĕретсе ĕçтересшĕн Нинă ăна. Акă вĕресе тухрĕ сăмавар. Кĕрлет, пăсланат çутăскер.

Урамра, кантăкран тăсăлса ӳкнĕ çинçĕ çутă урлă, хĕрарăм мĕлки каçса кайрĕ. Çемçе, пусăранса шыв ĕçсе тултарнă сĕткенлĕ çĕр—лăп, лач-лач тăват ура айĕнче. Кашни ура пусăмĕ хăй йĕрне хăварат ун çинче.

Аййахри пек шăплăх. Пĕр сас та çук. Çилсĕр, уйăхсăр, тĕтрелĕ, нўрлĕ çурхи каç. Йешĕрен йăмрасем те тутлă ăйăхра тĕлĕреççĕ.

— Килтех-ши?—ыйтрĕ хăй ăшĕнче Тамарă.

— Ах кайса пăхмасăр ăçтан пĕлес, кайса пăхас пулат,—сиксе тухрĕ тепĕр шухăшĕ.

Унтан вăл йерипен, кушак пек йăпшăнса, кантăк умнеле сулăнчĕ. Хуллен, сисĕнкĕсĕр тĕллерĕ куçĕсемпе пӳртнеле.

— Пур, кунтах, килнĕ,— пăшăлтатрĕ Тамарă хăвăрттăн.

Сисĕнкĕсĕр, сасартăк, кĕтмен çĕртен пырса кĕчĕ Тамарă пўлĕме.

Микуш та куншăн питех тĕлĕнмерĕ. Мĕнех тĕлĕнмели пур? Халичен те Микуш патне чылай килнĕ Тамарă.

Микуш кунта тарçăра пурăннă чухнех ăна паллань. Чипер, илемлĕ, йака тумланнă мăнкăмăллă хĕрччĕ Тамарă ун чухне. Пуйан çын хĕрĕ вĕт. Йепле мăнкăмăллă пулмăн?...

Анчах халĕ вăхăт пачах урăхла. Тĕнче пуçхĕрлĕ çаврăнчĕ, йуратат, килĕштерет Тамарă Микуша.

— Килсе курас терĕм... курманни нумай пулат. Йепле пурăнатăр, çĕнĕ кайăксем?

(Çĕн кайăксем) тесе халь кăна мăшăрланнăран каларĕ Тамарă Микушпа Нинăна.

— А-а-а, килех, Тамарă, кил. Тĕпелерех ирт!—пуçне çĕклерĕ Микуш халь кăна илсе килнĕ хаçатне вуласа ларнă çĕртен.

— Ĕçпехчĕ-им, йе ахалехчи—хушрĕ унтан.

— Килсе курас терĕм, ахалех,—тесе хучĕ Тамарă хĕрелсе.

Асаплăн туртăшса тăракан Тамарăна тинкерсе пăхсан хĕрхеннĕ пек пулчĕ Микуш.

— Вăл та çынах вĕт. Ашшĕ пуйан пулнă тесе вăл айăплăи-ха унта? Пирĕн пек асаплă ӳснĕ пулсан чăнахах та йурăхлă çын пулма пултараччĕ-и тен,—çак шухăшсемпе вăл çемçелчĕ.

— Аван йапала, килмеле. Ку йахăнта килме пăрахрăн?

— Май килмест килме. Санăн çĕнĕ арăм...—кӳренчĕ Тамарă.

Микуш Тамарă мĕншĕн йăнкăртатнине сисрĕ. Хăйне пăрахнăшăн тутине усса ларакан Тамарă çине хăйаккăн пăхса илчĕ.

— Ха айван, Нинăна уйăрттарса хăй качча пырасшăн пулĕçке ку,—шутларĕ Микуш.

— Нинă, çимĕçсем илсе кĕрсе ларт-ха,—урăххи çине йачĕ йумаха Микуш, леш пўлĕмре кĕштĕртетсе ĕçлекен арăмне васкатса.

***

Пăсланат сĕтел çинчи сăмавар. Пĕр сĕтел хушшинче виçĕ етем, виççĕшĕн те шухăш урăх.

— Мĕншĕн килнĕ вара кунта çак пуйан хĕрĕ?—ыйтат хăй ăшăнче хăй Нинă.

Пĕрре хĕрелет, тепре шуралат Тамарă. Тарăхат, туртăшат хăйĕн ăшĕнче.

Ыйтса пĕлес, мĕншĕн килнĕ-ха вара ку?—шутларĕ Нинă. Анчах ыйтма хăйаймарĕ.

— Чим-ха, епĕ сире улма пӳремечи çитерсе пăхам,—терĕ те тухса карĕ Нинă леш пўлĕме.

— Тавай çитер... тесе йулчĕ Микуш.

— Кил-ха, вăт есĕ кунта, шăрпăк çут! куçран тĕртсен те куç курмаст,—кăшкăрчĕ Нинă Микуша.

— Халь ех,—хыпаланса тухрĕ Микуш.

— Çук, персе пăрахма май килмест—сасă тухат,—шухăшларĕ Тамарă ашшĕ парса йанă кĕске пăшалне каллех кĕсйи тĕпнерех чиксе.

— Лайăх вăхăт. Аван!—кĕсйине хутпа чĕркесе хунă наркăмăша туртса кăларчĕ вăл.

Хыпалат, хăшăлтатат клас тăшманĕ. Алли чĕтрет. Чĕри сирпĕнсе тухас пек кăкрине тивретсех тапат. Виçмесĕрех икĕ чей стаканĕ çине силерĕ вăл наркăмăша.

— Мĕн турăм?—пĕрре шуралчĕ, тепре хĕрелчĕ Тамарă.—Епĕ ăна йурататăп... Чунран... Атте атте хушнă мана. Епĕ уйрăм ир... Çук, шухăшласси те çук, пурпĕрех епĕ пурăнмастăп Çук, вĕсем те пĕччĕр пĕрех хут!—терĕ те, кашăкпа пăтратрĕ стакан çинчи шыва.

— Ай, ытла тĕссĕрçке есĕ, Тамарă? Мĕн пулчĕ, чирлерĕни мĕн?

—Темшĕн пуç ыратат, чирлетĕп пулĕ.

Ак Микуш пысăккăн лăнкăртаттарса ĕçрĕ стакан çинчи чейе. Ак ĕçрĕ, ĕçрĕ, тутлăн туйанчĕ вĕри чей.

Кулак хĕрĕн çилĕпе тулнă, йăлтăртатакан куçĕсене курмарĕ Микуш.—Ех, Микуш!..

— Мĕн ку питĕ ывăнтăм?! Пĕтĕм шăмшак лăштăр кайрĕ, Нинă... Нинă тетĕп... Ой, вырăн сарха... Ой, темшĕн хĕсет хырăма, туртат, туллат ăшчике?!

Нинă васкаса чупса кĕчĕ.

— Мĕн?

Тамарă ăна чĕнмерĕ.

Пĕçерекен пулă пек авкаланма пуçларĕ Микуш. Вырăн сарма тухрĕ пўлĕме Нинă.

—Шăвăнма вăхăт,— шутларĕ кулак хĕрĕ; сисĕнкĕсĕр кĕчĕ, сисĕнкĕсĕрех тухса шурĕ.

Ах, пĕлчĕ Нинă мĕн иккенне. Ах, ура çыхланат. Тăшман ĕçĕ! Пульницана!—шутларĕ вăл,— лаша кӳлес.

Çунакан ăшчикĕпе тухса сирпĕнчĕ йала Нинă.

III

Ни вилĕ, ни чĕрĕ выртат етем. Пĕр пўлĕмре пĕччен выртат Микуш.

Хашкаса чупса çитрĕ Антун. Шурă халат тăхăнса утса пырса, тăчĕ Микуш умне.

— Кам?

— Ах, йепле апла?

Антунӑн алӑ ҫыхланчӗ, паллакан етем.

Ҫеккунтлӑха чӗмсӗрленчӗ Антун. Кун пек хӑраса курмунччӗ вӑл. Каҫхи дежурнӑйсем те тӗлӗнсе пӑхса тӑраҫҫӗ ӑна.

Таҫтан, пӗр хушӑкран, унӑн умне шухӑш ҫавӑрӑнса тухрӗ.

Асапланса вилекен ҫыннӑн пуҫне йарса тытрӗ те, унӑн ҫӑварне шӗвӗр пӳрнисене чиксе йарса кӑтӑклама пуҫларӗ.

Минутлӑха шӑп. Никам та чӗнмест. Маһала мӗн пулассине кӗтсе тӑраҫҫӗ пурте. Пурте пӑталаса хунӑ пек, вырӑнтан сикмесӗр тӑраҫҫӗ.

— Аха! тинех хӑсма тытӑнчӗ... Пурин те куҫӗсем савӑнӑҫлӑн выҕа пуҫларӗҫ.

Ай сапӑнчӗ!

Ай пӳлӗнчӗ!

— Диагноз,—кӑшкӑрчӗ Антун. Искусственное дыхание!—хушрӗ тата.

Ватӑ, хӑнӑхнӑ дежурнӑйсем ку сӑмахсем мӗн иккенне чухларӗҫ. Вӗсем пӗр самантрах ҫынна ик уринчен, ик аллинчен тытса авӑсса сывлатарма пуҫларӗҫ. Ӑнтӑхнӑ Микуш йӑвашшӑн, аҫсӑн сывласа йачӗ.

— Молока давайте!—кӑшкӑрчӗ каллех Антун. Ӑшӑтса лартнӑ сӗте васкаса пырса пачӗҫ. Сӗте пӗчӗк чей кашкипе ӑса-ӑса йараҫҫӗ ҫӑвартан дежурнӑйсем.

Каллех хӑсат. Йашка, кукӑҕ йӑванса тухат ӑшран.

Микуша ӑн килсе кӗчӗ. Ҫавах та хӑй ӑҫта выртнине ӑнланма пултараймаст-ха вӑл. Шурӑ тӗтре, хура мӗлке курӑнаҫҫӗ куҫ умне.

Антун лӑпланса, унӑн пуҫ вӗҫне вырнаҫса хуралллама ларчӗ.

## IV

Чылайччен куҫа йӑмӑхтаракан електрицӑ лампин ҕустри ҫине пӑхса тӗлӗрчӗ Ленӑ. Пӳлӗмре каличченхи пекех шӑп. Пасӑр сӗрлекен антранӑ ҫурхи шӑнасем те хуллен, пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн лӑпланса, канӑҫлӑх тӗнчине путрӗҫ.

Антун халӗ те ҫук, халӗ те тавӑрӑнман мӗскӗн.

Халех, нумай тӑмастӑп,—тесе йӑпатрӗ кайнӑ чухне. Анчах, анчах кӑна каланӑранпа икӗ сехет ҫапнӑ сасӑ хыйаррӑн пӑталарӗ чӗререн.

— Ҫук пурӗ-пӗрех кӗҫӗр киле пырса кӗме май килмест мана. Ватӑ кукамай патне ҫак вӑхӑтра епӗ мӗнле питпе пырса кӗрӗп...—Ӑссӑн сывларӗ вунсаккӑра пуснӑ ҫамрӑк, чун хавалла, йаштак ҫинҫе пилӗклӗ пиҫсе ҫитнӗ чипер хӗр.

Тӗлӗнмеле, сисместӗп те иртет хӑш чух вӑхӑт!

Ох, йепле вӑрӑмччӗ Шупашкарта иртернӗ вӑхӑт. Кашни минут сехет пекчӗ, кашни сехӗт—ерне пек, ерне—уйӑх пек туйӑначчӗ ун чухне.

Пурӑнӑҫ аванччӗ... Кашни курссант—комунис йе комсомол; пурте савӑнӑҫлӑ, вӑйпитти; ӗҫре ҫулӑмланса ҫунса пиҫнӗ етемсем йӗри-тавра.

Кашни курсант,кашни комсомолӗс, кашни комунис нумайранпа йал хушшинче ӗҫлесе курнӑ. Пайтах тумхах курнӑ вӗсем кулленхи ӗҫре. Пайтах вӗсем клас тӑшманӗсемпе, кулаксемпе обыватӗлсемпе, кулак майлӑ ҫынсемпе, вак буржуалӑ шухӑшла етемсемпе, социалисӑм строительствинчи бӳрократ,вредитӗлсемпе хире-хирӗҫ тӑрса вирлӗн кӗрешнӗ. Клас сисӗмлӗхӗ вӗсен кашни мускӑла, пуҫ мимин кашни клеткине вырнаҫнӑ. Куҫран пӑхсах пӗлеҫҫӗ вӗсем клас тӑшманне.

Штурмлӑ кампанисенсе пӗр йӑнӑшсӑр иртернӗ практик етеммисем шкул сакки ҫинче ултӑ уйӑх хушши ларса полит-курсра вӗренчӗҫ.

Ҫав курсантсенчен пӗри,—активлӑ членӗччӗ Ленӑ.

Унчухне халиччен ӗмӗрте илтмен, илтме шутламан ҫӗнӗ, тӗлӗнмеле сӑмахсем: „истори, философи, диалектика, метафизика, сен-симонисӑм, утопический социалисӑм“—т. ыт. те. хӑлхана пырапыра кӗреҫҫӗ. Пырса кӗреҫҫӗ ҫеҫ мар, кашни ҫӗнӗ сӑмахӗ сунтал ҫине млатукпа шакканӑ пек пырса ҫапӑнса, лакӑмланса вырнаҫса лараҫҫӗ пуҫ мимине.

Нумай та мар ҫак ултӑ уйӑх хушши вӑхӑт. Ҫапах та Ленӑшӑн темрен те вӑрӑм туйӑнчӗ. Йаланах пушӑ вӑхӑт пулсассӑн, кунти пурӑнӑҫ ҫинчен шутлаччӗ вӑл. Каҫхине театӑртан, йе вӗренӳрен таврӑннӑ чухне, сисмен ҫӗртен Тошшӑ siксе тухнӑн туйӑначчӗ ӑна.

Акӑ ӗнтӗ халӗ Тошшӑ та инҫе мар. Пӗчӗкрен аталанса ӳснӗ ҫӗршыв. Кунти кашни кӗтес, кашни хура мӗлки ҫывӑх Ленӑна.

— Пурӑнӑҫ, пурӑнӑҫ ҫапла ыйтат. Ачашланма вӑхӑт мар,—тавҫӑрса илет вара вӑл кун пек чух болҕшевикла чӗрипе.

Акӑ тепӗр икӗ кунтан каллех йала тухса каймала, каллех кулленхи ӗҫ, чечекленен колхоз, йал, тӗрлӗ камппани пӗр йенчен. Ҫавӑнтах, тепӗр йенчен—шӑлне хӑйранӑ кулак таврашӗсем, вӗсем майлисем сиксе тухаҫҫӗ куҫ умне. Каллех, каллех ырми-канмисӗр ӗҫ. Пысӑк ӗҫ.

Тӗлӗрекен Ленӑн куҫӗсем хупӑнаҫҫӗ. Куҫ хупаххине такам пусса антарнӑ пек йурийех усӑнат вӑл айалала.

— Ай-й, пусмӑрласах пусмӑрларӗ ку ыйӑх. Ҫывӑрмастӑп ӗнтӗ, тесе етажеркӑ ҫинчен пӗр кӗнекине суйласа вулама тытӑнчӗ вӑл. Тулта, чӳрече умӗнче, пирвайхи шӑпчӑк чуна килентерекен йурра шӑратма пуҫларӗ.

О-о-о-й, вӑрӑм хӗл хыҫҫӑн, шӑпчӑк йурри!—сасартӑк ӑйхи вӗҫрӗ Ленӑн.

Кусне кӗнеке ҫинчен илсе тинкерсех вӑл пӑхрӗ тул йенне. Тулта каҫхинехи пекех усӑ, нӳрӗ сывлӑш пӳрт ҫумне туйаланнӑ.

Чӳрече умӗнче вунсакӑр ҫулхи хӗр пекех ҫинҫе йаштака ҫӗмӗрт йӑвӑҫҫи чечен симӗс ҫулҫисемпе йӗрӗшсе ларат. Нумай вӑхӑт иртмӗ, ҫак кунсенчех ак вӑл ҫеҫкеленсе шурӑ шӑналӑк карӗ. Вара хура ҫӗмӗрт йӑвӑҫҫи хурапа мар, шурӑ катанпирпек тӗсӗпе мухтанӗ. Ҫутҫанталӑка тутлӑ ырӑ шӑршӑпа килентерӗ.

— А-а-а-х, сисмен те: шурӑм-пуҫӗ ҫурҫӗр йенчен шуса тухса Атӑл ҫине, икӗ ҫыран хӗррине тӑсӑлса выртнӑ.

Пирвайхи шӑпчӑк ҫаплах йурра шӑратат.

— Тук-тук-тук! Ленӑ, Ленӑ-ӑ-ӑ! ҫывӑрса кайрӑни?

— А-а-а-й, шартах сикрӗм.

Чӑнкӑрт, турӗ пуҕницан мӑнӑ алӑкӗ. Уҫӑлчӗ.

— Ҫак таранччен?!..

— Кӗтме лекрӗ, мӗн тӑвас тетӗн?, кашпинчех епӗр каланӑ пек пулмаст пурӑнӑҫра,—тавӑрчӗ ӑна хирӗҫ Ленӑ.

— Ой, мӗн чухлӗ тав сана, Ленӑ!—хыттӑн чӑмӑртарӗ Ленӑн хулне Антун.

— Ҫук, ку сахал, епӗр болҕшевиксем кун пек

çeç мар, тата ытларах чăтма пултаратпăр, кирлĕ тe!—хушса хучĕ Ленă, вăтаннă пек пулса Антуна хирĕç.

— Çапла, çапла... чăтмала. Çавăн йатне çуралнă та епĕр,—килĕшрĕç Ленăпа Антун.

Иккĕшĕ те, шурă çи витнĕ крават çине ларса куçĕсемпе хире-хирĕç пăхрĕç.

— Ну, мĕнле вилет-и, чĕрлет-и,—ыйтрĕ Ленă чăтаймасăр.

— Чĕрлет,.. анчах тепĕр ернесĕр ураланса çитеймест. Мĕншĕн тесен вăхăт нумай иртнĕ. Лашапа 15 çухрăм килнĕ вĕт.

— Кам вăл?

— Комсомолĕç, партине куçма тивĕç кандидат. „Совет" колхозăн председателĕ. Ĕнер çеç вăл районран, колхоз председателĕсен курсне вĕренсе пĕтерсе, çуракине васкаса йала кайнă. Питĕ хастар, матур комсомолĕç. Епĕ ăна ударниксен слотĕнче палланă. Çивĕч ачаччĕ.

— Мĕнле пулнă-ха апла?

— Ĕçĕ çапла пулнă: вăл Тамарă йатлă кулак хĕрне тарçăра пурăннă чухнех килĕштернĕ. Анчах ку ăна питех çаврăнса пăхман.

Раскулаччĕт тунă хыççăн ашшĕсене Çĕпĕре йанă. Вара Тамарă колхоз пуçлăхĕ çумне çилĕм пекех çыпăçма пуçланă. Кăшт кăна каласкаланă пулĕ... Çапах та клас тăшманĕпе комсомолĕç нийепле те килĕшме пултарайман. Хăй çамрăк тарçă хăйулă комсомолкăпа пĕрлешсе, пĕрле пурăнма пуçланă. Тамарă вара çиленсе, тата Çĕпĕртен таврăннă ашшĕ хĕтĕртнипе, ăна наркăмăш парат.

Ах, таçта та сыхлат клас тăшманĕ!.. Анчах, нихăçан та клас тăшманĕ аллине парăнма шутлас çук епĕ—хĕрсе карĕ Ленă.

— Халĕ аптрамалийех çук. Урăлма пуçларĕ ĕнтĕ.

— Клас тăшманĕ кашни кĕтесрех сыхлат.

— Да, клас тăшманĕ çывăрмат, кашни кун хăрушăран хăрушă майсем шыраса тупат. Кунран кун ытларах та ытларах хăйрат мукалнă шăлне,—килĕшрĕ Антун.

— Анчах, епĕр те çывăрмастпăр. Епĕр те татах чийе, татах çивчĕ пулатпăр.

— Çапла пулмала çав: клас сисĕмлĕхпе сыхлăха çивĕчлетме кирлĕ,—тет Антун.

Антун калат, анчах куçĕ-пуçĕ сапаланчăк. Чĕлхи хĕç пек касат, хăйĕн сăнĕ сарăхнă.

Чылайччен калаçрĕç. Вĕсем иккĕш нумайччен ытарайми сăмах вакларĕç пĕр-пĕринпе.

Чĕлхе шăмăсăр та çапах ывăнат. Чĕре чарăнмăсăр тапат те, пур-пĕрех каçпа ăна канăçлăх кирлĕ.

Егем ывăнми машшин мар: канат—ĕçлет, ĕçлет ывăнат, каллех канмала.

Çĕр каçах куç хупмасăр кĕрешнĕ Антунăн ыйăх пуснă пек пулчĕ пулас. Тĕссĕрленсе сарăхнă сăн сăпатне ывăннă сăн çапрĕ.

— Тошшă, санăн çывăрасу килет,—астутарчĕ ăна Ленă.

— Ех, Ленă, лаша мар вĕт епĕ. Хама-хăм пăртак пĕлетĕп. Лаша та хăваласан, шăп такăнса ӳкичченех çаплах чупат.

Çавăнтах вăл хăй пуçне Ленă чĕрçи çине хурса анасласа илчĕ.

Минутлăха шăп.

Ахалех хирĕçет Тошшă Ленăна, хăй пĕр самантрах ыйăха чăсрĕ.

Ленă, пĕчĕк ача пек тĕршĕнсе çывăракан Тошшăна хĕрхеннĕн ăшă куçсемпе пăхса илчĕ те, унăн пуçне хуллен крават çине илсе хурса кăшт уçăлса тăракан хĕрлĕ гутисенчен чупгуса илчĕ. Çакăн хыççăнах ăна çемçе угиаĕ лпа витсе хучĕ.

Урам хунарĕсем сӳнн Çапах та хула халăхĕ ăйăхран вăранайман-ха.

Хĕвел тухнă. Çапах-ха тулăх Атăлăн тип тикĕс те пăтранчăк шывĕ урлă хăватлăн касайман унăн çути. Сĕт пек шурă тĕгре мăкăрланат Атăл çинче.

Ленă, Тошшă çине йулашки хут пăхса илчĕ те, пӳлĕм алăксене хулен хупса пыльчăклă урам тăрăх туса чупрĕ

Тулта сулхăн, нӳрĕ, сĕт пек шурă тĕтрелĕ апрелĕн йулашки ирĕ анаслат.

# Пирĕн вăй

**Мих. Ҫамаҫ.**

Çутатат çĕнтерӳ хунарри
Катари тинĕсри парăса...
Мĕлйуншар йышсемпе хунар-и
Тĕнчене тулгарма хăвăртрах...

Кам найан—çавă çех арканат,
Çавă çеç çухатат вутлăçа...
Çĕнтерӳ хирĕнчи йарханах
Вăл нихçан пулас çук утлă çар.

Епĕр çар—мĕлйуншар ĕретсемпех,
Нихăçан пулас çук—хур, хăрах.
Пирĕн вăй Днепрогрес пăрки пек,
Арăслан çиллипе тулхăрат...

Пирĕн куç çивĕчрен çивĕчрех,
Вăл курат мĕнпур пек инçете
Пирĕн рет класла çивĕч рет
Пирĕн рет класла батарей...»

Епĕр çар—мĕлйунсен тĕркипех
Нихăçан пулас çук—хур, хăрах..
Пирĕн вăй Днепрогрес пăрки пек
Арăслан çиллипе тулхăрат"...

9-6—33 ç. Çирĕклĕ.

# Совет влаçĕшĕн йалсенче кĕрешни

**П. А. Соловйов.**

(Аса илнисем).

1918-мĕш çулта февралĕн 2—3 кунĕсенче епĕ демобилизаци йĕркипе киле таврăнтăм. Вăл вăхăтра ман тантăшсем те нумайĕшĕ киле таврăннăччĕ. Пирĕн йалта (халĥхи Тутаркас районĕнче) влаç унчух улшăнса çитеймен; йалта старăстă, виç çул малтан суйланăскерех ларать.

Февралĕн 8-мĕш кунне тин йалти пуху тутартăмăр та, Михаил Коллакова суйласа йал комиссарне кĕртрĕмĕр.

Çав ерне рех çĕр танаштарасси çинчен ĕç татма тепĕр пуху тумала пулчĕ. Пирĕн опча тата виçĕ йал кĕрет: Ойкасси, Мемеккасси, Тол-касси. Февралĕн 23-мĕшĕнче Ойкасра пĕтĕм опчă пуххи турăмăр. Унта çĕр ĕçĕ пирки 4 çынтан (М. Косăрĕв Ф. Клопăв, М. Каçейĕв тата епĕ) комиссçи турĕç. Çак пухурах вулăс старшини çинчен ыйту лартрăмăр. Вăл ыйтăва ытти йалсенче те лартнă. Ун чухне вулăс старшини Чӳрекассисем Салĥнĕкăв. унăн помошникĕ—Сĕнтĕрти Мороçин. Салĥнĕкăв пире земски начальнĕк Аристăвран ыйтмасăр вулăс пуххи тутармасть. Епĕр çекретар урлă ĕçе уçса, пухăва чĕнекен повесткăсем салатрăмăр. Епĕ вăл пухура Чикме (Козмодемйанск) хулине кайса мĕнле хыпарсем пуррине пĕлсе килес, терĕм.

Чикмере епĕ рабочи депутатсен советне кĕрсе В. Париков йулташпа (председателпе) калаçрăм. Унтан хресчен депутачĕсен Советне кĕрсе Лĥюбимăв йулташпа (председателпе) калаçрăм. Лĥюбимăв Катикассисемччĕ. Кайран земски управăна кĕрсе Посыпкин çекретарпе сăмахларăм. Вăл каларĕ: земски начальнĕксем вырăнтан тухнă, халĕ вĕсенĕн нимĕнле влаç та çук, терĕ. Вара епĕ киле таврăнтăм.

Епĕ таврăннă тĕле вулăс пуххи пуçтараннă. Халăх пит нумай пуханнă. Епир кашни йалтан 15-шер çын чĕннĕччĕ; ку пухха кашни йалтан 30—40 çын та пынă пулĕ. Мана паллакан, вăрçăран таврăннă салтаксем те пит нумайччĕ пухура.

Пуху повестки çинчен виçĕ ыйту тăрать: 1) Вулăс комиссарĕпе ун помошникне суйласси; 2) Чиркӳ, мăнастир, улпут, хуçа çĕрĕсене илсе опчă халăхне парасси, 3) Уйезри совета йама икĕ представител суйласси.

Пуху халăх вулăс комиссарне мана суйласа кĕртесшĕн. Епĕ хама урăх вырăна, Сĕвери чукун çул сыхлакан отретăн началнĕкне чĕннĕрен, вĕсем суйланине йышăнмасăр тăтăм, вара пуху Йермакова суйларĕ. Уйезри совет çавах мана вăйпах вулăс комиссарне кĕртрĕ.

Вулăс пухăвĕ Карăшлăх мăнастирĕн çĕрне, Мелнĕкăв çĕрне, удел чиркӳ çĕрĕсене 300 теçетин (330 га.) ĕçхалăхĕ аллине илмеле турĕ те, ку çĕрсене 5 опчăна: Илйински, Сĕнтĕр, Вăтаçĕр Шашкар, Хачăк, Çергейĕвкă опчисене памала турĕ. Кулаксем хирĕç тăчĕç те çĕнтереймерĕç. Çак пухурах, йалти старăстăсем вырăнне, комиссарсем суйларăмăр.

Халĕ ĕнтĕ опчă çине панă уйрăм хуçалăхсем хушшинче танаштармали пулчĕ. Кулаксем пире хирĕç вирлĕнех тăма пуçларĕç. Вĕсем, Дегтйаров пуçарнипе, пиртен вăрттăн Мамек-кассинче пуху тунă та туртса илнĕ çĕре валеçес текенсене çĕмĕрсе тăкас, пирĕн пĕтĕм хуçалăха салатас тесе шутланă. Вĕсем Шашкара пынă та, Федăр Цыпкин ашшĕпе амăшне хĕнесе пĕтернĕ, нӳхрепри сăрине кăларса ĕçнĕ, тăкнă. Вĕсемех Илйа Ваççилйĕвпа Алексей Петрова хĕнесе пĕтернĕ. Унтан пирĕн йала пыма шухăшланă. Ăна илтсен, епĕ çĕрхутах виçĕ йулташа Шашкар вăррине йатăм, вăрçăран таврăннă салтаксене хамăр йала пухха пыма чĕнтертĕм. Пурте пухăнар та кулаксене хирĕç тăма пĕр тăрук тухар, терĕмĕр. Пуху пуçтарăнсан, мана Н. Соловйов пырса чĕнчĕ. Епĕр пуху халăхĕ патне çитнĕ чух халăх мана хирĕç кăшкăрма тапратрĕ. Мана тем те пĕр каласа пĕтерчĕç: „Пӳтсĕр, ултавçă, сана вĕлерсен те ним те пулас çук!"—теççĕ. Çак вăхăтрах хамăр йалсем—Иван Ваççилч—чупса пычĕ те, мана кăкăртан йарса илчĕ, пуçран пĕр икĕ хут çапса илчĕ. Епĕ кăсйерен револьвĕр туртса кăларатăм та тӳрех халăха хирĕç утрăм, вара лавка патĕнчи çӳлĕрех вырăна тăрса, йулташсене пĕр çĕре пуçтарăнма чĕнтĕм. Револьвĕре курсан халăх лăпланчĕ.

Вăрçăран таврăннă салтаксем пĕр çĕре пуçтарăнса тăтăмăр. Епĕ вĕсене çур сехете йахăн каласа тăтăм, йулашкинчен калатăп: атăр, ачасем, çак кулаксене вăрçăри пек тыткалар, тетĕп. Ман йулташсем халăха пăлхатакансене: Шĕшлĕ Çиркине, Кома Йехĕмне, Ваçли Иванне, Патуш Кĕркурине чышкалама тапратрĕç. Лешсем тарма тытăнчĕç. Кусене хăратса хамăр çийеле тухсан, çапла канашларăмăр: вăрçăран таврăннă салтака кам тĕкĕнет, кам çĕр танаштарассине хирĕç тăрать, ăна тытса Чикмене кайса хуптармала, персе пăрахтармала. Çак сăмахсенех хут çине çыртăмăр та, вăл хут çине пур йулташсем те алă пусрĕç. Çак майпа вара хамăр хуçалăха кулаксем пĕтерес хăрушлăхран хăтартăмăр.

Вăл вăхăтра çпекулĥантсем тырăпа пит çӳречĕç. Йуринран, Ваçил-Сурскинчен, Ветлĕрен килекенсем кашни кунах лодкă çине тийесе тырă, çăнăх темĕн чул иле-иле кайаççĕ. Çак тырра вĕсем Кĕнер арманĕнчен, Кĕнер перевозĕнчен, Шашкар вăрринчен, Илйинскинчен, Токăрĕв перевозĕнчен тийечĕç. Вăрçăран таврăннă салтаксен килĕсенче пĕр татăк çăкăр та çук, хăшĕ-пĕри Чикме упродкомĕнчен çимели илечĕç. Йалта илес пулсан, тырă шутсăр хаклăччĕ. Çавăнпа епĕр пиллĕкĕн: И. Белов, Н. Соловйов, А. Таймаскин, Т. Таркăв, тата епĕ—çпекулĥантсене тытма шутларăмăр. Пирĕн мĕнпур пăшал хатĕрĕ ман алăри револьвĕр анчах. Çавах епĕ вĕсене Шашкар-вăррине çурçĕр тĕлĕнче çпекулĥантсене сыхлама çитме каларăм. А. Таймаскĕнпа ытти йулташсене те (Ал. Петрова, И. Ваçилйĕва, Ф. Ципкина) çав каçхине хамăра пулăшма чĕнтĕмĕр.

Каçпала, 10 сехетре, ним хăрамасăр Шашкар вăррине карăмăр. Ал. Петровпа Ил. Ваçилйĕв унта пирĕнтен малтан çитнĕ. Нумайах кĕтсе тăмарăмăр, куратпăр—улăх тăрăх 4 лав пыраççĕ. Çаксем лав

ҫинчи миххисене ҫыр хӗррине пушатрӗҫ те лашисене кайала йачӗҫ; тырри патне иккӗн анчах йулчӗҫ. Пӗри улӑм ҫунтарса паллӑ кӑтартрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫур сехетрен, вӗсем патне хӑвалӑхран пӗр лодкӑпа 2 ҫын тухаҫҫӗ. Кусем тӳрех пирӗн йенне каҫаҫҫӗ. Лодкӑ ҫыран хӗррине тухсан, ҫпекуљантсем тӑваттӑн пулма пултараҫҫӗ: ҫакӑн пирки вӗсене ҫӗнтерме кайран йӑвӑртарах пулатӑ тесе, епӗр вӗсем ҫитиччене вӑрмантан чупса тухрӑмӑр. Епӗ, хӑратмала, револњвӗртен ҫӳлеле персе йатӑм. Тырӑ миххисем патӗнче тӑракан 2 ҫпекуљанта арӗслерӗмӗр. Ҫпекуљантсем—Шатракассисем: вӗсем арман хуҫи Мӗтри Ҫӗопкипе унӑн шӑлнӗ пулнӑ. Ҫпекуљантсем тыррине парасшӑн мар, тархаслаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах А. Петровпа И. Ваҫҫилйӗв та чупса ҫитеҫҫӗ. Епӗр ҫпекуљантсен сӑмахӗсене итлемерӗмӗр. 2 ҫынлӑ лодкӑ Атӑл тӑрӑх анатала йарӑнчӗ. Ҫыннисене паллаймарӑмӑр. Тытнӑ ҫпекуљантсене йала илсе кайрӑмӑр Тыррине 5-шер пӑтлӑ 16 миххе, мӗнпурӗ 80 пӑт—И. Ваҫҫилйӗв патне хутӑмӑр.

Ирпеле пуху туса, ҫпекуљантсенчен тырӑ тытнине каласа кӑтартрӑмӑр. Тыррине ҫимели пӗтнӗ ҫынсене валеҫсе патӑмӑр. Тырӑ хуҫис-не укҫа тӳлемесӗрех киле йатӑмӑр, ҫакӑнпа пӗрлех вӗсене ҫпекуљаци тӑвассине пӑрахма хушрӑмӑр.

Ҫав кунхинех епӗ Сӗнтӗре Йермаков патне карӑм. Йермаковран йулташсене вањњи ҫпекуљантсемпе кӗрешме пӑшал ыйтатӑп. Йермаков пӑшал памарӗ.—Апла хӑтланма йурамастӑ, вӑл хурах пусни пулатӑ сирӗн, тесе хучӗ вӑл. Епӗ ӑна хам алари мандата кӑтартрӑм. Сӗве станцинчи охранӑна кӳртнӗ мандат мана пысӑк ирӗк параччӗ. Ку мандат мана усламҫӑсен тыррине туртса илме, укҫасӑр конфискацилеме, тата револњуци йӗркине пӑхӑнман влаҫ представителӗсене арӗслеме те ирӗк параччӗ. Йермаков ҫак хута вуласан манпа тавлашма пӑрахрӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн епӗ Чикмене, уйесри рабочи депутатсен советне телефонпа ыйтса, вӑл совет председателне В. А. Баринӑвпа калаҫрӑм. Баринӑва епӗ хамӑр тырӑ тытни ҫинчен пӗлтертӗм, тата малала та ҫпекуљаципе кӗрешмӗ ирӗк ыйтрӑм. Вӑл каларӗ: Есӗ болњшевик пулса ӗҫле, тырӑ тийесе кайакансене тытӑр, илнӗ тыррисене валеҫсе парӑр, пулӑшу кунтан парӑпӑр,—терӗ. Епӗ ыйтнипе вӑл часах телеграм йачӗ: Ку телеграммӑра: Васкавлӑ. Сӗнтӗр. Соловйова. Вӑрҫӑран таварӑннӑ ырӑнти салтаксенчен картлакан отретсем организацилӗр. Тырӑпа ҫӳрекен ҫпекуљантсене тытӑр. Тытса илнӗ тыррине Илйински продбазӑна леҫӗр, пӗр пайне отретра ӗҫлекенсене парӑр. Рабочи депутатсен Совечӗ: Парикӑв, Краҫилникӑв (Краҫилникӑв Чикме уйезӗнчи хӗрлӗ гвардисен начањникӗччӗ)—тесе ҫырнӑ.

Ҫак телеграммӑна илсен, манӑн йулташсем тупса отрет организацилемеле пулчӗ. Ҫав куннех каҫпала епӗ хамӑр йалти салтаксене пуҫтарса пуху турӑм та ҫак телеграмма вуласа патӑм, хамӑран халех мӗн тумалине каласа кӑтартрӑм. Отрета кӗме 23 ҫын тупӑнчӗ. Епӗ вӗсене виҫӗ отрета уйӑртӑм.

Ку отретсене туганах, вӗсенчӗн—1-мӗш отретне Кӗнер перевозне тата унти армана сыхлама йатӑм. Ку отретре ҫиччӗн пулчӗҫ, вӗсен пуҫӗ—Ник. Соловйов. 2-мӗш отрет Шашкар пристӑнне сыхлатӑ: Кунта вуннӑн, отрет пуҫӗ—Иван Белов. 3-мӗш отрет—Мӑнҫула, Карӑшлӑх мӑнастирӗ патӗнче сыхлатӑ. Унта—улттӑн, асли—Маркӑв Димитри.

Пӗр каҫхине Кӗнер перевозне карӑмӑр та, ҫул ҫинче 10 лав ҫӑнӑх тытрӑмӑр. Ку лавсене Ҫеҫмери кулак—арман хуҫи Орлов Макҫӑмӗ—Атӑл хӗрне илсе кайатӑ мӗн. Пире курсан лавсем тӑрма шухӑшларӗҫ. Епӗ вӗсене:—пӗретпӗр! тесе кӑшкӑртӑм. Вара вӗсем лавсене тӑратрӗҫ. Пӗр револњвӗрпех хӑратса, ҫак лавсене ҫӑнӑха Шашкара леҫме хушрӑм; 200 пӑт ҫӑнӑх Шашкара илсе кайса пушатрӑмӑр.

Шашкарти отрет ҫав каҫхинех 350 пӑт тырӑ тытнӑ. Карӑшлӑхри 63 пӑт тытнӑ. Тытакан отретсенчи салтаксене пӗрер пӑт патӑмӑр та, ыттисене Илйинскине леҫрӗмӗр.

Тепӗр кунне отрета кӗрес текен 60 ҫынна ҫитрӗ. Кӗнер арманне 2 отрет йатӑм. Мӑнҫул ҫине Маркӑв отретне йатӑм. Кӗнер арманӗнчи отретсем никама та тыгайман. Мӑнҫул ҫинчи Маркӑв Митрине ҫпекуљантсем хӑйне тытса вӗлернӗ те,—ӑна йываҫ ҫине ҫакса хӑварнӑ Ман отрет хам Чикмене куҫиччен 73 ҫынна ҫитрӗ.

## Чикмере пурӑнни

Мана упродком членне кӗртрӗҫ. Ун чухне упродкомиссар—ҫармӑс Соколов В. А.—матрос, тепӗр членӗ—Ҫмирновчӗ. Упродкома арми вањњи ҫӑкӑр тӑратма хушнӑ! Ҫӑкӑр ҫителӗклӗ пӗҫерме хулара пысӑк пекарни тавраша ҫук. Вара епӗ рабочипе салтак депутачӗсен совечӗн президиумне: хулари кӑмакалӑ ҫурт хуҫисене пурне те кашни кун 20-шер кӗренке пӗҫертермеле тутарас, текен ыйту лартрӑм. Ҫак ыйтӑва йышӑнчӗҫ те, арми вањњи ҫӑкӑр ҫителӗклӗ тӑратма пуҫларӑмӑр.

Ийуљ уйӑхӗнче уйесри советсен сйесӗ пуҫтарӑнчӗ. Ыйтусем ҫаксем пулчӗҫ: 1) Хӗрлӗ ҫара мобилизацилесси; 2) армине ҫӑкӑр тӑратасси тата ытти те. Ҫак вӑхӑтрах Питӗртен Йерохин комисар отретпала персе ҫитрӗ. Вӑл сйесра та ларчӗ. Сйес совет влаҫӗн политикне хирӗҫ пычӗ.

— Хӗрлӗ ҫара пӗр ҫын та памастпӑр, арми вањњи пӗр кӗренке те ҫӑкӑр памастпӑр, хутте мӗнле вӑрҫӑр,—теҫҫӗ сйес делегачӗсем нумайӑшӗ. Краҫилникӑв та, епӗ те сйеса кирлӗ ыйтусем ҫинчен каласа ӑнлантаратпӑр. Анчах сйес ҫапах нимӗн те итлемест. Вара политкомисар Йерохин хӑй отретне каланчча ҫине пулемет ларттаратӑ те сйес пухӑнӑ гимнаҫи ҫуртне пӗтерме хушатӑ. Пуљкӑсем шӑлетсе пыма пуҫларӗҫ; чӳрече кантӑксем ҫӗмӗрлчӗҫ. Пӗр ҫынна пуљкӑ лексе суранлатрӗ. Сйесра ларакансем хӑшӗ чӳречерен сикме тапратрӗҫ. Вара сйес саланчӗ. Епӗ, Баринӑв, Краҫиљникӑв, Йурйӗвсем, Виноградӑв, тата Родионӑв анчах тӑрса йултӑмӑр.

**Йулашки ҫитес №-те пулатӑ.**

# Литературă кружокĕсен вĕренӳ ĕçĕсем пирки.

**Патман.**

Чăваш совет писателĕсен Оргкомитетне литературă кружокĕсенчен вĕренмели программăсем ыйтса çырусем нумай киле пуçларĕç, тепĕр чухне тата çав ыйтупах литкружок членĕсем хăйсем те киле-киле кайаççĕ. Çакăн пирки епĕ пĕр-икĕ сăмах каласшăн.

Чылай кружоксем хăйсен вĕренӳ ĕçне програмăсен пункчĕсене пурнăçласа пынинче çеç кураççĕ; програмăсем çук тесе, вĕсем, хăйсен йенчен нимĕн тумасăрах, аллисене усса лараççĕ. Програмăсене никам та—кирлĕ мар,—темест, вĕсем кирлĕ те, усă та нумай пама пултараççĕ. Пуринчен ытла программăсем, кружоксене йертсе пыракансем литературăпа политикă йенчен çителĕклĕн таканланайман пулсан, питех те кирлĕ. Анчах çапах та ĕç пĕр прграммăсенче çеç мар. Ĕç пуринчен ытла кружоксем хăйсем тимлĕрех пулнинче, вĕсем чăнахах та вĕренес тесе тăрăшнинче. Самахран, пирĕн кружоксенчен хăшпĕрисем литературăна сахал вулаççĕ-мĕн, хаçат-журналсем те сыранса илмеççĕ мĕн. Çитменнине тата йалсенчи вулав çурчĕсемпе библиотекăсенче те художествалă литературă тата хаçат-журналсем çителĕксĕррине аса илсен, кружоксен ĕçĕ чăнахах та йапăх пулма тивĕçли курăнса тăрать. Литкружоксен ĕçĕ чăнах та çапла тăрас пулсан, пирĕн вĕренӳ ĕçне нимĕнле программăсем те çăлас çук. Паллах, ку йапăхлăх хăш-пĕр кружоксенче çех паларат, пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн литкружоксем ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ.

Литкружоксен ĕçлемели, вĕренмели майсем питĕ те нумай пулма пултараççĕ. Тĕплĕ шухăшласа, пĕлсе ĕçлесен, вĕсем пурте усăлă. Пирĕн пĕр çитменлĕх пур, вăл—литкружокра вĕренесси çине ахаљ шкулти вĕренӳ çине пăхнă пек пăхасси. Чăн, литкружок та шкул, унта литкружок членĕсем пысăк опчăлă ĕç тума вĕренеççĕ. Анчах çапах тăвăл официалă пĕр программăпа ĕçлекен, çирĕпленсе çитнĕ çистемă тăрăх пĕлӳсем паракан шкул мар. Литкружок вăл чăн малтан хăйсене ирĕклĕн пĕрлешнĕ çынсен опчăлă организаци. Ку организацире тăракансем пуринчен малтан хăйсен коллективлă опăчĕсемпе, коллективлă пуçарулăхпе ĕçлесе пырса, хăйсен пĕлĕвĕсене хăпартма, хăйсене интереслетекен опчăлă ĕçре специализациленме тăрăшаççĕ. Çавăнпа та кунта формаљнăй пĕлӳсем шырасси, схоластикăлă упражненисемпе аппаланса ларасси, йепле пулсан та, кайарах тăракан тĕллев пулмала. Литкружок хăйĕн вĕренӳ ĕçне пĕтĕмĕшпех опчăлă ĕçпе, практикăпа çыхăнтарса пырат. Литкружокăн кашни малала йарса пуснă утăмĕ çиййĕнчех практикăлă ĕçре палăрмала, тĕрĕсрех каласан—унăн кашни çитĕнĕвĕ хăй практикă урлă пулса пымала. Çапла туса пынипе çеç епĕр вĕренӳ ĕçне тĕрĕс çул çине тăратма пултарăпăр, кашни çĕнĕрен тупнăпĕлĕве творчĕствăра ĕçе кĕртсе пырăпăр.

Конкретлă: мĕн тума пултараççĕ-ха пирĕн литкружоксем?

**Пĕрремĕшĕ**—колхозсенчи, йалсенчи тата предприйатисенчи литкружоксем хăйсем пурăнакан вырăнсенчи пĕтĕм литературă йухăмĕн пуçĕнче тăраççĕ, кунта вĕсем ĕçе пуçарса пыракансем, пĕтĕм литературă ĕçне пĕрлештерсе тăракансем пулса тăраççĕ. Çак услови литкружоксене инициативлă пулма, литературă тĕлĕшпе тухса тăракан пур ыйтусене те хăйсен вăйĕпе татса пымалăхах вăйлă пулма хушат.

**Иккĕмĕшĕ**,—литкружоксен парти организацисен чи çывăх пулăшаканĕсем пулмала. Кӳ тĕлĕшпе вĕсен вырăнти парти организаципе тачă çыхăну тытса, унăн пулăшăвĕпе усă курма пĕлмеле, хăйсен йенчен те, ăна пур вăхăтра та, пуринчен ытла хуçалăхпа политикă кампанийĕсем ирттернĕ çĕрте, активлăн пулăшса тăмала.

**Виççĕмĕшĕ**,—литкружоксен творчĕствалă продукцийĕ чăн малтан çтена хаçачĕсем урлă, хăйсем кăларакан журналсем урлă чĕрĕ пурнăçпа çыхăнса тăрат. Çавăнпа çтена хаçачĕсемпе журналсенче ĕçлемен литкружок членĕсем пурнăçран айакка тăрса йулма та пултараççĕ. Хаш пĕр литкружоксенче çак çитменлĕх пулсан, ăна халех пĕтерме тăрăшас пулат.

**Тăваттăмĕш**,—литкружоксен чи çывăх йертсе пыраканĕ вăл—районри хаçат. Районри хаçат урлă литкружок членĕсен творчĕстви вырăнти „лабораторилĕ" ĕçсен чиккинчен тухса, сарлака масштаб илет, тата çав вăхăтрах вăл опчăлăхпа политикă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăрат. Çавăнпа литкружоксен хăйсен творчĕствипе районри хаçатсенче тухасси çине питĕ пысăк вырăна хурса пăхмала. Тепĕр йенчен районри хаçатсен редакцийĕсем те литкружоксен ĕçĕсене йертсе пырасси çине тинкеререх пăхмала, мĕншĕн тесен литкружоксем вĕсем районри хаçатăн тĕп литературă кадăрĕ пулса тăраççĕ. Çапла майпа кунта, çирĕп çыхăну организацилес тĕлĕшпе, литкружоксен йенчен те районри хаçат редакцийĕсем йенчен те тăрăшни кирлĕ. Анчах чăннипе ĕç хаљхи вăхăтра ку тĕлĕшпе начар тăрат. Ликкружоксем пурте районри хаçатсемпе таччăн çыхăнса тăраймаççĕ, хаçат редакцийĕсем те сахалăшĕ çеç литкружок членĕсене кăшт-кашт пулăшкаланă пекки тăваççĕ. Ĕç çапла тăни, паллах, пысăк çитменлĕх. Литкружоксен районри хаçатсемпе çыхăнмала, хаçат редакцийĕсен те литкружок членĕсене пулăшу парассине, вĕсене йертсе пырассине организацилемеле.

**Пиллĕкĕмĕш**—вĕренмеле, вĕренмеле татах та вĕренмеле. Класçиксем, вырăссен паллă писателĕсем тата чăваш писателĕсем çырнисене вуламала. Вĕсен творчĕствалă прийомĕсене уйăрса илме хăнăхмала. Пысăк писателĕсем пысăк содержани пăраççĕ тата вĕсем çав содержанийе лайăх формăпа тумлантараççĕ. Литкружок членĕсем çеç мар, паллă писателĕсем те класçиксенчен тата пĕр пĕринчен вĕренме тăрăшаççĕ. Кун çинчен тĕнчипе паллă писател-общественник пулса тăракан М. Горки те пĕрмайах асăрхаттарат.

Мĕн çине тинкеререх пăхмала-ха класçиксем тата хаљхи вăхăтри паллă писателсем çырнисене вуланă чухне? Чăн малтан вĕсем мĕнле содержани панине, çав содержани пурнăçпа менле çыхăнса тăнине, вăл хăш класăн позицине сыхласа тăнине. Авăр хăйĕн тĕп шухăшне пурнăçа мĕнле кĕр нĕ, мĕнле çитĕнӳсем тата мĕнле çитменлĕхсем тунă. Произведенин форми унăн содержаний-

ĕпе килĕшет и, форминче хăйĕнче мĕнле пахалăхсем пур: чĕлхе, композици, çужечĕн интереслăхĕ, геройсен уйрăмлăхĕпе вĕсен сăнлăхĕсем, темăпа произведенин пысăкĕшĕ пĕр-пĕринпе шайлашни, т. ы. те. Каламасăрах паллă, çаксене. пĕрре çиелтен вуласа тухнипех асăрхаса çитерме май çук, çавăнпа суйласа илнĕ произведенисене темиçе хут тата ушкăнпа тĕплĕн вуламала. кашни вуламассерен пĕрле тишкĕрмеле.

**Улттăмĕш**—кашни кулътурăлă çын хаçат-журнал вуламасăр пурăнаймасть. Писатĕлĕн ĕçĕ унăн умне ку тĕлĕшрен тата пысăк услови лартать. Кашни писатĕлĕн обшчĕствăпа политикă ыйтăвĕсене лайăх пĕлсе тăмала. Обшчĕствăпа политикă тĕлĕшĕнчен писатĕл хăйĕн вулаканĕсенчен кайра тăрать пулсан, кун пек писатĕл обшчĕствăна нумайах пама пултараймасть. Çавăнпа кашни писатĕлĕн, çав хушăрах литкружок членĕн те, вăл чăнах та пурнăçпа тан пырас тет пулсан, хаçат журналсем вулас ĕçе хăйĕн кулленхи, унтан пăрăнма май çук ыйту вырăнне хурса шугламала.

Тепĕр йенчен литкружок членĕн литературă ыйтăвĕсен политикине те тĕплĕн пĕлсе тăмала. Ку каллех литературăлă хаçатсемпе журналсене вуламасăр пулма пултараймасть. Ку йышши хаçатсемпе журналсене пирĕн литкружоксем сахалăшĕ çырăнса илеççĕ, çавăнпа хăш-пĕр литкружок членĕсем литературă политикин чылай ыйтăвĕсене пĕлмеççĕ çеç мар, вĕсем вăл ыйтусем çинчен илтмен те. Кашни литкружокăн хăйĕн умне, правилă вырăнне хурсах, минимум çак изданисене çырăнса илессине лартмала: «Сунтал», «Трактăр», «Рост» «Литературная учоба». Йалти литкружоксен тата, кусемсĕр пуçне, „Ударники полей" çырăнса илмеле.

Литературă пурнăçне ытларах пĕлсе тăрас тесен—„Литературная газета" тата литературăлăхудожĕствăлă журналсем çырăнса илмеле. Асăр хаттарсах калатпăр: çўлте асăннă хаçатсемпе журналсене вуласа пымасан, литературă ĕçне вĕренесси çинчен калаçма пулмасть.

**Çиччĕмĕш,**—маркçисăм-ленинисăм вĕрентўне çавăрса илесси чи тĕпре тăмала, мĕншĕн тесен маркçисăм-ленинисăма пĕлмесĕр писатĕлĕн пĕр утăм тăвасси çинчен те шухăшламалли çук. Ку тĕлĕшрен епĕр литкружок членĕсене вырăнти пар ти шкулĕсемпе, пăрти вĕренĕвĕн тĕрлĕ кружокĕсемпе таччăн çыхăну тытма сĕнетпĕр, мĕншĕн тесен маркçисăм-ленинисăм вĕрентўне литкружоксем пурте хăйсен вăйĕпе çех тĕплĕн, çиçтемăлă туса пыраймаççĕ. Анчах шкулсемпе кружоксенче паллашнă положенисем литературă ĕçĕнче мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен кашни литкружокрах сўтсе йавма пулать, ăна сўтсе-йавмалах

Малала литкружок членĕсен творчĕствăлă ĕçĕсем менле пулса пымали çинчен Литкружокра рабочисемпе колхозниксем тата ытти ĕççынисем хăйсен практикăлă ĕçĕсенче сăнанисене, хăйсен шухăшĕсене çыхăнулă, тĕплĕн, художĕствăлă сăнлăхсемпе ытамласа илсе пĕрлештерсе (обобщая) çырса пама вĕренеççĕ, çавăнпа кашни литкружок членех кружокра илнĕ пĕлўсене хăйĕн творчĕствинче пурнăçласа пырать. Кунта нимĕнле именўлĕх те, вăтанса тăрасси те пулмала мар. Кашни литкружок членĕн хăйĕн „чĕри тăпсинче" ларакан темăна хуг çине ўкерсе çырма тăрăшмала.

Литкружок хăйĕн пуххисенче членсем çыркине вуласа тухать, вуланă хыççăн йултăшла тишкĕрет. Кунта пуринчен ытла ĕçлĕ тишкĕрў кирлĕ, кам çырнине унăн индивидуалă уйрăмлăхĕсене кура тишкĕрмеле, çитменлĕхсем пулсан вĕсене тўрлетме пулăшмала. Литкружокăн ку тĕлĕшпе хăйĕн умне çакăн пек задачă лартмала: кам та пулсан çителĕклĕ паха тематикăла мĕнле те пулин произведени çырнă пулсан, вăл произведенийе пур йенчен те чи лайăх произведени пулса çитиччен кусран çухатмала мар: автăрне пулăшмала, вăл кăтăртнă çитменлĕхсене тўрлетсе çитерейменпулсан, ăна мĕнле майпа тўрлетмелине тепĕр хут кăтартса памала, тўрлетме вăйĕ çитеймест пулсан коллективпа тўрлетме тăрăшмала. Литкружокăн çакна асра тытмала: кашни литкружок членĕ çырнă произведенийех, произведенире тунă кашни çитĕнĕвех вăл, çав автăр тунă çитĕнўсĕр пуçне, пĕтĕм литкружокăн çитĕнĕвĕ те пулса тăрать. Çавăнпа та литкружокăн уйрăм членĕсем тунă çитĕнўсем пĕтĕм литкружока савăнтармала, произведенири çитменлĕхсем литкружок хăй хăш йенчен уксахланине асăрхаттармала.

Литкружокра пăхса ырланă произведенисене литкружок йе автăр çтенхаçата, литкружок кăларакан журнала, йе районри хаçата парать, анчах кашнинчех иккĕмĕш ĕкземплъарне Чăваш совет писатĕлĕсен Оргкомитетне йарассине те манмала мар. Оргкомитет вăл произведенисене пурне те хăй пăхса тухса пахалать: йурăллă пулсан вĕсене „Сунтала" йе „Трактăр" алъманах парать, çитменлĕхсем пулсан хăш йенчен тўрлетмелисене кăтарттса автăр патне кайала йарать.

Çапла пулса пымала пек туйăнать пирĕн шухăшпа литкружоксене творчĕствă йенчен йертсе пырасси. Епĕр литкружоксене, конкретлă йертсе пымала тетпĕр пулсан, кунта çав лозунг пурнăçа кĕрсе пырасси паллах. Анчах ăна чăнахах та пурнăçа кĕртсе пырас тесен, пур йенчен те тачă çыхăну кирлĕ: пĕр йенчен—районри хаçатсемпе Оргкомитет тепĕр йенчен литкружоксем хăйсем.

Пĕр-икĕ сăмах программăсем çинчен. Программăсене Сойузри Оргкомитетăн методикă бўровĕ парать. Вăл программăсем „РОСТ" журнэлра пичетленсе пымала.*) Вĕсен пĕр пайĕ пичетленсе тухнă та ĕнтĕ 1933-мĕш çулти—21-мĕш номĕрте. Литкружоксен, «РОСТ» журнала çырăнса илмен пулсан, ку номĕре тупмалах. Чăваш литератури пирки программăсем тума кирлех те мар пек, мĕншĕн тесен вырăсла программăсем теори ыйтăвĕсене тĕплĕнех кăтартса параççĕ, тепĕр йенчен литкружоксем вăтам шкулсем валъли тунă программăсемпе те усă курма пултараççĕ. Кунсăр пуçне тата çитес вăхăтсенчех 7-мĕш çулта вĕренмели литературă учебникĕ тухать, вăл учебник литкружоксене пысăк усă пама пултарать.

Епĕр кунта вĕренў ĕçĕн тĕп йенĕсемпе майĕсем çинчен анчах каларăмăр. Литкружоксен вĕренў ĕçĕнче, паллах, вĕсем çинче çех чарăнса тăма май килмест. Чĕрĕ пурнăç, сотсиалисăм тăвас ĕçре активлăн хутшăнса ĕçлени, клас кĕрешĕвĕнче болъшевикла çапăçса пыни литкружок членĕсене çак картаран чылай инçе илсе тухать.

(* **Редакцирен:** Ку програмăсене малашне „Сунталта та çапса пырăпăр.

# ПИОНЕРСЕМ, ПИСАТЕЛСЕМ, ПЕДАГОГСЕМ!

1934 ҫул пуҫламӑшӗнче чӑваш писателӗсен сиесӗ пухӑнать. Ку сиес, литературӑ ӗҫӗсене тишкӗрсе тухса кӑтартусем панӑ майӗпе, ача-пӑча литератури пирки те тӗплӗн кӑтартусем парса хӑвармала.

Кӑна тӑвас пулсассӑн пӗччен иккӗн пулмасть. Ҫавӑнпа та сиеса ача-пӑча литератури пирки пӗтӗм комсомолпа пионерсен массин, ача-пӑча писателӗсен, ача-пӑча хаҫат журналӗсенче ӗҫлекенсен, педагокпа педологсен, библиотекӑрӗсен т. ыт. те хатӗрленмеле.

Вырӑсла ача-пӑча литературине илсен, йулашки ҫулсенче самай аван произведенисем пичетленчӗҫ. Сӑмахран: Маршакӑн—«Война с Днепром», унӑнах «Почта», Илйинӑн «Рассказ о великом плане», Паустовскин—«Кара-Бугаз», Меркурйӗвӑн — «Фабрика точности», т. ыт. те. Кунашкалисем сахалах мар. Ҫапах та вырӑс литературинче ку ҫитӗнӳсене ача-пӑча литературин пуҫламӑшӗ кӑна шутлаҫҫӗ-ха. Ача-пӑча литератури пирки вырӑс литературинче писателсемпе литературӑра ӗҫлекенсем кӑна мар, психолог профессӑрсем, педолог профессӑрсем, тата ытти ӑслӑлӑх тӗлӗшпе ӗҫлекенсем те, аслӑ писателсем те тытӑнчӗҫ. **Максим Горки** ку тӗлӗшпе ҫирӗп кӑтартусем пачӗ. Писателсене ачасем валли ҫырмали темӑсем ҫине тӗллесех кӑтартса пачӗ. Максим Горкийех пионерсем патне—вӗсем мӗн вулани ҫинчен, мӗнле произведенисем вулас килни ҫинчен ҫырма ыйтса чӗнсе калани кӑларчӗ. Хӑй те вӑл ку тӗлӗшпе тӑрӑшсах ӗҫлет. Ку ӗнтӗ ҫавнашкал пӗтӗм тӗнчипе паллӑ писателсем ача-пӑча литературипе интересленнине, вӑл ӗҫ ҫине ҫийелтен пӑхса мар, тӗплӗн тытӑнвине пӗлтерет.

Чӑваш ача-пӑча литературин те пуҫламӗшӗ ҫук мар, кӑшт та пулсан пур, анчах, вырӑс ача-пӑча литературипе танлаштарсан—нумай кайра тӑрать вӑл. Нумайӗшӗ вырӑсларан куҫарнӑскерсем. Йатарласа ҫырнисем пит те сахал. Ҫитменнине вӗсем ҫинчен те ачасем мӗнле хакласа калаҫни ҫителӗклӗ паллӑ мар. Библиотекӑрсем те сахал сӑнаҫҫӗ, сахал пӗлеҫҫӗ, сахал ҫыраҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та вулакан ача-пӑчасенчен, пионерсенчен, библиотекӑрсенчен ҫак произведенисем кӑмӑла кайни-кайманни ҫинчен, вӗсен мӗнле ҫитменлӗхсемпе мӗнле хаклӑ йенӗсем пуррине, ачасемшӗн йурӑхлине, йурӑхсӑррине т. ыт. те пӗлтерме ыйтатпӑр.

1. **Йалавин**—«Хисеплӗ Кӗҫтенкки».
2 **Мӗтри Ваҫлейӗ**—«Пирӗн сас», «Хӗвел ачисем», «Ирӗклӗх».
3. **Агакӑв**—«Вӗтлӗхри отрет», т. ыт. те.
4. **Ҥамаҥ**—«Хаваслӑх», т. ыт. «Хатӗр пул» ҫине пичетлӗннӗ сӑвӑ калавӗсем.
5. **Трубина** — «Пӗчӗк бригадирсем», «Хӑнаран» т. ыт. те.
6. **Уйӑп Мишши**—«Автогигант» ҫинчен ҫырнисем.
7 **Шӑпчӑк**—«Ваҫҫа», т. ыт. те.

Кусем кӑна мар, ытти писателсен те пӗрре-иккӗ ачасемшӗн ҫырнӑ сӑвӑ-калавсем пур, вӗсем ҫинчен те ҫырмала.

**Максим Горки**:

**«Есӗр мӗн вулатӑр? Сире мӗнле кӗнекесем кӑмӑла кайаҫҫӗ? Мӗнле кӗнекесем вулас килет? Мӗн ҫинчен уйӑм хӑпӑлес килет? Мӗнле ыйтусем интереслентереҫҫӗ?»** тесе ыйтать пионерсенчен. Ҫак ыйтусем ҫине мӗн пур пионерсен, ача-пӑчасен ҫырса йамала, библиотекӑрсен, педагогсен, т. ыт. те ответ панӑ ҫӗрте пулӑшмала, анчах хӑйсен ответне хушмала мар, ачасем хӑйсем тӗллӗн ҫырччӑр.

Йалти литкружоксенчен писателсен сиесне килекенсем пулаҫҫӗ. Ку делегатсен, ҫӳлте кӑтартнӑ ыйтусем пирки кружоксенче хатӗрленсе, тӗплӗ материалсем илсе килмеле.

**Ҫ. П. Петров** Горки ҫырӑвӗ пирки:

«Максим Горки пионерсем патне йанӑ обрашченине пӗтӗм майпа хутшӑнса пулӑшмала, ҫырусем ҫырассине тӑрӑшсах организацилемеле. Ҫырура лартнӑ ыйтусем пирки ҫырнӑ чух, ачасене каласа ҫыртарасси, йе вӗсен ҫырӑвӗсем ҫумне ҫыхӑнса ҫыртарма хӑтланассисем пулмала мар. Пирӗн ачасене вӗсен ҫырас тӗлӗшпе пӗтӗм ирӗклӗхе памала, вӗсем хӑйсем ҫырччӑр: мӗн вӗсене килӗшет, вӗсем мӗскер вуласшӑн, мӗне пӗлесшӗн» — тет хӑйӗн ҫырӑвӗнче.

«Вӑл епӗр пионерсене пулӑшмала маррине пӗлтермест, вӗсене пулӑшмала, пирӗн вӗсемпе интернационалӑ темӑсемпе калаҫусем тумала, кунта вӗсем мӗнпе интересленнине, мӗн тӑвас килнисене, т ыт. те шута илмеле. Ку калаҫӑва пирӗн ыйтусене парти тӗлӗвӗпе задачӑсен ӑшне кӗртсе сӳтсе йавмала. Йулашкинчен вӗсене шухӑшлаттарса, хӑйсен тӗллӗн ҫырма ыйтмала: вӗсем мӗн пӗлесшӗн» тет Ҫ. Петров йулташ.

Писателсем! пиншерӗн вулакан ача-пӑчасем сирӗнтен комунисла вӗрентекен, чӑн та художествӑлӑ хаклӑ произведени, вӗсен интересне, ӑсхапӑл вӑйне (эмоцине) хӑпартакан, ӑслӑлӑхӑн йулашки ҫӗнтерӗвӗ ҫинчен пӗчӗкренех вуламали, ҫав вулавсем урлӑ хӑйсене тӗпчевлӗх ӗҫне ҫитерекен кӗнекесем ыйтаҫҫӗ.

«Ӑслӑлӑхпа техникӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемпе изобретенисем тӗнчине ҫеҫ кӑтартса памала мар, унти кӗрешӳсене те кӑтартмала. Унта тӗрлӗрен материалпа, ӗлӗкхи традиципе етем кӗрешсе ҫӗнтерсе пынине те кӑтартмала» тет Горки.

Комунисла воҫпиттани ӗҫӗнчи пысӑк задачӑсене ӗҫе кӗртмешкӗн пире паха, чӑн та илемлӗ ача-пӑча литературӗ кирлӗ. Вӑл литературӑра «ҫара» литературӑшӑн мар, ачасене ӳссе пынӑ ҫӗрте социалисӑм тӑвас ӗҫе ҫыпӑҫтарса тӑракан, строителствӑ ӗҫӗшӗн кӗрешекен, ачасен творчӗстви ӗҫне ҫитерекен, активлӑха хӑпартакан, вӗсен опӑтне пуйанлатса материалисӑмлӑ мировоззренине ӳстерекен литературӑ кирлӗ пире.

Ҫавнашкал ача-пӑча литературине тумасӑр, партин 17-мӗш конференци лартнӑ задачӑсене: етемӗн кив йӑлин психологине пӗтерсе, классӑр опчӑлӑх тӑвас ӗҫе вырӑна часкӳртеймӗпӗр.

Литературӑна ҫакнашкал тӑвассишӗн кӗрешмеле.

**Чӑваш совет писателӗсен Оргкомитечӗ.**

Сдано в производство 18-XII-33 г.
Подписано к печати 4-I-33 г
Секретарь и выпускающий редактор **С. В. ЭЛЬГЕР.**

**Ответлӑ редактӑр Н. В. Васильев (Шупуҫҫынни).**

Ст. ф. 6. 58×83¹/₈. Об'ем 2 п. л. Изд. газ „Канаш"

Уполн. Чувашлита № 1078 Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 1249. Тираж 3000 екз.

Хакĕ 40 пус.

# Чăваш совет писателĕсен Оргкомитечĕн уйăхра пĕрре тухакан илемлĕ литературăпа критикă журналĕ

# СУНТАЛ

## çитес 1934 çулта

кашни уйăхра пĕрре йĕркеленех тухса тăма тытăнаť.

**«Сунталра» чăвашсен паллă литературăсем—совет писателĕсемпе поечĕсем, критиксемпе публициссем, тата искусствă тĕлĕшпе ĕçлекеньсем çырса тăраççĕ.**

**Сунтал** политикпа обчăлăх ыйтăвĕн тĕп задачĕсене çутатса тăраť, литературăва социалисăмшăн кĕрешессинче партин çивĕч хĕçнăшалĕ тăвассишĕн çапăçаť, литературăпа искусствăн тĕрлĕрен фрончĕсенче большевисăмла пысăк искусствăшăн кĕрешет.

**Сунтал** илемлĕ литературă урлă предприйатисемпе колхозсенчи ĕç ударникĕсен сăн-сăначĕсене кăтартса параť. Ĕç ударникĕсене литературăна чĕнсе вĕсене илемлĕ литературăĕçне вĕрентет.

**Сунтал** калавсем, драмăсем, поемăсем, сăвăсем, очĕрксем, публицистикăпа критикла статйасем çапса пырса, вĕсем урлă вулакансене реконструкци тапхăрĕнчи çĕнтерÿсемпе çитĕнÿсене кăтартса параť.

**Сунтал** хăй тавра чăваш ĕçхалăхĕн советла литературă вăйĕсене пухса, вĕсене класлă литературă çулĕпе илсе пыраť. Çырма пуçлакансене вĕрентсе консулťтаци парса тăраť. Çĕнĕрен тухнă кĕнекесене хак параť.

**Илемлĕ литературăна йуратакансем! Пурте çĕнĕ çултан „Сунтал“ журнала çырăнса илме ан манăр.**

**Литкружоксем,**
**ĕçйалкорсем,**
**вĕренекенсем,**
**учитлĕсем,**
**писмоносцăсем!**

„СУНТАЛ“ журнала рабочисем, колхозниксем, ĕçхресченĕсем хушшинче ытларах сарма тăрăшăр. Библиотексем, вулав çурчĕсем, хĕрлĕ кĕтессем, колхоз правленисем, йалсоветĕсем 1934-мĕш çулта пĕри те „Сунтал“ çырăнса илмесĕр йулмала мар.

## Журнала пуштă уйрăмĕсем урлă çырăнса илмеле

### Журнал хакĕ:

3 уйăха—1 т. 20 п., 6 уйăха—2 т. 40 п., 12 уйăха—4 т. 80 пус.

„Канаш“ хаçат издательстви.